КС(чув)
К89
34639-чув

КАПКĂН БИБЛИОТЕКИ №

ЭКЗЕМПЛЯР

Владимир КУЗЬМИН

# САВА САВВИ САВАЛАТЬ

Национальная библиотека ЧР
4-034639

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

КАПКАН БИБЛИОТЕКИ 3 (87) №

Владимир КУЗЬМИН

# САВА САВВИ САВАЛАТЬ

Калавсем, камитсем, шӳтсем

Г. ЯКОВЛЕВ ӳкерчӗкӗсем

КПСС Чӑваш обкомӗн издательстви
Шупашкар — 1990

К 84.09(=Чув)6-7я414
84(2Рос=Чув)6-7я414

Тухăçлă та ăнăçлă ĕçлет Вăрнар районĕнчи Хурăнсур Çармăс ялĕнче çуралнă Владимир Прокопьевич Кузьмин çыравçă. Ма тесен, вулакансене повеçсемпе калавсем чылай парнелерĕ.

Сатира цехĕнче те — ырми-канми çын Владимир Прокопьевич. 1983 çулта вăл «Капкăн библиотекинче» «Картлашка» ятлă кĕнеке кăларчĕ. Кунпа кăна лăпланмарĕ вăл, картлашка тăрăх ăнăçлă хăпарса, халĕ, акă, теприне калăпларĕ.

В. Кузьмин — «Тăван Атăл» журналăн тĕп редакторĕн заместителĕ. Еçĕсем унăн мапашне те ăнса пыччăр: кулăш лăççинче тар кăларса çыртăр. «Тăван Атăл» шăнкăр-шăнкăр юхтăр.

ПРОВЕРЕНО
20 10
34639 чув
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. Н. Гоголя

# *КАЛАВСЕМ*

## ТУЙ ШЫРАСА

Хĕвекле кумма ывăлĕ Хĕветĕр çураçнă хĕрĕпе яла килсе кайсан, карчăкпа иксĕмĕр те канăçа çухатрăмăр. Вĕсен ылтăн ункăсемпе эрешлесе пĕтернĕ хитре открыткине кашни кун тыта-тыта пăхатпăр. Хĕрсех туя хатĕрленетпĕр. Ялти лавккара чаплă костюм, йăпăрка кĕпе, çап-çутă пушмак, шлепке туянтăм. Карчăк майраланма шутламарĕ, авалхи чăваш тумнех майларĕ: аннерен юлнă алкасене, шӳлкемене тата тевете çакса пăхрĕ. Пите килĕшӳллĕ. Киле таврăнман чупкăн такапа пусса кучченеçлĕх шăрттан турăмăр.

Открытки çине туйĕ кафере пулать, тесе çырнă. Анчах... мĕнле кафере-ши? Нивушлĕ тĕп хулара пирĕн ял лавкки хыçĕнчи пек пĕртен-пĕр «кафе» çеç-ши?

Чиперех çитрĕмĕр кĕрлеттерсе Шупашкара. Пăхатăп — автовокзалпа чугун çул вокзалĕ хушшинче пĕр пĕчĕк кафе лара парать. «Минутка» ятлăскер. Карчăка часрах унталла илсе кайрăм. Савăнни кăлăхах пулчĕ çав. Иртен-çӳрене хытнă кукăль сăмси чăмлаттарса чейпе антарса ямалли вырăн çеç иккен ку. Эпир те, хырăма кăшт лăплантаранçи туса, урама тухрăмăр. Çын кăткă евĕрех йăшăлтатать: пурте таçта васкаççĕ, никамран нимĕн ыйтса пĕлмелли çук.

— Вăхăта капла пустуй ирттериччен, карчăк, — терĕм, — атя-ха, малтан Хĕветĕрсен килне каяр, адресне çырса илнĕччĕ.

Эпĕ пĕр кĕсъене хыпашларăм, теприне, сумкăсене ухтарса тухрăм — кирлĕ хут нимçта та çук. Çакăнтах чикнĕччĕ-çке, ăçта çухалма пултарнă? Ай-вай-вай, тин астурăм. Карчăк çул çинче шыв ĕçес килнипе аптăранăччĕ, вара вăл сумкăран хĕрлĕ помидор кăларса çинĕччĕ. Помидор сĕткенĕпе йĕпеннĕ аллине шăлма тесе кăкăр кĕсйинчен хамах хут татăкĕ кăларса тыттартăм-çке. Аллине шăлса типĕтсен, карчăк хута чăмăртарĕ те автобус чӳречинчен печĕ. Шăпах çав хут пулнă та вăл. Халĕ мĕн тăвас?

Карчăк ман айуйлатсах кулянчĕ. Эпĕ ăна лăплантаратăп. Хĕветĕр Тракторостроительсен проспектĕнчи тăхăр хутлă çуртра пурăннине пĕлетĕп-çке. Хваттере чуххăмăнах тупма шантаратăп. Çитмелле çĕре троллейбус хăвăртах илсе çитерчĕ. Унтан антăмăр та... речĕ-речĕпе лараççĕ тăхăр хутлă çуртсем. Шырама хĕрринчен, вунă алăклинчен пуçларамăр. Виççĕр утмăл хваттере шăнкăравласа ыйт-

са тухрăмăр. Хĕветĕр ятлă çын хĕрĕх таран тупăнчĕ, анчах хамăр ялсене тĕл пулмарăмăр.

Ытти çурчĕсене эпир уйăхра мар, çулталăкра та тĕрĕслесе пĕтереес çук тесе, карчăка хулран çавăтсах уттартăм. Пĕр ламсăркка пуçлă, хура сухаллă каччă пире ӳркенмесĕрех кафесем хăшхăш çĕрте пуррине ăнлантарчĕ.

Каллех малалла кăштăртататпăр. Урамсене те пăтраштарса ятăмăр ĕнтĕ. «Ылтăн пулă» тесе çырса çапнă лутра çурт умĕнче чарăнтăмăр. Кунта туй иккен. Анчах мĕн ку? Сĕтел хушшинче курпун сăмсаллă каччăпа юнашар пирĕн Хĕветĕрĕн çураçнă хĕрĕ йăлйăл кулса ларать. Карчăкпа сăмахлама та ĕлкĕреймерĕмĕр, палламан йĕкĕтсемпе пикесем пире çавăрса тытрĕç те пуш сĕтел хушшине çиламах кĕртсе лартрĕç. Каялла тухнă çĕре хĕвел ана пуçланăччĕ ĕнтĕ. Ман карчăкăм хайхи хĕрупраçа, Хĕветĕре пăрахса урăххине качча тухнăшăн чиперех ятлать, унтан вокзала часрах çитер те яла тухса каяр, тесе анратма тытăнчĕ мана. Тухрăмăр та туйран, пыратпăр урампа. Сисмен те, «Туслăх» кафе тĕлнех çитнĕ. Шалта ташă кĕвви илтĕнет.

Карчăка аран-аран ӳкĕтлесе унталла пăртăм-пăртăмах. Кафе алăкне уçрăмăр та, тĕлĕннипе шаках хытса тăтăмăр. Залра Хĕветĕр туйĕ кĕрлет! Хĕветĕрĕ çумĕнче «Ылтăн пулă» кафери чиперкке кулса ларать. Туршăн та çавах: пуçĕ те кăп кăтра, куçĕ те йăмхура...

Туя кая юлса çитнĕшĕн вĕсем пире ӳпкелесе илчĕç.

— Тăхтăр-ха эсир, — терĕм вара, — ытла юмахри пек пулса тухать. «Ылтăн пулă» каферен тин çеç Хĕветĕрĕн хĕрне качча парса тухрăмăр, кунта каллех ăна качча илетпĕр. Анлантарса парăрха ку мыскарана?

Çакна илтсен, Хĕветĕрпе арăмĕ ахăлтатсах кулса ячĕç: йĕкĕреш хĕрсем пĕр кунта качча тухнă иккен.

# ЙĔКСĔК

Йăрăм-йăрăм йĕм тăхăннă лутака Ламсур Арçукĕ икĕ кравать пуçĕ çине хăпарса тăратчĕ те, çурăк сассипе сăвă калама тытăнатчĕ. Алликчи хут листине варкăштарса маччана вĕçсе çитеслех хăлаçланатчĕ хăй. Пурте çăвар карсах итлеттĕмĕр вара ăна. Шава илтсе, кӳршĕ пӳлĕмсенчи ачасем те чупса пыратчĕç. Общежити янраса çеç ларатчĕ.

Сăвă çырса халăх умĕнче чапа тухайманшăн эпир хамăра хамăр тем чул та ӳпкеленĕ пуль. Ăна кĕвĕçсе те пăхнă. Мĕн тăвăн, унашкал пултарулăха пире турри паман-тăк, юлташа ырласси çеç юлатчĕ.

Мухтанине пит юрататчĕ, мур илесшĕ. Çăварне хăлха таран карсах ахăрса яратчĕ те каппайланатчĕ:

— Эсир паян чăвашра çĕнĕ сăвăç çуралнине куратăр. Ман ят кĕçех Çеçпĕлсемпе пĕр тан янăрĕ. Кĕнеке хыççăн кĕнеке тухĕ... Акă кампа пĕрле пурăнатăр эсир. Мухтанас пулать сирĕн манпа. Çавăнпа, кĕсъе тĕпĕсене таварса пăхăр та, çăмăл ача пулса...

Вăл мĕн хушнине итлемен-ха эпир, çапах, ку чăнах та чапа тухĕ те, тен, асанлăсем çырмалла пулĕ, теттĕмĕр кулкаласа. Ара, ячĕ янранăçем янрама пуçларĕ-çке. Хаçат-журналта сăввисем умлă-хыçлă пичетленсе тычĕç. Пĕррехинче сăнўкерчĕкпех вăрăм ярăм тухнăччĕ. Ăна вăл, хаçатран касса илсе, алăк çине çыпăçтарса хучĕ. Кĕç общежитие Ламсур Арçукĕ çинчен юрлакан «шăпчăксем» ермешрĕç. Вĕсемпе пĕрле пўлĕме эрех шăрши пе чĕлĕм тĕтĕмĕ тулчĕ. Кусем те Ламсур пекех сăвăççем пулнине ăнлантăмăр эпир. Стакана ĕмĕтсĕр куçпа пăхакансем йăлăхтармаллипех йăлăхтарса çитерчĕç. Юрать диплом илмелли кĕтнĕрен те кĕтнĕ кун çывхарчĕ.

Институт алăкĕнчен ирхи хĕвел пек çиçсе тухса, эпир тĕрлĕ ыррăна вĕçсе салантăмăр. Ламсур Арçукне салтака илчĕç. Çав вăхăтра унăн пичетре, сăвăсемпе пĕрлех, калавсем курăна пуçларĕç. Çарти пурнăç çинчен ăста хайланăскерсене, вĕсене, эпĕ хам та питĕ юратсах вуларăм. Сăнарлă чĕлхи ытла та кăмăла кайрĕ. Критиксем те асăрхамасăр хăвармарĕç çамрăк таланта.

Çартан таврăнсан, пĕр хаçатра нумаях та ĕçлейменрĕ, шеремет, ытлашши вĕçрĕ-вĕçрĕ те персе анчĕ çĕр çине. Ламсур Арçукĕ плагиат е, урăхла каласан, ют çын сăввисемпе калавĕсене хăй ячĕпе пичетлесе пурăннă литературăри вăрă пулнă иккен! Ун тавра шăвшав пуçланчĕ. Хаçатçăсем фельетон çапса кăларчĕç. Чăннипех пурне те тĕлĕнтерме пултарчĕ паллă «писатель».

Çакăн хыççăн Ламсур Арçукĕ таврăру сукмакĕ çине тухрĕ, хăйне тăрă шыв çине кăларакансене вăрттăн сăхасшăн пулчĕ — ĕç тухмарĕ. Яшшар чĕлхеллĕскер, курăмлă çĕртех тепĕр канлĕ ĕç тупрĕ. Улталпа ĕçке хăнăхнăскер, вăл кунта та нумай тытăнса тăраймарĕ.

Ламсур Арçукне ĕçе ухутах йышăнаççĕ, кашне пĕлсе çитсен... алăк патнелле тĕллесе кăтартаççĕ. Лешĕ хыççăнах алла шĕвĕр кăранташ тытать. Миçе ырă пуçлăх тутанса пăхмарĕ-ши унăн наркăмăшлă сăннисене.

Çук, пулмарĕ Ламсур Арçукĕн чăваш сăвăçисемпе пĕр ретре утасси, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларасси. Тава тивĕçсĕр çăхан çыравçи ятне çеç илтсе юлчĕ йĕксĕк.

# *ЯЛТИ ШĂЙРĂКСЕМ*

# ÇИВĔЧ КУÇ

Пирĕн ялта ĕçкĕ-çикĕ вăхăтĕнче чĕнмен хăна ўпре пекех хĕвĕшет. Хĕсĕккуç Куçки, Хĕл Хĕлихванĕ, Услап Петĕрĕ, Хура Вăççи текенскерсем йăлăхтарсах çитереççĕ вара.

Çуркунне çапла атте сакăрвунă çул тултарнине уявларăмăр. Кăçхине те пурччĕ çав чĕнмен хăнасем, ирпе каллех тута хĕррине çуллаcа çитрĕç.

Ларсан-ларсан, уçă сывлăша тухас, терĕмĕр. Арçынсем хăма купи çинче картла çапа пуçларĕç. Аттен юлташĕ, Йăван мучи. тăчĕ-

тачĕ те вĕсене пăхса, «Итлĕр-ха, ачасем, вăхăт пустуй ирттериччен, айтăр пахча чавар», — терĕ. Çав вăхăтрах ман арăм ушкăн умне темиçе кĕреçе пырса тăратрĕ. Картла вылакансем шавлама пăрахрĕç те ĕнсисене кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕç.

— Ма апла чавас, — тарук тавçăрса илчĕ Хĕсĕккус Куçка. — Икĕ каслă плуг кӳлсе килетĕп

— Эпĕ трактор патне чупатăп, — тăрса утрĕ Хĕл Хĕлихванĕ.

— Сӳре те кирлĕ пулать, — хулпуççине сиктеркелерĕ Услан Петĕрĕ. — Çиччас йăтса килеп.

Кусем урам хыçĕнче курăнми пулсан, Хура Вăççа пĕр кĕреçине, теприне тытса пахрĕ, вара: «Ман хам кĕреçех çивĕч, киле кайса илем-ха», — тесе вăшт çеç тухса шаванчĕ.

Лайăх санталăкпа уса курсах юлас, терĕмĕр. Эртелпе çĕр пусма тытăнтамăр. Кăнтарла та иртрĕ, хĕвел те ана пуçларĕ, эпир те пахча чавса петертĕмĕр, анчах лаши те, тракторĕ те, сӳри те, çивĕч кĕреçи те куранмарĕ.

Чĕнмен хăнасем тинех пирĕн кĕрекере урăх саванаймарĕç.

# КУПĂСПА ÇАРАН ÇУЛНИ

Кӳршĕри Тимукпа Çинук тĕлĕнтерсех ăраççĕ. Аншарлие ытараймасăрах çын ĕретĕнчен тухрĕ малтан чипер пурăннă çак мăшăр. Халĕ вĕсем виçе кун ĕçлеççĕ те вун виçĕ кун ĕçеççĕ. Ашшĕ-амăшне кура Çимун ятлă ывăлĕ те ытла ирĕке кайрĕ. Ĕçкĕрен ĕçке купăс туртса çӳрет, кăнтăрла ыйха туртать.

Çаран çулмалли вăхăт çитнĕччĕ. Анкартие вĕсем те сĕлĕпе вика хутăшĕ акнă. Тимук пире, кӳршĕсене, нимене чĕнчĕ.

Хăйсенчен латти-пăтти пулас çук тесех каçрăмăр унта арăмпа иксĕмĕр. Пулăшакансем татах тупăнчĕç. Хăйсем çеç... Тимукĕ сарай хыçне кайса ӳкнĕ. Çинукĕ çур курка сăрапа тав туса çӳрет. Çимунĕ çавапа виççĕ кассанах пуçне тытса ахлата пуçларĕ.

— Эс луччĕ купăс илсе тух! — терĕм кăна тарăхнипе. — Музыкăпа çулăпăр!

Итлерĕ ача. кĕçех çурăм хыçĕнче чăваш кĕвви янăраса кайрĕ. Хавас юрă чуна çĕклентерчĕ. Чашлаттаратпăр та чашлаттаратпăр эпир. Паккус хыççăн паккус юлать хыçала. Çимун купăса туртать те туртать. Çинук ун умĕнче таш ăртатса çаврăнать. Тимук ура çине тăрасшăн упаленет. Эх, çулатпăр курăка. Купăспа!

# ВĂРĂМ ÇУЛ

Кукăркасри Укахви кинемей анне патне ăшталанса çитрĕ.

— Пирĕн кипе курман-и эс? — ыйтрĕ сывлăшне аран-аран çавăрса ярса.

— Иртнĕ эрнере курнăччĕ те, паян — курман, — лăпкăн пĕлтерчĕ анне. — Пирĕн патра сĕнксе ларчĕ-ларчĕ те вăл, кăмака çумĕнче çыварчĕ, унтан йĕркеллех тухса кайрĕ.

— Эй, турă, эй, турă, — аллисене шарт! çапать ватă çын. — Ара эпĕ ăна сирĕн пата кăвас чĕресĕ илме ятăм-çке. Халь те çук васка, çичĕ талăк çитрĕ ĕнтĕ çухални.

— Манран вăл кăвас чĕресĕ мар, ĕçмелли ыйтрĕ, — терĕ анне. — Ман нимĕн те çуккă та — ĕçтерейменрĕм.

— Пĕтерчĕ ку кин мана, намăс кăтартрĕ, — хыпăнса калаçать Укахви кинемей. — Ĕçкĕ ăшнех путрĕ. Хĕлимуна та итлемест... Арçынĕсем ĕçре, хăшпĕр хĕрарăмсем пухăнса лараççĕ те ĕçке пикенеççĕ. Эрни-эрнипе урăлса курайманçĕ вĕт, мĕскĕнсем. Эх, ĕлĕк пулсан... Пирĕн вăхăтра пулсан...

Анне чӳречерен пăхрĕ те кӳрше лăплантарчĕ:

— Ан кулян, Укахви, кинӳ тупăнчĕ. Ава, килет. Урам урлă касмалли çулĕ эрненех тăсăлчĕ пуль çав...

Пирĕн умран Укахви кинемей кинĕпе виçĕ хĕрарăм хăлаçланса юрласах иртсе кайрĕç.

# СИПЛЕНИ

Хăйсен кил-çурчĕ çырма хĕрринче ларнăшăн Настуç кинеми ялан савăнса пурăнчĕ. Симĕс курăк чĕпĕтсе çӳрекен выльăх-чĕрлĕхĕ, пĕчĕк пĕвере ярăнакан хур-кăвакалĕ çине пăхса тăранаймастчĕ.

Юратнă мăшăрĕ çĕре кĕнĕ хыççăн кăмалĕ хăрăк турат пекех хуçăлчĕ унăн. Старикки пĕвеленĕ пĕвине çуркуннехи шыв-шур татса кайрĕ. Урамран юхса анакан шыв çав вырăнта шырлан туса çĕре кăшлама пуçларĕ. Çĕр суранĕ шĕвĕрĕлсе, сарăлса пӳрт патнеллех хăпарать. Çакăншăн ватă çыннăн чĕри çĕçĕпе чикнĕ пек ыратать. Вăй пулсанах чарса лартăччĕ те вăл ăна...

Çул урлă касса кайна шырлана пӳлес пирки вăл кӳршĕсене темиçе хутчен те каласа пăхрĕ, лешсем алă çеç сулчĕç. Пурăнсан-пурăнсан карчăк ăслă шухăш шыраса тупрĕ-тупрех. Пĕррехинче сăра турĕ те мĕнпур кӳршĕ-аршă хăнана чĕнчĕ.

Васкаса, хăпартланса çитрĕç васка çынсем Настуç кинеми патне: арçынĕ те, хĕрарăмĕ те... Пурте пухăнса çитсен, карчăк хăнасене виçшер курка сăра ĕçтерчĕ те хăй хыççăн урама илсе тухрĕ. Шырлан умне çитсе тăнă хăнасем тин кинеми ăслайне тавçăрса илчĕç, кĕреçе-пăсилкке, патак-çапă илме килĕсене васкарĕç. Кула-кулах вара пурте ĕçе пикенчĕç.

Хĕвел анас умĕн Настуç кинеми вĕсене çапла каларĕ:

— Шĕкĕр турра, хакла хăнасем, этемлех тарăшрăр паян, хамăр ая кĕрсе каякан çĕр суранне сиплерĕмĕр. Пысăк ĕç тунă ятпа халĕ вуник кăшаллă пичкене уçма та çылăх пулмĕ.

# ÇЫН СЫВЛĂХĔШĔН

Хуçалăх таварĕсем сутакан Маюç хăйсенчен инçех мар пуранакан Чеюк Куçкинчен тĕлĕнчĕ. Ара, Куçкă паян лавккаран пĕр лав хуçлатмалли кравать туянса кайрĕ-çке! Ĕнер райпо складĕнчен турттарса килнĕ çирĕм кравачĕрен пĕрне те хăвармарĕ. Укçине тӳлерĕ те вăл, «хăна çурчĕ уçатăп-ха» тесе, шăлне йĕрсе тухса кайрĕ, каçхине Маюçсене хăнана пыма чĕнсе хăварчĕ.

Сутуçă тавар курттăмăн кайнăшăн савăнчĕ те, кӳрши çавăн чухлĕ кравать туяннăшăн тĕлĕнчĕ те. Ĕç хыççăн вăл упăшкипе чĕннĕ çĕре çитрĕ, пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ: аякран килнĕ хăнавĕрле çук, пурте хăйсен ялĕсенех.

Ĕçкĕ-çикĕ мыскари пуçланчĕ. Кĕç пĕри тайкаланса капăр вырăн еннелле сулăнчĕ. Чеюк Куçки ăна тӳшек çине лаплатса ӳкме памарĕ, хулран çавăтса тухрĕ те, кил хуппине хуçлатнă кравать лартса, унта майласа вырттарчĕ.

Кĕрлет, сĕрлет хăна пӳрчĕ. Унччен пек сĕтел-тенкел айĕнче те, тинтерлĕ вырăн çинче те Чеюк Куçкин пĕр ӳсĕр-какăр эклетсе те, йĕпенсе те выртмасть. Анрасa ӳкнисем хуçлатнă кравать çинче йĕрки-йĕркипе ыйха туртаççĕ, вăл шутра — Маюç упăшки те.

— Çын сывлăхĕшĕн çапла тăрăшмалла ăна, — кулкаласа пăхса тăрать кил хуçи.

# ТИП ТУЙ ХЫÇÇĂН

Ял тăрăх касса çӳрекен Пăрака Палакпиĕ самрăксен туйне лекнĕ. Çамрăксем ăна тип-ĕ эрехпе сăйланă. Çуттине, антарлине, кăрчамине кĕтсе ларнă-ларнă та вăл пурпĕрех кĕтсе илеймен. Лешсем пĕрмай тип эрех те ылак шыв ĕçнĕ, кĕтмен хăнана та çавсене çеç сĕннĕ.

Туйран тарăхса тухнă Пăрака Палакпиĕ кӳрши патне вĕçтерсе çитнĕ, туй кĕртекенсене, хыткукарсем тесе, хурласа тăкнă, ăша кантарма хаяртараххине ыйтнă.

Йăлăнтарса çитерпĕскертен часрах хăпас тесе, кӳрши кăмака умĕнчен куркапа шыв ăшăтса тухнă та ăна тыттарнă. Пăрака Палакпиĕ куркана икĕ аллипе сатăрласа тытнă та тутипе чăпăртаттарсах ĕсме пикеннĕ. Шыва тĕппипе ĕçсе янă хыççăн каскăн хĕрарăм кӳрши патĕнчен пĕр сăмах чĕнмесĕр тухса сирпĕннĕ.

# СЁЛЁХ

Кӳлхӗррипчи пысӑках мар учреждени самӑр кӗлеткеллӗ, япшар чӗлхеллӗ, Пиявкин хушаматлӑ вӑтӑрсенчи арҫын пырса кӗчӗ. Пуҫлӑх алӑкӗ умӗнче хӑй тӑрӑх темиҫе хут пӑхса илнӗ хыҫҫӑн вӑл, пуҫ пӳрнине хуҫлатса, алӑка хуллен шаккарӗ:

— Кӗме ирӗк парсамӑр? Чарминтарса ҫӳретпӗр те ҫав...

— Тархасшӑн, иртсе ларӑр, хаваспах итлетӗп сире, — сӗтел ҫумӗнчи пукан еннелле тӗллесе кӑтартрӗ Карасев.

— Хам малтан алӑ тытнӑшӑн каҫарӑр мана эсир, Карп Карпович. Йӑли-йӗркипе сирӗн хӑварӑн памаллаччӗ те ӗнтӗ аллине, тархасшӑн ан кӳренӗр, — ыйтуллӑн пӑхса илчӗ вӑл пуҫлӑх куҫӗнчен.

— Шӑпах сирӗн йышши хӑюллӑ ҫынсене юрататӑп та эпӗ. Унашкаллисем яланах пуҫарулӑ пулаканччӗ-ха... — лӑх-лӑх кулчӗ пӳлӗм хуҫи. — Ӗҫе кӗрес тетӗр апла?

— Ҫапла, Карп Карпович, лере калаҫса татӑлнӑ ырӑнах вырнаҫасшӑн эпӗ, хамӑн опытпа паллаштарасшӑн сире.

— Юрать, юрать, ҫӳлтен хушни — пирӗншӗн саккун, — аякран килнӗ хӑнан документсене ҫавӑркаласа пӑхрӗ Карасев. — Пӗрлешӳ пӗтиччен пай пуҫлӑхӗн виҫҫӗмӗш заместителӗ пулнӑ. Икӗ эрне ҫурӑ ӗҫленӗ... Ӗнтӗ...

— Нивушлӗ ӑнланмастӑр эсир, Карп Карпович, инкеклӗ самантра эпӗ унта мӗншӗн лекнине? — именнӗ пек пулчӗ ҫын. — Пӗрлешӳ ун чухне юлашки сывлӑшпа хашлатса сывлатчӗ-ҫке. Кантурӗнче ӗҫлекенсем малашне хӑйсем сирӗн учреждение ҫӗклес пир ки шавланине те, уншӑн мӗнле-мӗнле ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курасси ҫинчен пӑшӑлтатнине те эпӗ хам хӑлхапа хамах илтнӗ вӗт. Мана та ҫунатлантарчӗ ку шухӑш. Ҫаванпа унта куҫса ӗлкӗрес, терӗм... Пӗрлешӳ арканчӗ те, аллӑ ҫынран пӗри те яла каймарӗ, пурте хуларах ӑшӑ вырӑн тупрӗҫ: хӑшӗ тимӗр-тӑмӑр, ҫӗтӗк-ҫатӑк пухма вырнаҫрӗ, тепри нефть базине кӗрсе ҫухалчӗ. А хӑйсем пурте — ялхуҫалӑх специалисчӗсем. Пиявкин ҫеҫ хуларан алалла пӗр-пӗччен уттарчӗ.

Кӑмӑллӑ калаҫу хыҫҫӑн Пиявкин, каҫару тепӗр хут ыйтса, алӑк патнелле тӑраннӑ кӑвакал уттипе утса кайрӗ.

Пиявкин ӗҫре тӳрех палӑрчӗ. Вӑл калакан тӗрлӗ кулӑшсене ҫӑвар карса итлекенсем ун ҫумӗнчен хӑпма пелмеҫҫӗ вӗт. Ҫынсем йышлӑ пухӑннине усӑ курса, «опытлӑ специалист» коллектива пуҫару хыҫҫӑн пуҫару парнелеме пуҫларӗ.

— Кунашкалах ӗҫлесе пырсассӑн эсир Кӳлхӗрри ҫумӗнчи лачакана путатар. Эпӗ сире инкекрен хӑтарса хӑварасшӑн. Акӑ мӗн тумалла: ҫав лачакана тасатса, унта сӗлӗх ӗрчетме тытӑнмалла. Ҫурӑмӗ тӑрӑх икӗ йарӑм тӑсӑлакан сӗлӗх...

Шавлама пуҫланӑ эртеле Карасев чарчӗ:

— Лӑпланӑр-ха, юлташсем! Тен, тӗрӗсех калать Пиявкин. Тупӑшӗ ниҫтан та килмест-ҫке. Чухӑнлансах ҫитрӗмӗр. Тӗрӗссипе, пирӗн Кӳлхӗрри ҫумӗнчи лачака ҫеҫ мар, юшкӑн тулнӑ пулӑ пӗви мӗн чухлӗ. Караспа карп вилсе пӗтнӗ хыҫҫӑн вӗсенче ахаль те сӗлӗх хуп-хура явӑнать, шыва кӗме хӑрушӑ. Шутласан, сӗлӗхӗ, шельма пуҫӗ, усӑллӑ иккен. Тин астурӑм, пульницара выртнӑ чухне, манне хамӑнне те юна, кӗвелесрен, сӗлӗхе ӗмтернӗччӗ.

— Ҫапла вăл, тăвансем, сĕлĕх тени ҫав тери хаклă, — хушса хучĕ Піявкин. — Ку отрасле аталантарма пултарсан эпир... Кўршĕсене кăна мар, такама та хыҫа тăратса хăварăпăр-ха. Ҫавăнпа кун пирки тĕплĕнрех шухăшламалла, ун ҫинчен халăха массăллăн ăнлантарса памалла. «Сĕлĕх — пирĕн ылтăн!» чĕнў кашнин ҫын чĕрине пырса тивтĕр.

Ырă сăмаха алă ҫупсах ҫирĕплетрĕҫ. Карп Карпович «Сĕлĕх» эртел туса хучĕ, ăна ертсе пыма Пиявкина хушрĕ.

Пиявкин кĕҫ тепĕр пуҫару турĕ:

— Сĕлĕх ĕрчетсе чапа тухрăмăр-и? Тухрăмăр! Малашне пирĕн шапа хунаттармалла пулать. Ку ĕҫ, хаклă тăванăмсем, сĕлĕх ĕрчетессинчен те ансатрах. Атьăр-ха тухса пăхар кантур умĕнчи пĕве хĕрринех. Шывра мĕн чухлĕ йыт пулли кĕшĕлтетет? Паянтанах пирĕн вĕсене кашнине сыхласа хăварма тытăнмалла. Кĕркуннеччен вара миҫе лав шапа ҫитĕнет? Пин-пин пуҫ! Вĕсене опыт тума вĕренў заведенийĕсене, наукăпа тĕпчев институчĕсене тата лабораторисене сутса эпир ҫулталăкрах темиҫе ҫĕр пин тенкĕ укҫа тума пултаратпăр вĕт?

Ĕҫре пур енĕпе тăкак ҫеҫ тўсекен Карасев пуҫарулла Пиявкин сĕнĕвĕпе хальхинче те хавасах пулчĕ, хыпăнсах «Ква-ква» ятлă тепĕр эртел йĕркелерĕ.

Акă пуҫланса кайрĕ хайхи Кўлхĕрри тавраҫĕнче хĕрў ĕҫ. Сĕлĕхпе шапа ўстермелли террариумсем, акватеррариумсем тума тытăнчĕҫ.

Пиявкин ҫĕнĕрен ҫĕнĕ сĕнў сĕнет. Ҫулла вăл уйри пĕтĕм лĕпĕше пуҫтарса наука учрежденийĕсене сутасшăн.

Сĕлĕх этемĕн усал юнне ĕмсе тасатать пулсан, Пиявкин ҫак хуҫалăх кассине кирлĕ мар ĕҫпе тасатать. Карп Карпович Карасев пуҫарулла специалистшăн каҫса кайсах савăнать.

# ХУШĂНАКАН ТĂКАК

Васлей Микулайчпа эпир тахҫантанпах пĕр урамра пурăнатпăр. Вăл стройтрестра кадрсен пайне ертсе пынине пĕлсен, эпĕ пĕррехинче, сăра черетĕнче вăхăт иртернĕ чухне, хăюлланса унран хама канлĕрех ĕҫ тупса памашкăн ыйтрăм. Васлей Микулайч, «ҫăкăр-тăвар хире-хирĕҫ» текелесе йăлкăшса илчĕ те, шухăшласа пăхма пулчĕ, эрне пуҫламăшĕнче савăнăҫлă хыпар пĕлтерчĕ.

Ҫапла кўршĕ панă адреспа ҫула тухрăм. Хула айккинче вичкĕн ҫилпе тăлăххăн шăхăрса ларакан тăватă хутлă чул ҫурта пыраса тупма та, ун патне ҫитме те ҫăмăлах пулмарĕ. Ҫырма-ҫатра урлă каҫса, тем склачĕсемпе базисем тавра ҫавранса ҫўресе хашкăлтăм.

— Ну тупнă та вара улах вырăн ку ҫурт валли, — ҫамка ҫинчи тара шăлса илтĕм кадрсен пайне кĕрсен. — Кунта лекиччен ҫăва шăтăкне чăмма ҫăмăлрах пуль.

— Ĕҫе вырнаҫсах тетĕн пулсан, тусăм, ытлашши ан пакăлтат, шăлна сырт, — шĕвĕр пўрнипе юнарĕ мана Васлей Микулайч. —

Стройтрест кантурне ăçта лартмаллине ăна пуçлăхсем пирĕнсĕрех татса пана.

Чĕлхе вĕçне ыраттарсах шăла çыртма тиврĕ. Сăмах-юмах та çакăнпа вĕçленчĕ. Васлей Микулайч мана ĕçне часах тупса пачĕ, приказ хатĕрленĕ хыççăн путвалти анлă мастерскоя хăех кайса ячĕ. Çавăнтанпах пăчкă-сава аларан каймасть. Пĕрмаях чӳрече те алăк юсаттарасçĕ е пĕр-пĕр пысăк пӳлĕме çурмаран пӳлтереççĕ... Ĕçĕ тупăнсах пырать.

Малтантарах ирпе килме те, каçпа кайма та аптрамастчĕ. Кĕрхи юрлă-çумăрлă çанталăкра вара нуша кулачне çимех тиврĕ. Пĕрре мăн çул çине тухиччен мунчари пек лачкам тарлатăн, тепре автобус кĕтсе тăрса кашаманла шăл шаккатăн. Ӳпкене шăнтса хытах чирлесе ӳкрĕм вĕт. Пульницара выртса тухнă хыççăн тресту-качку çава патне кайтăр! тесех алă сулма шутланăччĕ. Çав вăхăтра тата трест пуçлăхĕ шăпах халăх ыйтăвне тивĕçтерчĕ: транспорт уйăрса пачĕ. Ирхине виçĕ автобус хулан тĕрлĕ енне ӳхĕрсе тухса каяççĕ те кантурта ĕçлекенсене ушкăнăн-ушкăнăн пухса килеççĕ, каçхине çав майлах ăсатса яраççĕ. Ĕçрен пăрахса каяс шухăш та сĕвĕрĕлчĕ манăн çакăн хыççăн.

Канлĕ пурнăçра вăхăт иртни те сисĕнмест çав. Вунă çул çӳретпĕр çапла Васлей Микулайчпа пĕр автобусра. Пĕркун, хамăр çурт умĕнче анса юлсан, вăл мана çанăран туртса чарчĕ те:

— Трест кантурĕ валли улах вырăн шыраса тупакансене ятлакании эсĕ марччĕ-и-ха? — тесе ыйтрĕ, куçран чăрр пăхса.

— Эпĕччĕ-çке, — тахçанхи шӳте аса илнипе савăнтăм хам.

— Манман пулсан, пит лайăх. Ăслă шухăша пуçра тытма пултаракан çыннах ĕçе илнĕ иккен эпĕ, — иртен-çӳрентен сыхланса хăлхаран пăшăлтатрĕ Васлей Микулайч. — Вăхăт çитрĕ, вĕри çатма çинче ăшаламалли меллĕ вăхăт çитрĕ.

— Кама? Мĕншĕн? — тĕлĕнсе ыйтрăм.

— Хамăр пуçлăха. Патшалăха улталанăшăн. Урăх чăтма май çук. Сиктермеллех, ташлаттармаллах ăна вĕри çатма çинче.

— Эсир, тем, Васлей Микулайч, пуçлăхпа хытах хирĕçсе кайнă пек туйăнать.

— Хирĕçнĕ çав, хирĕçнĕ. Тем çитмест ăна, эсреле, вĕçĕмсĕр хĕстерет мана, ĕçрен кăларса сирпĕтессипе хăратать. Курăпăр-ха, кам — кама?

— Килĕштерместĕр пулсан, пăрахмалла та каймалла. Урăх çĕрте ĕç çуккă-им?

— Пурри пур та, çапах... Хăнăхнă çĕртен каман хăй ирĕкĕпе каяс килтĕр, унсăр пуçне тата пĕр çĕртен тепĕр çĕре чупма та аван мар. Шухăшла-ха, сан хăвăн пăрахас килет-и ку ĕçе?

— Çук, мана никам та хăваламасть-ха.

— Çапла çав. Автобуспа каллĕ-маллĕ тӳлевсĕр çӳретĕн, ăшă пӳртре кĕпӳне йӳле ярса ĕçлетĕн, никамран сивĕ сăмах илтместĕн. Чăннипех çăтмахра эс — çĕр çинчи çăтмахра.

— Сан хăвăн та манăннинчен темиçе хут чаплăрах-ха пурнăçу, пуçлăхупа çурас та — çанă таварса ĕçле, — лăплантарма тăрăшрăм ăна.

Васлей Микулайч пушшех тарăхса кайрĕ, трест пуçлăхне пурпĕр ĕçрен кăларттаратăп та тĕрмене хуптаратăп, тесе пĕр чарăнмасăр пакăлтатать. Утма пуçларăм, каллех чарса тăратрĕ, ман умра пӳрнисене хуçлата-хуçлата шутларĕ:

— Çулталăкра эсĕ вăтамран 265 кун ĕçре пулатăн, теййĕпĕр. Енчен те санăн хула транспорчĕпе çӳрес пулсан, çул çинче куллен 10 пус пĕтет, çулталăкра — 26 тенкĕ те 50 пус. Вунă çул хуш-

шинче эсё, трест автобусĕпе кĕрлеттерсе çӳресе, патшалăха шăпах 265 тенкĕ тăкак кӳнĕ. Анланатăн-и?

— Пастай, пастай. — кăмăлсăрлантăм эпĕ, — мĕн, хисеплĕ Васлей Микулайч, манран çав укçана шыраса илесшĕн мар пуль те эс? Эп айăплă-и-ха уншăн? Эп, мĕн, пĕччен кататчи чупатăп-им?..

Васлей Микулайч ман тавра ташласа çаврăнчĕ те сылтăм аллине çĕклесе пӳрнисемпе шăк та шак! тутарчĕ:

— Тоттă çав, пĕччен мар! Çĕр аллăн. Кантурти çĕр аллă çын вунă çулта çапла майпа патшалăх кĕсйине 39 пин те 750 тенкĕ укçа хывман. Унсăр пуçне...

— Тата мĕн?

— Унсăр пуçне пĕр автобусне хула тăрăх каллĕ-маллĕ хăваламашкăн 50 тенкĕ, виççĕшне чуптарма 150 тенкĕ ларать. Çулталăк хушшинче кăна 39 пин те 750 тенкĕ тăкак тӳсетпĕр. Вунă çулта вăл ăçталла капашать, э? 397 пин те 500 тенке çитет! Кун çумне эпир песплат ярăнни укçана хушсан? Çур миллиона яхăн тăкак кӳнĕ эпир тусăм, треста. Çур миллион — кантур çурчĕн хакĕ чухлĕ! Тепĕр вунă çултан миллиона капашать вĕт? Финансистсемшĕн пулсан мĕн, «Хушăнакан тăкаксем» текен статьяпа çултан çул йĕркипе çипсать туса пыраççĕ те ăна, никам куçĕ тĕлне те пулмасть вăл. Ман куç тĕлне пулчĕ-пулчех халь. Пурпĕр çак укçана хамăр пуçлăхран шыраттарса илтеретĕп.

— Илтерттер, тулĕк леш 265 тенкине çеç манран ан шыраттар. Пире ан тĕкĕн. Эх, саппала, чăкăлтăшпа, аптрамалла. Те пире çуран çӳремелле туса хуран-ха. Те ман пулăшмалла кăна?..

— Пулăшмалла çав, тусăм, пулăшмалла. «Çакăр-тăвар хире-хирĕç» текĕччĕ эп сана тахçанах. Мантăн-и? Ун чухне эпĕ сана ĕçе илме пулăшрăм, халĕ эсĕ мана пулăш. Эпĕ каланине ушĕнчен пуçласа вĕçне çитиччен асра тыт та, хут çине çырса, ак çак адреспа яр. Аслăраххисемпе ăслăраххисем вĕçне-хĕрне тухаççĕ унта.

Ку çилĕмрен вăйлах хăпăнса, такам хыçран хăваланă пек, киле хăшăлтатса çитрĕм. Çĕрĕпе пуç миминe вылятрăм. Ениерте никам çинчен çăхав çырса курманскер, эпĕ тăлланса лартăм. Такам çапса пăрахатăп тесен те трест пуçлăхне çĕлехле вăрттăн сăхакс çук.

Иккекрен профсоюз пухăвĕ çăлчĕ. Халăхран асли те, ăсли те пулас çук-ха текелесе сиксе тăтăм та, ĕнер Васлей Микулайч мĕнмĕн вĕрентнине шкулти пек шăкăртаттарса патăм, хăйне çеç сутмарăм.

Ăшши пĕтнĕ мунча пек лĕпленме пуçлана пуху тинĕс хумлĕн кĕрлесе кайрĕ. Сынсем доклад вырăнне ман сăмаха хĕмленсех сӳтсе явма пикенчĕç, юлашкинчен вĕçне çакăнта çитерчĕç: автобуспа турттармасан — ĕçрен пăрахса каятпăр!

— Мĕн тăвăпăр-ха капла, Васлей Микулайч? — ыйтрĕ кадрсен пайĕн пуçлăхĕнчен трест управляющийĕ.

Ман çурăм хыçĕнче пытанса ларакан Васлей Микулайч типпĕн ӳсĕрсе илчĕ те çапла çавăрттарса хучĕ:

— Мĕн тумалла, тетĕр-и? Пустуй паврама чарăнмалла! Темле столяр хыççăн кайса ухмахланар мар. Эсир пире автобуспа тӳлевсĕр çӳретме йышăннăшăн эпĕ сире пĕтĕм коллектив ячĕпе чĕререн тав тăватăп. Хушăнакан тăкаксем ӳсниiĕн мĕн кулянмалли? Сатту пирĕн кадрсем пĕр вырăнта тытăнса тăма пултараççĕ. Çирĕпленнĕ йĕркене пĕтерер мар, юлташсем!

Вăл апла каларĕ пулин те, мана хӳтĕлекенсем те тупăнчĕç.

Кашни ир халĕ эпир автобуспа ĕçе çӳретпĕр. Анчах тӳлевсĕр мар. Хушăнакан тăкака пусăн-пусăн хухтаратпăр.

●

# АВĂРТА

Чун-чĕре юратнă ĕçе çамрăклах суйласа илнĕскер, эпĕ учитель пулас ĕмĕтпе çĕр çывăраймасăр нушаланнă, пединститутра шурса кайиччен вĕреннĕ, шкул ачисене хам мĕн пĕлнине чуна парса вĕренте пуçланă. Мăшăрăм та çамрăк ăрăва ăстăн паракан ĕçе чунтан парăннăшăн çунатлансах вĕçеттĕм. Ĕçĕ те пирĕн ялан ăнса пыратчĕ. Вĕренекенсен, ашшĕ-амăшĕсен, çутĕç пайĕн мухтав сăмахĕсем хаттере шăнăçаймиех пухăннăччĕ.

Кĕçех пире хулан тепĕр енче çĕнĕ хваттер пачĕç. Ĕçе çӳреме меллĕрех пултăр тесе, арăмла иксĕмĕр те çывăхри урăх шкула вырнаçрăмăр.

Эпĕ çĕнĕ çĕрте те ĕçе хĕрӳллĕн тытăнтăм. Ачасене физика саккунĕсене тăрăшса вĕрентетĕп, кашнине тарăн пĕлӳ парассишĕн ăшталанатăп.

Шăнкăрав хыççăн пĕринче алăка уçрăм кăна, директор пырса та тăчĕ. Сăн-пичĕ хăйĕн çăвара хыпнă пăрăçа çăтса яраймасăр асапланакан этемĕнни евĕрлĕ. Йывăр айăпа кĕнĕ çын çине пăхнă пек сăнăларĕ те вăл мана: «Класпа ĕçлеместĕр!» — тесе тивертсе хăварчĕ. Хăмла шалчи пек çӳллĕ кĕлеткине авкаламасăр коридор тăрăх утса каякан хĕрарăма малтанах ни çилленме, ни кӳренме пĕлмерĕм.

Ун шухăшне ăнлантăм-ха. Хама ертсе пыма шаннă саккăрмĕш «А» класпа мухтанмаллиех çук. Хĕрĕх икĕ ачаран виççĕшĕ учетра тăраççĕ, саккăрăшĕ начар ĕлкĕрсе пыраççĕ. Вĕсемпе уйрăммăн ĕçлеме эпĕ тин çеç тытăннă-ха, малашне мĕн-мĕн тумаллине пуçра йăлтах кумнă, хут çине шăрçаласа хунă.

Вĕрентекенсен пухăвĕнче директор каллех çав сăмахах шăл витĕр сăрхăнтарчĕ: «Класпа ĕçлеместĕр!» Ку хутĕнче мана çеç мар, пĕтĕм эртеле пырса тиврĕ те ӳпкелешӳ, ытлашшиех пăлханмарăм. Пӳлĕме çырса çапнă чĕнĕве вуласан, тĕлĕнтĕм. «Ачасем ăçта — класа ертсе пыраканăн та çавăнта пулмалла!» — тенĕ унта.

Чĕнӳ — чĕнет, директор вара... хушать те, ыйтать те. Пирĕн — пурнăçламалла. Урок вĕçленнĕ-вĕçленмен хамăн класс ачисемпе хулана тухса чупрăм. Ăçта тимĕр-тăмăр сапаланса выртать — пуçтаратпăр. Кĕç кивĕ хут эрни пуçланчĕ. Кил тăрăх ăна пуçтарса тинке тухрĕ. Пĕр хваттере шăнкăравларăмăр та... алăкра директор пуçĕ курăнах кайрĕ. «Маттур! Çапла ĕçлемелле класпа», — терĕ вăл мана.

Мухтав сăмахĕ хавхалантарчĕ-ши, ытти классене ертсе пыракансенчен юласран сехĕрлентĕм-ши, вĕрентӳ ĕçне мансах кĕтесрен кĕтессе тенĕ пек чупа пуçларăм. Автоинспектор шкула пырсан, çулçӳрев йĕркине хамăр мĕнле пĕлнине урама тухса кăтартрăмăр. Пушарниксемпе пушар сӳнтерме вĕрентĕмĕр. Шыва кĕнĕ чухне мĕнле тыткаламалли йĕркесене Атăлта эрне ханахрăмăр. Чупассипе, сиккессипе, мечĕк тапассипе пыракан ăмăртусене пĕрне те сиктерместпĕр. Тĕрлĕрен олимпиадăсене хутшăнатпăр. Канмалли кунсенче фестивальсенче юрлатпăр, ташлатпăр. Сапитари пĕлĕвĕсене пуçа хыватпăр. Еç урокĕсенче урай çăватпăр, чӳрече çыпăçтаратпăр. Пурте пире, класс руководителĕсене, хушаççĕ: директортан пуçласа пионервожатăй тарапах.

Ачасене вĕри апат çитермелли талон туянмашкăн та, киолек-

торие каймашкăн та, ятне-шывне пĕлсе çитерейми ирĕклĕ обществăсене тӳлемешкĕн те, тата çĕр тĕрлĕ темшĕн те кашнинчен пусшарăн укçа пухмалла. Ательере кун валли ятарласа хутаç çĕлеттертĕм. Апшĕ-амăшĕсен патрульне те пирĕнех ертсе пымалла-çке. Каçпа тĕттĕм кил хушшисем, подъездсем, путвалсем тăрăх эй ăмăртмалла хӳтерсе çӳретпĕр вaçка чарусăр ачасене. Çанçурăма çемĕçтернисĕр тата хамăр ята янисĕр пуçне урăх кунтан уссинех курăймастпăр. «Йывăр ачасен» апшĕ-амăшĕсем ĕçлекен çĕртен тухма пĕлместпĕр. Ачасем патне черетпе кайса çывăрасси кăна юлчĕ ĕнтĕ...

Ăслăлăх канашлăвĕнче директор çивĕччĕн пĕçертсе илчĕ: «Вĕренӳ шайĕ куç умĕнчех чакать. Класпа ĕçлеместĕр. Пĕр-пĕрин хушшинчи çыхăнăва çирĕплетместĕр».

Çак çыхăнăва çирĕплетес тĕллевпе пĕр çамрăк вĕрентекен мана хупаха чĕнчĕ. «Тархасласа ыйтатăп, — йăлăнать хăй, — çак чĕрĕкре ман класа физикăпа лайăх паллăпа кăлар. Унсăрăн директор чĕрĕллех çиет». Эп ĕçе ĕçкĕпе улăштарма шутламарăм. Манпа вăл калаçми пулчĕ.

Çиçĕмле хăвăртлăхпа иртет кун хыççăн кун. Пĕр пушă вăхăт та, канмалли кун та çук пирĕншĕн. Праçникре те пулин шкулта дежурствăра тăмалла-çке. Ывăннипе тепĕр чух урокрах тĕлĕрсе кантăп. Хăраса куçа уçатăп та, ахух, класра ман пĕр ача та çук. Доска çине такăшĕ çырса хăварнă: «Лайăх тĕлĕк курăр, хисеплĕ вĕрентекенĕмĕр».

Арăмпа иксĕмĕр те ик урана хăрах çăпата сырнă пекех тăлланса лартăмăр.

Класпа кунĕн-çĕрĕн ĕçлесех ĕнтĕ хам мĕн вĕрентниве те майĕпен мана пуçларăм. Киле çитсен, алла кĕнеке тытма та, урока хатĕрленме те, шăлавар якатма та вăхăт юлмасть. Апат хăпăл-хапăл çиетĕн те тӳрех минтере ыталатăн.

«Каплах ĕçлесен, — тетĕп арăма, — ачасене вĕрентме вăхăт юлмасть пирĕн».

Авăрта пĕтĕрĕнсе анраса кайнă пулăсем пекех пурăнатпăр арăмпа. Директор хăй патне чĕнсе хыт хут татăкĕ тыттарсан тин пуçа пырса çапрĕ: ара, эпир хăçантанпа килте ачасемпе юнашар ларса урок туман, пĕрле кинона çӳремен, йĕлтĕрпе ярăнман... Акă, халĕ аса илтерчĕç ачасем пуррине. Пире, арăмпа иксĕмĕре те, йĕркене пăсакансемпе ĕçлекен совет ларăвне чĕнеççĕ. Мĕнле каскăнла ĕç тунă-ши пирĕн шĕвĕрсем?

Ăна-кăна пĕлеймерĕмĕр-ха, директор каланине çеç илтрĕмĕр: «Класпа та ĕçлейместĕр, килти ачусене те пăхаймастăр».

Чăн та, ку шкул авăрĕнче пуç пăтранать.

# ПӲРНЕСЕМ ТЕ ТАН МАР

Пурнăç картлашки тăрăх ухă йĕппи пек вăшлатса хăпаракан Хумма Ларивановăч Пултарайкина тусĕсем пиншак аркинчен карт! туртса чарчĕç:

— Тăхта, качакалла тӳрех çӳле ан кармаш. Акă сан валли халлĕхе ăш вырăн. Туп та хăвна пулăшма пултаракан шанчăклă çын, ĕçле çанă тавăрса. Кăтарт хăвна, вара...

Çапла Пултарайкин «Профсоюз комитечĕн председателĕ» тесе çырса çапнă алăкран анлă пӳлĕме саркаланса кĕрсе кайрĕ. Хăйпе хирĕç Аверкий Иванович Пулайманова лартрĕ. Ăна вăл унччен пĕрле ĕçленĕ кантуртан чĕнсе илчĕ.

Пултарайкин, пултарулăхне кура, пур ĕçе те тума пултарать ĕнтĕ, анчах хăй аллипе урлă выртана тăрăх та çавăрса хумасть. Секретарĕ сĕтел çине ирпе хурса хăварнă папкăри хутсене майĕпен кăларать те, сехечĕ-сехечĕпе пуç çĕклемесĕр, сăмах чĕнмесĕр вуласа тĕпчет, хушăран хушу парать: «Зама. Строительсен социализмла ăмăртăвне тата анлăрах сармалла. Çурт-йĕре вăхăтра тăвассишĕн стройтрестри кашни профсоюз членĕн чун-чĕринче хĕрӳ вутхĕм чĕртмелле. Пурнăçлани çинчен тепĕр эрнерен çырса пĕлтермелле. Пултарайкин».

Секретарь папкăна кĕрсе илет те, кăнтăрла иртсен ĕç хучĕсене Пулайманова пырса парать. Аверкий Иванович та вĕсемпе тĕплĕн паллашать. Эрне вĕçĕнче вăл председатель ячĕпе хурав çырать. Хута секретарь унран илсе нумĕрлет те Пултарайкина тыттарать. Чăн та, мĕн-мĕн хушнине Пулайманов, эрне хушшинче строительсем хушшинче пулса курман пулин те, питĕ тăрăшса «пурнăçланă». Пур халĕ Пултарайкинăн профсоюз обкомне мĕн хыпарламалли. Хавасланнăскер вăл замне малта пыракансен паха опытне ĕç эртелĕсенче сармашкăн çырупа çырса пĕлтерет. Лешĕ палăртнă вăхăтра ун патне конвертласах хурав ярать.

Хăйĕн мĕнпур ĕçне кула-кулах заместителĕн ĕнси çине тиет Пултарайкин. Арендаторсен шкулĕсемшĕн, ялан ĕçлекен производство канашлăвĕшĕн, экономика вĕреневĕшĕн, юлташла судсемпе халăх дружинисемшĕн, физкультурăпа спорта аталантарассишĕн, çамрăк специалистсен, бригадирсемпе мастерсен совечĕсемшĕн, юрлакансемпе ташлакансемшĕн пуçĕпех явапլă шутланса тăрать Аверкий Иванович. Унсăр пуçне тата миçе комиссие ертсе пымасть-ши! Асра та тытаймн пулчĕ ĕнтĕ вĕсене. Кашни кун пĕрер канашлу ирттерсен те уйăхĕпех сăмах çапма тивет.

Хумма Ларивонăч пурнăçпа тан утма юратакан çын пек кăтартма та пултарать иккен хăйне. Ертсе пырассине çĕнĕлле йĕркеленĕ вăхăтра еппле-ха вăл хӳрене тăрса юлĕ? Акă, Пултарайкин мĕнпур советсен ĕçне йĕркелесе тăмалли аслă совет тăвать. Ун пуçне никама та мар, хăйĕн заместительнех лартать.

Пулаймановăн пĕрин патне те алă пыраймасть çав. Юрать-ха комиссисенчен ытларахăшне вăл хăй ертсе пырать. Çапла Аверкий Иванович хăйпе хăй калантласа, хăйне хăй хушса, хăйĕнчен хăй ыйтса ларать председательпе хирĕç. Советсемпе комиссисен ĕçĕ ĕнтĕ хут çинче тикĕт сĕрнĕ урапа пекех йăрлаттарса пырать. Ун пирки вăл секретарь урлă Пултарайкин патне хурав хыççăн хурав çитерет. Çунатлă сăмах малалла вĕçет. Пуçпа ĕçлеме пултаракан Пултарайкина уншăн тусĕсем мухтаççĕ, ăна валли çĕнĕ вырăн хатĕрлеççĕ.

Хĕвел пек çиçекен секретарь пĕр сĕтелтен тепĕр сĕтеле юрлаюрла ĕç хучĕ куçарать. Пĕррехинче вăл хаюлланса ыйтать:

— Хумма Ларивонч, эсир иксĕр пĕр пӳлĕмре сăмсапа сăмса тĕкĕннĕ пекех хирĕç пăхса ларатăр. Нивушлĕ çак хут татăккине Аверкий Иванăч умне тӳрех хурса пама юрамасть?

— Юрамасть çав, юрамасть, — куç айĕн пăхса кăмăлсăррăн ăнлантарать ăна председатель. — Официалла хутăн хăйĕн çулĕ пур.

Вӑл çула ӗнтӗ ахаль те кашни кун такӑрлать-ха секретарь. Уншӑн пулсан — пурпӗрех ӗç. Çакӑ çеç канӑç памасть ӑна. Алӑри пӳрнесем те тан мар та, пӗр пӳлӗмри бюрократсем те пӗрешкел мар иккен — акӗ тӗрлӗ. Пултарайкинӗ, пултарсан та, çамка тирне картлантармасть, хушать çеç. Пулайманов, вӑл хушнипе тем пек тӑвас тесен те — пултараймасть. Ирӗксӗрех унан шурӑ хута хуратма тивет.

Çав хушӑрах... Стройтрестри арендаторсен шкулӗсем саланса кайнӑ. Ялан ӗçлекен производство канашлавӗ чаранса ларнӑ. Экономика ыйтавӗсене вӗрентме пӑрахнӑ. Юлташла судсем саланнӑ. Çамрӑк специалистсен, бригадирсемпе мастерсен совечӗсем пӑчланнӑ. Физкультурӑпа спорт тата халӑх пултарулӑхӗ манӑçа тухнӑ...

«Çавӑ таварсах ӗçленипе» хайне кӑтартма пултарнӑ Хумма Ларивановӑч вӑл вӑхӑталла урах картлашкана улӑхма ӗлкӗрнӗччӗ ӗнтӗ. Хӑй хыççӑн вӑл Аверкий Иванӑчне мекӗрленсех туртатчӗ.

Пултарайкинпа Пулайманова такӑр çул уçса панӑ ырӑ тусӗсем!

# СУРӐХ

Хӗлип Хӗлиппович Шальзя çуралнӑ çӗршывне Кустӑрма хулинчен пуйӑспа кӑлтӑртаттарса çитрӗ. Вакунран перрон çине васкамасӑр анчӗ те вӑл, шлепкине хывса, станцӑна саламларӗ:

— Сывӑ-и, тӑван Пӑван!

Ӑна ялтсе-ши, хӑрӑк тӑраллӑ хурӑн çинче ларакан ула курак хирӗç сасӑ пачӗ:

— Крак!

Вокзал умӗнче те, хыçӗнче те пассажира кӗтекен курӑнмарӗ. Шальзя, çӑмал чӑматанне суллакаласа, салхуллӑн малалла утрӗ, поселокӑн капӑрланнӑ тумне пӑха-пӑха тӗлӗнчӗ. Ӗлӗкрех чӗркуççи таран пылчӑк апса çӳренӗ аслӑ урама асфальт сарнӑ. Чӑлаш-чалӑш йывӑç пӳртсем выранне нумай хутлӑ чул çуртсем шӑкӑрин ӳссе ларнӑ. Пӗрин умӗнче вӑл чарӑнчӗ, алак гӑррине çырса çапнине вуларӗ: «Пӑван районӗнчи çыхану узелӗ».

Шальзя кунта хӑйсен ял çынни Иван Иванович Сорых ӗçлет тенине аса илчӗ, вара хӑюллӑн шала кӗчӗ, плащне, чӑматанне дежурнӑя тыттарчӗ. Унран начальник заместителӗ ӑçта ларнине ыйтса пӗлнӗ хыççӑн вӑл, тумтирне майлакаласа, иккӗмӗш хута питӗ чинлӑн улахрӗ. Телее пула, заместитель сӗтел хушшинчех шӑна хӑваласа ларать.

— Сывлӑх сунатӑп, Иван Иванович! — аллине çӳлелле çӗклесе çывхарчӗ Шальзя. — Ман телеграммӑна илеймен пулас, кӗтме никам та тухман.

Куçа-пуçа чарса пӑрахнӑ заместитель сӗтел хушшинчен такӑнкаласа тухрӗ, килнӗ çынна алӑ пачӗ, пуçне кӑтӑрт-кӑтӑрт хыçса, айӑпа кӗнӗн ыйтрӗ:

— Кам пулаттарччӗ çак эсир?

Заместителен çемçе аллине тимӗр хыпкӑчпа хӗстернӗ пек чӑмӑртанӑ май, Шальзя лӑхлатса кулса ячӗ:

— Шӳтлетӗн, шӳтлетӗн, Иван Иванович. Ха вӑл, мана пӗлмен-палламан пек шахвӑртса тӑрать.

— Аҫа ҫапса ҫунтарса ятӑр ҫакӑнтах, ҫук, туршӑн та палламастӑп.

— Ара, эпӗ Шальзя вӗт. Хӗлип Хӗлиппович. Е хам пек мар-и?

— Пастай, пастай, чӑнах та Хӗлипех пуль эс? Вӑт хамӑръял. Епле улшӑннӑ. Мӗнле тӗрекленсе кайнӑ. Ай-яй, татах ӳснӗ пулас. Маччана кӗҫ-вӗҫ перӗнет пуҫу. Вӑт чӑнах та шалча... — Иван Иванович хӑнан шукӑль тумне, йӑм хура ҫӑра ҫӳҫне, тӑваткал сухалне, шыҫмакрах сӑмса кӑкӗ ҫинче меллӗн ларакан хулӑн харшаллӑ куҫлӑхне тӗсесе пӑхрӗ. — Кам шутлатӑр эсӗ тесе. Урамра ҫупса ярсан та пӗлсе юлас ҫук. Ай-яй, мӗн чухлӗ вӑхӑт иртрӗ эпир шкулта пӗрле вӗреннӗренпе, ялта пӗрле ҫӳренӗренпе...

— Ҫапла ҫав, мӑя хур аҫилле каҫӑртса, хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхмасӑрах чупатпӑр пулас, — тем аса илнӗн ассӑн сывларӗ Шальзя. — Мана хуптарнӑранпа кӑҫал шӑпах ҫирӗм ҫул ҫитет. Айӑпсӑр ҫунтартӑр эсир ман ҫамрӑклӑха. Эс пушшех путсӗрле хӑтлаптӑн. Прокурорпа судья чӑнлӑха ӗненмерӗҫ...

Заместителӗн ансӑр ҫамки ҫине кантӑр вӑрри пысӑкӑш пӑтӑр-пӑтӑр сив тар тапса тухрӗ. Куҫӗ умӗнче тахҫанхи пурнӑҫ ӳкерчӗкӗсем вӗлтлетсе иртрӗҫ.

Сорых ун чухне почтальонра ӗҫлетчӗ, Шальзя — клуб заведующийӗччӗ. Шальзя артист пекех пултаруллӑччӗ, концерт-спектакльпе ял халӑхне савӑнтаратчӗ. Сорых та хорта сурӑхла мемлететчӗ. Ҫав вӑхӑтра Сорых клуб техничкипе ҫыхланса кайрӗ, ун патне ҫӳреме пуҫларӗ. Пӗр каҫхине вӗсем, ӗҫмелли-ҫимелли ӑшӑтнӑ хыҫҫӑн, электроплиткине сӳнтерме манса кайнӑ. Плиткӑран пушар тухнӑ ҫав. Хараса вӑранса кайнӑскерсем, ҫулӑма сӳнтерес

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
34639 чув

вырӑнне, чӳречерен сиксе пытаннӑ. Шӑпах Шальзя улахран таврӑннӑ пулнӑ. Ҫунакан клуб патне вӑл чи малтан чупса ҫитнӗ те пушарпа кӗреше пуҫланӑ... Кайран суд пулчӗ. Сорых вӗрентнипе техничка ҫав каҫ Шальзя клубра ҫывӑрса юлнӑ, тесе ӗнентернӗ судра. Шальзяна Сорых элеклесе хуптарчӗ, хӑй ҫӑлӑнса юлчӗ, анчах инкекрен пурпӗрех хӑтӑлаймарӗ. Чапрас туталлӑ, курпун кӗлеткеллӗ, вунӑ ҫул аслӑрах техничка, «Санран хырӑм юлчӗ, хама качча илмесен сана пурпӗр сутатӑп», — тесе каччӑ ҫумне ҫилӗмлех ҫыпҫӑнчӗ. Хӑра-хӑрах, куҫа хупсах авланма тиврӗ вара унӑн. Халӗ те ҫав арӑмпах пурӑнать. Пушар пиркиех пӗтерчӗ Сорых хӑйӗн телейне те, халӗ хӑйне хирӗҫ ҫисе ярасла пӑхса ларакан Шалъзя ҫамрӑклӑхне те.

Сорых пӳрнипе сӗтеле шакӑртаттарса каларӗ:

— Ӗлӗкхине аса илмӗпӗр, тусӑм. Вӑл вӑхӑтри ҫӳп-ҫапа ҫурхи шыв та ҫирӗм хут ҫуса тасатнӑ ӗнтӗ. Ҫавӑнпа эпир халӗ яп-яка пурнӑҫпа пурӑнатпӑр. Куртӑн пуль эпӗ ӑҫта ҫити улӑхса ларнине? Ҫӳлерех пӑхсан, тата картлашка нумай. Эсӗ, ачамккӑ, хӑв та темле начальникех пулас-ха. Ытла пит курӑмлӑ.

— Паллах, — мӑнкӑмӑллӑн хуравларӗ Шальзя. — Ӗмӗре кирпӗч шутласах ирттерместпӗр. Илтнӗ-и хӑҫан та пулин Кустӑрмари машинӑсем тӑвакан завод пирки?

— Илтмесӗр, ара, ҫӗршывӗпе паллӑ завод вӗт вӑл.

— Вӑт ҫавӑнта ӗҫлет те Хӗлип Хӗлиппович! Коммерческий директор! Епле янӑрать вырӑсла? Хамӑр ҫӗршыв коммерсанчӗсемпе кӑна мар, ют патшалӑхсенчи бизнесменсемпе ресторансенче сарӑлса ларать вӑл. Пӗтӗм пуянлӑх тенӗ пек унӑн алли витӗр тухать. Эсир ҫеҫ, анра-сурӑхсем, мана этемле кӗтсе илме шутламастӑр. Эпир те кирлӗ пулӑпӑр-ха хӑҫан та пулин. Ӑнлантӑн-и халь хӑв кампа калаҫнине?

Сорых тин пӗр япалана аса илчӗ. Ана пуҫлӑхӗ тахҫанах Кустӑрмана хӑвалатьҫке. Ҫӗнӗрен тунӑ ҫыхӑну узелӗ валли хатӗр-хӗтӗр ҫитмест. Сӑмах май вӑл ҫавӑн ҫинчен аса илтерчӗ ентешне.

— Тупнӑ калаҫмалли вак-тӗвекшӗн. Пыр, майлаштарса паратӑп. Маншӑн вӑл пӗрре сурмалӑх та ҫук.

Шальзяна кӗҫех ҫыхӑну узелӗн начальникӗ хапӑлласах йышӑнчӗ. Хӗлип Хӗлиппович отпускра хӑйӗн ӗмӗрӗнче пӗрремӗш хут улпутла канчӗ. Ҫӑмӑл автомашинӑпа ӑна Турихаса пырса илеҫҫӗ, каялла леҫсе хӑвараҫҫӗ. Ӗҫкӗрен ӗҫке, утартан кӳлӗ хӗррине кӑна ҫӳрет хаклӑ хӑна. Ялта пӗччен пурӑнакан амӑшӗ валли туххӑмрах виҫ-тӑватӑ ҫул ҫунтармалӑх вутӑ, пӳртлӗх йывӑҫ кӑларса пачӗҫ.

Яла таврӑннӑ чухне Шальзяна Пӑван станцийӗнче ула курак ҫеҫ кӗтсе илнӗ пулсан, отпускран ӑна пуҫлӑхсем парнесем парса, телейлӗ ҫул сунсах савӑнӑҫлӑн ӑсатса ячӗҫ. Хӑрӑк тӑраллӑ хурӑн ҫинчи кайӑк кранклатсан, пуйӑс тапранчӗ. Хӗлип Хӗлиппович алӑ сулчӗ:

— Сывӑ юл, тӑван Пӑван!

Тепӗр темиҫе уйӑхран Иван Иванович Сорых Кустӑрмана кайма пуҫтарӑнчӗ. Завод ҫыннисене парнелеме тесе, пӗр чӗрес пыл тата ытти шӑкӑр-макӑр хатӗрлерӗ, хулана телеграмма ҫаптарчӗ.

Кустӑрма Сорыха шавлӑн кӗтсе илчӗ. Анчах перрон ҫинче те, вокзалра та палланӑ ҫын курӑнмарӗ. Завода таксипе ҫитрӗ те вӑл кантура кӗчӗ, директорӑн снабжени енӗпе ӗҫлекен заместительне (урӑхла ӑна коммерци директорӗ, теҫҫӗ) шырама пуҫларӗ. Ун пӳлӗмне тупрӗ те хайхи алӑка шаккаса кӗчӗ. Ӑна хирӗҫ сӗтел хушшинчен чиперкке хӗрарӑм тухрӗ.

— Эсир ман пата-и? — куҫ айӗн пӑхса ыйтрӗ вӑл.

— Çук-ха, эпӗ Шальзя юлташа шыратӑп. Коммерци директорӗ кирлӗ мана. Эсир унӑн секретарӗ пуль-ха. Хӗлип Хӗлиппович хӑй ӑҫта-ши?

— Мӗнле Шальзя? Мӗнле Хӗлип Хӗлиппович? — тӗлӗнчӗ çамрӑк хӗрарӑм. — Мӗн ыйтупаччӗ эсир?

— Эпӗ, эпӗ... мӗн... Мана Шальзя юлташ çыхӑну узелӗ валли хатӗрсем тупса нама шантарначчӗ те... Мӗн, ӑна урӑх çӗре, çӳлерех куçарнӑ-им? Директора лартма хатӗрленеççӗ, тесе калаçатчӗ те...

— Такампа пӑтраштаратӑр пулӗ эсир, юлташӑм. Нимле Шальзя та ӗçлемен ман выранта. Коммерци директорӗ эпӗ пулатӑп. Каçарӑр, халӗ питӗ васкатӑп, аэропорта вӑхӑтра çитмелле. Тепӗр вунӑ кунран ман пата кӗме пултаратӑр, оборудовани валли заявка нур пулсан...

Пуçне кӑтӑрт-кӑтӑрт хыçса тӑрса юлчӗ варӑм коридорта Сорых. Ентешӗ хӑйне чике тӑршшӗ лартнине тин тавçӑрса илчӗ. Çапах вӑл ӑна курмасӑр киле кайма шутламарӗ, кадрсен пайӗнче унӑн хушаматне шыраттарса тупрӗ-тупрех. Шальзя нимӗйле инженер та, директор заместителӗ те мар иккен, хуралçӑра ӗçлет.

Урама тухсан Сорых хуйхӑрса пыратчӗ. Пуçа çӗклесе пӑхрӗ те шартах сикрӗ. Тимӗр карта леш енче, склад çумӗнче, чанккама Шальзя тӑра парать.

— Салам, униформа ултавçӑ! — шлепкине хывса сывлӑх сунчӗ Сорых.

— Салам, салам, элекçӗ! Ырӑ сунса кӗтсе илетпӗр, — пуçне пӗкрӗ Шальзя.

— Хӑмла шалчи пекех тӑратӑн эс, «коммерческий директор», — тарӑхнипе тутине пӑрса илчӗ Сорых. — Шалча Хӗлипӗн ачи шалчах пулнӑ-иç?

— Çаплах çав, улми йывӑççинчен аякках ӳкмест-мӗн, «хаклӑ тусӑм», Сурӑх Йӑванӗн ывӑлӗ те сурӑхах пулса çитӗннӗ, — лӗхлӗх кулчӗ Шальзя.

# ЯТЛӐ КӲМЕ

Хула влаçӗсем хӑйсене çырма хӗрне çӗр уйӑрса парсан, «Тимӗрбетон» тресчӗ унта харӑсах виçӗ çурт лартма йышӑнчӗ. Укçи-тенки те, хатӗр-хӗтӗрӗ те, маçтӑрӗсем те хӑйсен пулнӑран тӑхӑр хутлӑ «курупкасем» туххӑмрах пӗлӗтелле кармашрӗç. Çурчӗсене виçкӗтеслӗн вырнаçтарчӗç, варрине картиш майларӗç.

Çӗнӗ пӳрт уявӗ çитсен, строительсем, подъездсенчен ушкӑнӑнушкӑнӑн шавласа тухса, виçӗ кӗтеслӗ картишӗнче купӑспах саркаланса юрларӗç, карталансах ташларӗç. Вӗсем хушшинче çурт-йӗре хута ярас енӗпе ӗçлекен Авралов, экономика ыйтӑвӗсене тытса пыракан Перекетлев, йӑла-йӗркесемпе кадрсемшӗн хурав тытакан Фуфайкин, строительствӑпа кирлӗ япаласемпе тивӗçтерекен Майлашов, аслӑ бухгалтер Шайлашов, тӗп механик Носилкин, стройлаборатори хуçи Пахалаев, ӗçри хӑрушсӑрлӑх йӗркине сыхлакан Алурасов тата проектпа смета пайӗнчи кӗçӗн инженер Хуралов пулчӗç.

Тепӗр ирпе виҫӗ кӗтеслӗ картишне мотор сасси хупласа хучӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри килеҫҫӗ автомашинӑсем: йывӑррисем те, ҫӑмӑллисем те. Автокран, автовышка, самосвал кабинисене йӑрт та йӑрт кӗрсе ҫухалаҫҫӗ хӗрарӑмсемпе пӗчӗк ачасем. Чӳречерен пӑхса тӑракан Хуралов ӑнланчӗ: шоферсем арӑмӗсене ӗҫе, пепкисене яслисада ӑсатаҫҫӗ. Вӗсен ҫурчӗ умне те, акӑ, пӗр харӑс тенӗ пек, темиҫе ҫӑмӑл автомашина килсе чарӑнчӗ. Хура «Волга» Авралова лартса кайрӗ, шоколад тӗсли — Перекетлева, «Нива» текенни — Фуфайкина, «Рафик», — Майлашова, «Жигули» — Шайлашова, «УАЗик» — Носилкина, «Москвич» — Алурасова... Пахалаев вара «Строительство лабораторийӗ» тесе ҫырнӑ тӑрӑхларах хупӑ машинӑпа вӗҫтерчӗ.

Сакӑр ҫын сакӑр машинӑпа трест кантурӗ умне ҫитсе тӑнине Хуралов, паллах, кураймарӗ. Унӑн автобуспа ҫӳремелле те, ӗҫе ҫитиччен вӑхӑт ҫур сехете яхӑн пӗтет. Ҫапах та алӑ-ура ҫемӗстересси кулянтармасть-ха ӑна, урӑххи тӗлӗнтерет: ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫеҫ мар, канмалли кунсенче те хурт пекех йӑшӑлтатаҫҫӗ-ҫке ҫав автомашинӑсем картишӗнче. Хӑйсен урапасемпе усӑ курнӑ пекех усӑ кураҫҫӗ трестри хуҫасем ятлӑ кӳмесемпе.

Пӗр тунтикун Хураловӑн треста васкавлӑн ҫитмеллеччӗ. Ҫавӑнпа вӑл кампа та пулин ҫула май ҫакланса кайма шутларӗ. Картишне хӑпартланса тухрӗ. Анчах Авралов пуҫне ҫеҫ силлерӗ. Перекетлев ҫемйине таҫта лартса кайма пуҫтарӑннӑ. Фуфайкин хваттер ыйтӑвӗсемпе райсовета ҫул тытрӗ. Майлашов тепӗр еннелле алӑ сулса кӑтартрӗ. Ыттисем те ҫавнашкалах аяккалла пӑрӑнчӗҫ. Хураловӑн вара автобус чарӑнакан вырӑна ҫуранах танкӑшма тиврӗ. Кантур умне ҫитсен тӗлӗнсех кайрӗ вӑл — машинӑсем пурте кунта-мӗн. Пуртти-аврипех тыттарнӑ иккен вӗсен хуҫисем ӑна.

Ятлӑ кӳме хуҫисене Хуралов тек йӑлӑнма шутламарӗ, автобуспах ӗҫе канлӗн ҫӳрерӗ.

Кӗҫех халӑх тӗрӗслевҫисен суйлавӗ ҫитрӗ. Управленисенче, трест кантурӗнче пӗр харӑсах пулса иртрӗҫ вӗсем. Тӗрӗслевҫӗсен пӗрлехи пухӑвӗнче тӗп ушкӑна ертсе пыма никама та мар, Хуралова шанчӗҫ. Кӗтмен-туман ҫӗртен вӑл питӗ сумлӑ ӗҫе лекрӗ. Ӗҫӗ ӗнтӗ общеҫтвӑлла майпа туса пымаллискер-ха, вӑхӑт ҫунтармӑшӗ ҫеҫ. Ҫапах турткаланса тӑмарӗ Хуралов — тӳрех килӗшрӗ. Ушкӑн членӗсене пухса, ӗҫ планӗ ҫирӗплетрӗ, ӑна пурне те курӑнмалли вырӑна ҫапса хучӗ.

Ҫурт-йӗре вӑхӑтра хута яма мӗн чӑрмантарать? Строительсен йӑла ыйтӑвӗсене епле тивӗҫтереҫҫӗ? Стройкӑна кирпӗч, цемент, йывӑҫ вӑхӑтра килсе тӑрать-и? Мӗншӗн строительство хӑйхаклӑхӗ ӳссе пырать? Управленинче учетпа отчет ӗҫне ма хавшатнӑ? Ӗҫ пахалӑхӗ мӗнле сӑлтавсене пула чакать? Ӗҫри хӑрушсӑрлӑх правилисене мӗншӗн пӑхӑнмаҫҫӗ? Ҫур ҫул хушшинче ҫак тӗп ыйтусене шӗкӗлчемелле ӗнтӗ халӑх тӗрӗслевҫисен.

Нумай иртет-и вӑхӑт е сахал, пӗр ирпе, ӗҫе кайма тухсан, Авралов «Волга» алӑкне уҫрӗ те: «Тархасшӑн, Анатолий Яковлевич!» — тесе, ыйтӑн шӑлӗсене йӑлкӑштарса илчӗ. Хуралов ӑна, лешӗ малтан силленӗ пек, пуҫне ҫеҫ силлесе кӑтартрӗ. Ҫав вӑхӑтра Перекетлев та тухрӗ. Хуралова хапӑлласах пӗрле лартса кайма, каҫпа ресторан ҫумӗпе илсе килме шантарчӗ. Лешӗ килӗшмерӗ. Фуфайкин ӑна вырсарникун ҫемйипе канма чӗнчӗ. Майлашов дача майлаштарса пама пулчӗ. Шайлашов пӳрнисене укҫа шутланӑ пек туса кӑтартрӗ. Носилкинӑн ун валли халӗ машина кӑна мар, хӑватлӑ трактор таранах тупӑнать-мӗн. Пахалаев, кирлӗ пулсан,

чи чаплă строматериал тупма шантарать. Алурасов ăна кĕрĕкпе çăматă парнелесшĕн çунать...

Çук, ĕç тухмарĕ пĕрин те. Парăнмарĕ, чунне сутмарĕ тимĕр-бетон пек çирĕп Хуралов, тĕрĕслӳсене план тăрăхах вирлĕн ирттерсе пычĕ. Лекмеллине хытах лекрĕ. Иккĕмĕш çур çул планне тата тепĕр кирлĕ ыйту кĕртрĕ халăх тĕрĕслевçисен ушкăнĕн пуçлăхĕ: «Ятлă кӳмесем тата вĕсен тăкакĕсем».

Ирсерен Анатолий Яковлевич Хуралов хăйсен çурчĕ умĕнче ларакан пĕчĕк автобус патнеллеваскать. Унпа пĕрле шала Авралов, Перекетлев, Фуфайкин, Майлашов, Шайлашов, Носилкин, Пахалаев тата Алурасов кĕрсе лараççĕ. Ĕçс çӳреме тата ĕçрен таврăнма ĕнтĕ вĕсене стройтрест хуçи тинех пĕр кӳме уйарса панă — ятлă кӳме.

# ПĔЛЕС ПУЛАТЬ

Хывăх Мĕтрипе Тĕшĕ Макçăмĕ аслă шкултан пĕр вăхăталлах вĕренсе тухрĕç. Ĕçлеме вĕсене хăйсен районнех ячĕç.

Пуш параппан çапма, йăпăлтатма, икĕпитленме юратакан Хывăх Мĕтрийĕ тӳрех пуçлăхсем çумне сĕлĕхле çыпçăнчĕ. Çуллă чĕлхи пулăшнипе кĕске вăхăт хушшинчех пуçлăх пулса тăчĕ.

Тĕшĕ Макçăмĕ, Хывăх Мĕтрипе танлаштарсан, сăпайлăхĕпе те, ăсĕ-пуçĕпе те чылай малтаччĕ. Çавăнпах пуль ăна та пĕр вырăнтах лартмарĕç, хуравлăрах ĕçсем шанса пама пуçларĕç. Çапла майпа вĕсем Хывăх Мĕтрипе пĕр кантура лекрĕç.

Кĕç Хывăх Мĕтри пысăк пуçлăх портфельне ярса илчĕ. Тĕнчере хăйĕнчен ăслăрах çын çук тесе шутлакан Хывăх Мĕтрийĕ Тĕшĕ Макçăмĕн ĕçре палăракан таланчĕшĕн чĕрине ыраттарсах кĕвĕçме тытăнчĕ, ăна май килнĕ таранах ура хума, путара-путара пыма, авторитетне чакарма тăрăшрĕ.

Пĕррехинче Тĕшĕ Макçăмĕ планеркăна васкатчĕ. Йышăну пӳлĕмне ытти çынсем те пухăннăччĕ. Вĕсен хуçи тин çеç пĕлĕве ӳстермелли çĕртен вĕренсе таврăннăччĕ. Тĕшĕ Макçăмĕ ăна юриех ĕçе тухнă ятпа саламласа пăхма шутларĕ.

— Епле хăятăн эсĕ чи малтан алă памашкăн, — касса татрĕ Хывăх Мĕтрийĕ.

Халăх умĕнче нимлемарланнă Тĕшĕ Макçăмĕ аллине вутпа пĕçертнĕ пек каялла туртса илчĕ те часрах шăлавар кĕсйине чăмтарчĕ.

— Тархасшăн каçарăр куншăн, сывлăху мĕнли çинчен пĕлесшĕнччĕ тата, — çине тăрсах сăмахларĕ Тĕшĕ Макçăмĕ.

Хывăх Мĕтрийĕ тата хаяртараххăн пăхрĕ:

— Мĕнле хăятăн эсĕ пуçлăхпа чи малтан калаçма?!

Çакăн хыççăн Тĕшĕ Макçăмĕ Хывăх Мĕтрипе калаçма пăрахнăччĕ, хăй сывлăх сунсан тин сывлăх сунатчĕ. Çанталăк улшăннă май сасартăк Хывăх Мĕтрийĕ вырăнне Тĕшĕ Макçăмне лартмалла пулса тухрĕ.

Тĕшĕ Макçăмĕ çĕнĕ ĕçе васкатчĕ. Ăна хирĕç коридор тăрăх Хывăх Мĕтрийĕ тилĕ пек йăпшăнса çывхарчĕ.

— Çĕнĕ вырăнпа саламлатăп сире...

— Чи малтан камăн алă тытмаллине пĕлес пулать. Епле хăятăр эсир пуçлăхпа чи малтан калаçма, — хăй сăмахĕсене аса илтерсе шӳтлерĕ Тĕшĕ Макçăмĕ.

Кантурта ĕçлекенсем кăмăллăн кулса ячĕç.

# САМАВАР ТУСĔ

Çырма-çатраллă, йывăç-курăклă Ухкассинчи Çĕраллă Павăлĕ хăй камăлĕн алăкĕ çине нихçан та çăра çакман. Пур çынпа та ырă вăл. Ĕмĕрĕнче никама усал сăмах каласа курман пуль. Лутакаскер, тăлпан кĕлеткеллĕскер, каска пуканĕ пек çирĕп ларать урапа-çуна çинче. Павăл ферма выльăхĕсем валли апат турттарать. Лашапа çӳренĕ май ĕçкĕ-çикĕ тупăнсах пырать уншăн. Камăнне те пулин пахча сухалать-и, кама та пулин утă-улăм кĕртсе парать-и — пур çĕрте те ăна тулли курка тыттараççĕ. Çав куркапах вăл хушаматне те тупнă. «Пĕвĕм те ман çĕр аллă сантиметр çеç, ĕçес хам çӳллĕш, çĕр аллă грамм маншăн сывлăх норми кăна, урăх ан пусахлăр», — тет те вăл, мĕн панине куç хупмасăрах янклаттарать. Урăх вара, çапса пăрахсан та, пĕр тумлам ĕçтерейместĕн. Праçниксенче те çавнашкалах хăтланать Павăл. Ытлашши ӳсĕрĕлнине, йăванса выртнине ăна ялта куракан пулман. Хăшин-пĕрин арăмĕсем упăшкисене, упăшкисем арăмĕсене: вăт çав Çĕраллă Павăлĕ пек ĕçме вĕренмелле, тесе тăн панине вара час-часах илтме пулать.

Çĕраллă Павăлĕ праçниксене ĕçкĕ-çикĕсĕр ирттермест. Килĕнче ахаль чухне те унăн ĕçмелли мĕн те пулин ялапах тупăнать. Ферма пуçлăхĕ, зоотехник, ветеринари врачĕ, бригадир ун патĕнчен тухма пĕлмеççĕ. Павăла вĕсем пĕрмай мĕн те пулин майлаштарса пама пулаççĕ. Ĕçне тума патне çитсен çеç хăйсенчен нимĕн те тухмасть. Пурпĕр вĕсене çывăх тусĕсем вырăнне хурать вăл. Ара, епле килпетлĕ çынсемпе ваç-ваç пурăнать те... Вĕсене пула хăйĕн ĕлĕкхи юлташне, вăкăрсем самăртакан Тип Титне те, манăçа хăварчĕ Павăл. Сăра-эрех таврашне тута патне яман Тит вĕсемшĕн, чăн та, ют пек ĕнтĕ. Чей ĕçекен çынпа юнашар ларса намăс кураççĕ-и ĕçкĕçсем?

Пĕррехинче Павăл менелник турĕ. Унта Тит та пычĕ, тусне çапçутă сăмавар парнелерĕ. «Кĕрекийĕ тулăх пултăр, чейĕ вĕресех лартăр, хăнийĕ пырсах тăтăр», — терĕ вăл, йăл-йăл кулса.

Хăни-вĕрли ĕнтĕ Павалăн таталмарĕ, хушăнсах пычĕ. Арăмĕ вĕсене пула ĕçе те çӳреми пулчĕ. Майĕпен хăй те ĕçке ярăнчĕ. Упăшкин «сывлăх нормийĕнчен» те иртме пуçларĕ, ĕçкĕçсен нормине кусрĕ. Ĕçет те сывăрать, ĕçет те сывăрать. Ĕнтĕ Павалăн хăйĕн яшка пĕçерме, ĕне сума, ача пăхма, кĕпе-йĕм çума черет çитрĕ. Леш тусĕсемпĕн пулсан... Кĕпĕрленсе килеççĕ те кун кунлаççĕ, тепĕр чух ирчченех сĕмленсе лараççĕ. Хӳтерме хăрать. Аван та мар тата хăйĕнчен пысăкрах ĕçре ĕçлекенсене кӳрентерменкĕн. Павăла вĕсем сăмаххипе алă çинче çĕклесе çӳреме хатĕр-çке. Çапах йăлахтарсах çитерчĕç вĕсем ăна. «Мĕн тумалла? Мĕнле хăпмалла

кусенчен? Мĕнле çăлса хăвармалла арăма?» — păраларĕç ун пуçне шухăшсем.

Пĕррехинче вăл, чăлана тухсан, тимрен такăнса стена çумне çапăнчĕ те çамкине мăкăль кăларчĕ. Ури айне пулнă япалана çĕкленĕ май хĕпĕртенипе унăн ыратни те таçта кайса кĕчĕ. Ун аллинче — Тип Тичĕ темиçе çул каялла менелникре парнеленĕ сăмавар! Тусан пуснă парнене пӳрте илсе кĕрсе тасатрĕ, çурĕ, шыв ярса вĕретме лартрĕ. Павăл чей хатĕрленĕ çĕрелле туссем, çамкисене тытса, ахлата-ахлата кăпăртаттарса та çитрĕç. Вĕсене хирĕç Павăл арăмĕ те пӳлĕмрен анаслакаласа тухрĕ. Кил хуçи пурне те сĕтел хушшине чĕнчĕ, сар çип утинчен хатĕрленĕ чей ĕçме сĕнчĕ.

— Эс ан кул-ха, ларт кăларса мĕн пуррине! — хушрĕ ферма пуçлăхĕ.

— Тип Тит чирĕпе чирлемерĕн пуль те? — кулса ячĕ ветеринар.

— Эпир камне мантăн-им? — асăрхаттарчĕ бригадир.

— Манман, — тавăрчĕ ăна Çĕраллă Павăлĕ, тăпсакай алăкне уçма пуçланă арăмне хулĕнчен çатăрласа тытса, — леш тĕнчере те манас çук-ха эпĕ сире. Маншăн эсир — ылтăнран хаклă. Сирĕншĕн пирĕн кĕреке яланах уçă. Анчах та малашне сĕтел çинче ак çак сăмавар çеç саркаланса ларĕ.

Кăмăлсăррăн тухса кайрĕç хăнасем. Пĕтнĕкрен-и, çака чечекĕнчен-и, катăркаспа шăланран-и хатĕрлерĕ вăл чейне, кашнинчех тусĕсене хăнана чĕнчĕ. Анчах чей ĕçкине нихăш те пымарĕ. Хăпмаллипех хăпрĕç вĕсем унран. Уçă чунлă Павăл тинех уççăн сывласа ячĕ вара.

Чылай вăхăтран, Çĕраллă Павăлĕн ĕçкĕ тусĕсем масар еннелле пăхма тытăнсан, чейпе туслă Тип Тичĕ ферма пуçлăхĕ пулса тăчĕ. Павăл ăна тӳрех хăнана чĕнчĕ. Сĕтел варринче пăсланса ларакан сăмавара курсанах Тит ăшпăн кулса ячĕ. Çĕраллă Павăлĕ тусне кĕрекене лартрĕ, куркасене чей тултарчĕ. Арăмĕ çав хушăра кĕтеслĕ стакана эрех ячĕ те «хăвăн нормуна ĕç» тесе упăшкине тыттарчĕ.

— Эх, — терĕ Çĕраллă Павăлĕ, стакана аяккалла тĕртсе, — çĕр аллă грама эпĕ сывлăх норми теттĕмччĕ. Йăнăшнă иккен. сывлăх норми мар, сывлăх мурĕ пулнă вăл. Çав путсĕре ăша яман пулсан, пĕвер те ыратас çукчĕ халь. Итлемерĕм сана, Тит тусăм, кӳрентертĕм, каçар мана, ухмаха. Пирĕншĕн сывлăх норми вăл — ак çак тутлă чей иккен. Ĕçер тар тухиччен.

Тип Тичĕ, тусĕпе килĕшсе, кăмăллăн пуçне сĕлтрĕ. Çĕраллă Павăлĕ мĕнле шĕвек чи усăллине те, хăйĕн чи çывăх та шанчăклă тусĕ кам пулнине тин чун-чĕрипе туйса илчĕ.

# ÇАВРА ÇĂКĂР ЙĂХĔН УЯВĔ

Тахçанах ĕнтĕ Пулайкассинче çимĕк вăхăтнелле акатуй ирттерессĕ. Çурхи уява тавраш ял халăхĕ чан çапса чĕннĕ пек карр!

пухăнать. Хурăнлăха вара этем савăнăçĕ тулать. Каравай Хĕветучĕпе карчăкки, Кулине, çав ырă саманта пĕр çул та сиктерсе хăвармаççĕ. Акă, халĕ те вĕсем капăр тумпала ката патнелле васкамасăр утрĕç.

— Астăватăн-и, Хĕветут, çак вăрмана лартнине? — куç айĕн пăхса сăмах пуçарчĕ карчăкĕ.

Хĕветут кĕреçе сухалне якатса илчĕ те, курпунтарах кĕлеткине тÿрлетсе:

— Астумасăр, ара, Кулине, астумасăр. Аллă çул кашлать çак хурăнлăх! Хамăр лартнă вăрман!

— Эп сана маннă пуль тесе, Хĕветутăм, — каллех тем шахвăртрĕ карчăкĕ. — Хăйăр хушшинче ылтăн пĕрчи те юлнă иккен санăн...

Аптăранипе Хĕветут мăйăхне икĕ енчен те пĕтĕрсе пăхрĕ, карчăкĕн çăлтăр пек куçне асăрхарĕ те:

— Ак тамаша! Авланни аллă çул çитрĕ! — терĕ.

— Сан çитрĕ пулсан, ман та аллă çул çитрĕ качча кайни. Çур ĕмĕр пурăнатпăр вĕт иксĕмĕр, старикĕм. Аса ил-ха, мĕн каланăччĕ эсĕ ун чухне?

Каравай пуçне тытса утрĕ, тахçанхине аса илчĕ.

Çирĕмри хĕрпе каччăччĕ вĕсем ун чухне. Хĕветут колхоз председателĕччĕ, Кулине комсомолецсене ертсе пыратчĕ. Ашшĕпе амăшĕ вĕсене май уйăхĕнче туй кĕрлеттерсе пачĕç. Тепĕр кунне Кулине ял çамрăкĕсене воскресника илсе тухрĕ. Тăван республика вунпилĕк çул тултарнă ятпа вĕсем ун чухне ял çумне хурăнсем лартса хăварчĕç. Çамрăк мăшăр ятран пĕр шăтăка икĕ йывăç лартрĕ. Çавăн чухне Хĕветут Кулинене çапла каланăччĕ: «Эпĕ сана туйра ылтăн çĕрĕ параймарăм, ылтăн туйра, çак хурăнсем çумĕнче, парнелейĕп-ши, тулĕк унччен... пуйсан».

Хĕрÿ ĕçре, шавлă пурнăçра сăмах хыççăнах тар ăшне путнă пуль. Ылтăн çĕрĕ шухăшĕ пулман вăл вăхăтра. Чухăн хресчен çемйинче ÿснĕ Хĕветут колхозпа пĕрле ура сырнă, çын ĕретлĕ тумланнă, тулăх пурнăç юрри юрланă. Мăшăрĕпе лартнă йывăçсем çÿлелле çĕкленнине пăхса савăннă.

Йăла тăрăх ĕнтĕ унăн авланни пилĕк çул çитсен арăмне, йывăç туй ячĕпе, йывăç кашăк-чашăкпа сĕтел-пукан парнелемеллеччĕ. Вăл Кулинене çĕнĕ пÿрте кĕртсе ярса хĕпĕртеттерчĕ. Вунă çултан вĕсен чечек туйĕ пулмаллаччĕ. 1945 çулхи майра вăл яла Çĕнтерÿпе таврăннăччĕ. Вĕсене тусĕсемпе юлташĕсем, тăванĕсемпе хурăнташĕсем чăннипех чечек парнелерĕç.

Кçе кÿлĕннĕ хастар çынсем хăйсен кĕмĕл туйне паллă тума та маннă. Тивĕçлĕ канура та алă усса ларман. Ача-пăча ÿстернĕ, мăнукĕсене пăхнă. Вăхăт иртнине те сисмен. Ылтăн туй персе çитнине те тин кăна курнă, авă, карчăкĕ. Кулине упăшкине сăнать те ăшшăн кулать, чеен пăхать те пуçне пăркалать.

Акă, Хĕветут ăна хулĕнчен тытса чăти универмага илсе кĕрсе кайрĕ, сутуçа икĕ ылтăн çĕрĕ суйлаттарчĕ.

Хăйсен хурăнĕсем патне çитсен, Хĕветут карчăккин пÿрнине, Кулине старикки пÿрнине çĕрĕ тăхăнтарса ячĕç.

— Ылтăн çĕрĕпе йăлкăшса çÿремелĕх пуйрăмăр, карчăкăм. Пумай кĕттертĕм сана, çапах та сăмахăма тытрăм, — терĕ Каравай, карчăккин ытарлă куçĕнчен тинкерсе.

Ял çумĕнчи хурăнлăхра акатуй кĕрлет. Капăр халăх çурхи ушва чаплăн паллă тăвать. «Шурăмпуç» колхоз ĕçченĕсем çав куна мĕнле пысăк парне хатĕрлени çинчен председатель хавхаланса калать. Пилĕкçуллăхра çĕршыва мĕн-мĕн сутмаллине пур енĕпе те

ирттерсе тултарнă. Хуçалăх республика юбилейне пысăк çитĕнӳпе, çĕнтерӳпе кĕтсе илет. Сав çĕнтерӳ ялавне çĕклеме пулăшнă çынсем хушшинче вăл Каравай Хĕветучĕпе Кулинене те асăнчĕ.

— Караваевсем нумайăн колхозра, çур ял ытла, — терĕ председатель. — Пурте вĕсем ял ятне çĕклеççĕ, хăйсен хастарлăхĕпе пире хăпартлантараççĕ. Çавăнпа паянхи куна Çавра çăкăр йăхĕн уявĕ теме те пулать. Халĕ сцена çине...

— Хĕветут, пире чĕнеççĕ вĕт унта, — кăлт тĕртрĕ айккинчен стариккине карчăкĕ.

— Чăн та, атя, ут, — терĕ малалла ярса пуснă май Каравай.

Председатель ватăсене ылтăн туй ячĕпе саламларĕ, çирĕп сывлăх, ăнăçу сунчĕ, хаклă парнесем пачĕ.

— Паян пирĕн ака туйĕ кăна мар, Караваевсен ылтăн туйĕ те. Пĕрле, эртелпе уявлар ăна. Йӳçĕ!

Каравай Хĕветучĕпе карчăкĕ пичĕсене пĕр-пĕрин патнелле сывхартрĕç.

# САВА САВВИ САВАЛАТЬ

Çăкалăх çумĕнче уй куçĕнчен пытанса ларакан Савкка ялĕнчи çынсем савккаллă кĕреçе туса сутсах чапа тухман. Тырпулне те кӳршĕсенчен кая мар ӳстернĕ, выльăх-чĕрлĕхне те никамран начар самăртман. Типçырма ураменчи Савали çеç колхоз ĕçне юратсах каймастчĕ, вăрăм укçашăн çунатчĕ. Сава суттипе аппаланнă вăхăтрах вăл платникре те çӳретчĕ. Халăхра Сава Савали ят ахальтен тухман пуль çав.

Арăмĕ висĕ хĕр хыççăн ывăл çуратса парсан Савали, хама пулăшакан тинех тупăнчĕ тесе, хăйне майлă саваннă, ачине хăйĕн хушамачĕпе пĕр янăравлă ят тупса панă: Савва. Ăна вара пĕчĕклех сава аври тытма вĕрентсе пынă. Анчах Савва сава туртса хул вăйне пĕтерме килĕшмен, ӳсерехпе килĕнчен те тухса кайнă. Тĕнче касса çӳренĕ-çӳренĕ те вăл çуралнă çĕршывнех таврăннă, тулĕк ĕçе Савккана мар, çывăхри Савăл хулине вырнаçнă.

Савăлра пурăнакансенчен чылайăшĕ савăл заводĕнче ĕçлет. Заводĕ вĕсен сарăлсах пырать, çавна май хули те ӳсет. Мăн хулара, паллах, çĕр тĕрлĕ кантур пур. Сава Савви майлашăнса культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекенсем хушшине савалла хĕсĕнсе кĕчĕ.

Вăтам пӳллĕ, лапчăк питлĕ, курпунтарах сăмсаллă, кушак куçлĕ, сайра çӳçлĕ Сава Савви сарлака тутя-çаварне чалăштарсах халăх умне тухать. Япшар та çуллă чĕлхипе вăл такам умĕнче ырă пулма та, хăйне хăй çиччĕмĕш пĕлĕте çити хăпартса яма та пултарать. Пухусемпе канашлусенче ун сасси çеç чан çапнă пек янăрать: «Халăх интересĕсемшĕн кĕрешмелле! Обществари усăлла ĕçшĕн вăй-хала та, вăхăта та шеллемелле мар!»

Активлă çынна пуçлăхсем часах асăрхарĕç, ăна тĕрлĕрен еç шанса пама пуçларĕç. Шывра путакансене çăлакан обществан вы-

рănти организацине пулăшма ярас тенине илтсенех вăл шӳтлесе илчĕ: «Хыт саваласан, сава та мăкалать, çĕççине хăйрама хăйра кирлĕ, хăйрине туянма...» Каласа пĕтерме памарĕç ăна, урăх хушаматпа ĕçе илсе те ячĕç.

Çутçанталăка сыхлакансен обществин ĕçне хутшăннашăн та, халăх дружинисен штабĕнче тăнăшăн та темле хутсемпе укçа илет вăл. Культурăпа архитектура палăкĕсене сыхлакансен, кĕнеке юратакансен, халăх хушшине пĕлӳ саракансен, физкультурăпа спорта аталантаракансен «чи активлă активисчĕ» шутланать Сава Савви. Йăпăхнă улăхри катка тĕмисем пекех шăкăри курăнаççĕ ун куçне укçа куписем. Ашшĕ вĕрентнине аса илсе, вăл вĕсене кула-кулах савалать, саваран тухакан ылтăн турпас ун умне купаланать. Хăй пĕрмай хăнахна пĕр юрра ĕнерет: «Эпĕ халăхшăн, пурнăç аталанăвĕшĕн чуна пама хатĕр!»

«Активиста» мухтав хучĕсемпе премисем, парнесем парса тултарчĕç. Культурăпа архитектура палăкĕсене сыхлакансем, кун пекех тăрăшсан, палăк лартма та шантарнă, тет.

Ниçта ĕретлĕ-путлĕ ĕçлемесĕрех çапла майпа чапа тухрĕ Сава Савви. Халăх тĕрĕслевçисем савăл заводĕнче «вилĕ чунсем» савăл туса каларнине пĕлни ĕç-пуçа пĕтерсе хучĕ. Çав «вилĕ чунсем» хушшинче Сава Савви те пулнă-çке. Хаяр тĕрĕслевçĕсем халăх дружинисен штабĕнче, шыва путакансене çăлакансем патĕнче тата ытти обществăлла организацисенче те финанс йĕркине пăснине палăртнă. Сава Саввин суя хушамачĕсем пĕрин хыççăн тепри çиеле тухрĕç. Çапла унăн «йывăр кутамккисем» майĕпенех пушанчĕç.

Пуш кутамкка йăтса çӳреме çуралман-ха Сава Савви. Кун хыççăн та тӳрех чееленме пуçларĕ вăл. Нихçан нимле чирпе чирлесе курманскер, măйлама та пăйлама тытăнчĕ. Пуç та кашлать иккен унăн, чĕри те сикет, нерви те вырăнта мар, урине те шăнăр туртать. Яшпар чĕлхи ĕнтĕ урăх юрă юрлать: «Сывлăха çирĕплетмешкĕн вăхăт кирлĕ, унсăрăн эпĕ малашне халăх интересĕсемшĕн кĕрешме пултараймастăп».

Ĕненеççĕ Сава Саввине, хĕрхенсе обществăлла ĕçсенчен хăтараççĕ. Вăл уншăн кĕпĕртет. Савали ачи ăçта мĕнле укçа купи мăкăрăлса тăнине витĕрех курать, хыткан та вăрăм аллине унталла кăнтарать. Акă вăл каллех тупăшлă ĕçсене вырнаçать. Савăл заводĕн Савккари выльăх-чĕрлĕх фермине «сыхлать», кану çуртĕнче хуралта тăрать, общежитире, клубра культура ĕçне йĕркелекен шутланать...

Сава Савви савалать, ашшĕ вĕрентнĕ пекех якатать пирĕн хушăра мăкăрăлса тăракан ытлашши купасене, савинчен ылтăн турпас явăнтарса сирпĕтет.

# ÇУМКУРĂК

Ку тăрăхри Панулмикасси вăтам ял шутланать. Шăнкăршыв улăхĕ тăрăх ларса тухнă ялсенчен вăл тахçантанпах пĕр илемлĕхĕпе уйрăлса тăратчĕ. Сулахай çыран енче вĕсен тăршшипе-тăршшипе улма-çырла еçеретчĕ. Улăхалла çĕре çурса анакан çырмасене картласа пĕвеленĕ пĕвесенче пулă вылятчĕ. Çурхи тĕнче чĕрĕлнĕ чух шап-шурă тум тăхăнакан сада пăхса тăранма çукчĕ. Кĕр мăнтăрĕнче улма йывăççи, улми тулăх пулнăран, юрăри пекех авăнатчĕ. Панулмикасси çыннисем çĕр çимĕçĕпе савăнатчĕç, ăна патшалăха сутса тупăшне те куратчĕç.

Улма-çырлапа кăна пуян пулман панулмикассисем. Тырри-пулли кĕлет урайĕ авăнмаллаччĕ, выльăх-чĕрлĕхĕ улăха шăнăçаймастчĕ вĕсен. Тавралăх тăри юррипе тăрăлтатса тăнăран-ши, тулли пучах тарлă çĕр çинче çеç ăнса пулнине ăнланса-ши, вĕсем хăйсен эртеллешсе йĕркеленĕ хуçалăхне те «Ĕçлеĕçлеçи» ят пама ăнкарнă. Çак хуçалăха вăтăр çула яхăнах Тŭпе Лексантăрĕ, малашлăха ăслă куçпа пăхса, çирĕп алăра тытса тăчĕ.

Ял çыннисене телей çăлтăрĕ тытма пулăшнă çак ырă этем çут тĕнчерен уйрăлсан нумаях та вăхăт иртмерĕ, «Ĕçлеĕçлеçи» колхоз тăп чарăнса тăчĕ. Унтан вăл, малалла каяс вырăнне, рак пекех каялла чака пуçларĕ. Йывăр лава туртайман пуçлăхсем пĕрин хыççăн тепри улшăнса тăчĕç. Пуçлăхсем те тата ытла пĕр йышшисем тупăнчĕç-çке. Тŭпе Лексантăрĕ хыççăнхи председатель Хурхух Пурхили фермăра чăх вити тумалли йывăçран виçĕ пура пураттарса сутрĕ. Унтан Шурут Шуркки улăх утине таçта мура ярăнтарчĕ. Хупах Хумми правленире хупах уçрĕ. Кикен Миньки чикансене сŭре юсаттарса колхоза кивçене кĕртрĕ...

Лĕп çумăр хыççăн тапса тухакан çумкурăк пек туйăна пуçларĕç ку пуçлăхсем. Сиплĕ тăпрара ŭсентăран епле парка ŭсет, кусем те, колхоз туприне тарăн тымар янăскерсем, шŭмеллипех шŭрĕç. Вĕсене кура бригадирĕсемпе ферма хуçисем те аташсах кайрĕç. Ял халăхĕ хурхухсемпе хупахсене майĕпен çăмласа тасатма пуçланăччĕ çеç...

Ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри усăлла-усăсăр улшăнусем вăхăтĕнче вĕсен колхозĕнчен совхоз турĕç те хучĕç. Хуçалăха «Улмапахчаçимĕç» пĕрлешŭ çумне тĕкрĕç. Ял халăхĕ ĕнтĕ халĕ хуçалăх пуçлăхне суйламасть, çŭлтен кама лартаççĕ, çавăнпа килĕшес пулать унăн.

Директор пŭлĕмне Талпиçен Танли кĕшĕртетсе кĕрсе ларсан, пурте ахлатса ячĕç. Ара ăна, зоотехникра ĕçлекеленĕ вăхăтра сысна çурисем сутса улталанăшăн, Тŭпе Лексантăрĕ «эс яла урăх килсе ан кĕр» тесех курăнми пуличчен ăсатса янăччĕ вĕт! Акă, халĕ вăл тăван Панулмикассине совхоз пуçлăхĕ пулса таврăнчĕ.

Юлса пыракан хуçалăх хăйсен ĕнси çинчен татăлса аннăшăн района ертсе пыракансем тем пекех савăннă пуль. Тинех вĕсем уншăн хумханса чĕрисене хавшатмаççĕ ĕнтĕ, ытлашши шухăшлама та пăрахаççĕ. Ара, совхозри ĕçсемшĕн пĕтĕмпех хуравлă мар-çке. Пĕрлешŭ кантурĕ питĕ аякра, пĕлĕте çити сиксе пăхсан та курăнас çук.

Талпиçен Танли çакна тŭрех сиссе-туйса илнĕ пулас, çĕнĕ пукан

çине хăпарса ларнă-ларман хăй пĕлнĕ пек хăтланма тытăнчĕ. Чи малтан хăйне валли совхоз вăйĕпе кермен пек пӳрт ларттарчĕ, Шăнкăршыв леш енчи варманта канмалли вырăн майлаштарчĕ. Хуçалăх ĕçĕпе е тĕрĕслеме килекенсене вăл унта çеç йышăнать. Выльăхчĕрлĕх витисем тайăлни те, уйра тырă вырăнне анраçарăк кашласа ӳсни те, ĕçлеме майсем çуккишĕн ялтан çамрăксем пăрахса кайни те хумхантармасть ăна. Унччен аллă гектара капашакан улмаçырла пахчинче те аллă йывăçран ытла юлман ĕнтĕ. Совхоз унта ячĕшĕн темиçе йăран хăяр, помидор, кишĕр ӳстеркелет. «Улмапахчаçимĕç» пĕрлешĕвĕн ятарлă хуçалăхĕ-çке вăл.

Пĕрлешӳрен те, районтан та ятарлă пулăшу текенни çеç килмест «Ĕçлеĕçлеçи» совхоза. Шăнкăршыв улăхĕнче кăткă тĕми шăкăри ӳссе ларчĕ, çаран пĕтрĕ. Сулахай çыранри улма-çырла пахчипе çумкурăкĕ пусрĕ. Пĕтĕм уя хупласа илнĕ ĕнтĕ ку çумкурăкĕ. Фермăсен картишĕнче, механизаторсен паркĕнче, клуб таврашĕнче, дирекци кантурĕ çумĕнче кашлать вăл. Варринче Талпиçен сарăлса ларать. Ял çыннисен сăмахĕ çитмест ун патне — вăл хăлхасăр. Ял çыннисен алли тĕкĕнмест ăна — вăл чикет.

Тăри юрри те илтĕнсех каймасть халĕ унччен тĕлĕнмелле ешернĕ сад пахчипе пуян уй-хирте. Ун вырăнне сылтăм çыранри вăрман енчен урмăш сасă хăлхана пырса кĕрет. Талпиçен Танли «çăтмах пахчинче» пысăк сăлтав ячĕпе каçхи апат ирттерет-мĕн. Пĕрлешӳри специалистсем «Ĕçлеĕçлеçи» совхозра çумкурăк-çимĕç ятлă çĕнĕ сорт тĕрĕслемелли сăнав участокĕ уçма хатĕрленеççĕ иккен.

Пулĕ, тем хăтланакан та тупăнĕ. Капла Панулмикассинчен малашне Çумкурăккасси ялĕ те пулса кайĕ. Çĕнĕ ят пама çĕнĕлле ĕçлессинчен çăмăлрах-çке. Çумкурăк ӳстерме вăй кирлĕ мар.

# ВĔТĔ ЮРТĂ

Чулкасра пурăнакан Митрухха Митрахванĕ хĕрĕх урлă каçнă тĕлелле хăйĕн кĕлеткине хăй те паллайми пулса çитрĕ. Тĕкĕр çине пăха-пăха тĕлĕнет. Каччă чухне икĕ шитпе ункăланакан пилĕкĕ ал арманĕ пек сарăлчĕ. Кăкăрĕсем ывăçа кĕми пулчĕç. Янах айне ӳссе ларнă аш татăкĕ лăстăр-лăстăр силленет. Пуç тирĕ те хулăнланчĕ пулас — пысăкрах шлепке туянса ячĕ. Тумтир пĕчĕкленсе юлнипе аптăрарĕ Митрахван. Арăмĕ ĕçленĕ çĕре çĕнĕ çул кĕтсе илме каймаллаччĕ — юрăхлă костюм шыраса лавккасем тăрăх чупса хăшкăлчĕ.

Тулли хĕрарăм майлăрах пăркаланса утаканскер, вăл автобус чарăнакан вырăна çитиччченех, пăшти-пăшти сывлакан пулчĕ. Ĕçе çитсен, кунĕпех пăлавар çĕтсе ларать Митрухха Митрахванĕ. Ăшă пӳлĕмре шут шăрçи шаклаттарса тарлать. Кантуртан автобуспа таврăнать те хваттере чăмать, çемçе диван çине майланса выртать, пит-куçне хаçатпа хуплать. Арăмĕ пĕçернĕ апата какăриччен çаварттарнă, çур чейник чей мехленĕ хыççăн вăл çемçе пукан çине месерле кайса ӳкет, телевизорпа каçса кайсах спорт вăййисем курать. «Активлă кану» вуннă-вунпĕрсенче вĕçленет. «Ĕшенне» Мит-

рахван часрах тӳшек ҫине лаплатать те минтере ыталать. Ҫывӑрмалли пӳлӗме кӗҫех пушӑлла ӗҫлекен трактор моторӗн шавӗ пек сасӑ тулать.

Пӗр хускалмасӑр ҫывӑракан упӑшкине вӑратмасӑрах арӑмӗ ирпе анасласа тӑрать те, спорт тумтирне тӑхӑнса, урама сиксе тухать. Ҫывӑхри вӑрман сукмакӗ тӑрӑх вӗтӗ-вӗтӗ юртӑпа чупса чунне кантарать. Кашни кун ҫапла икӗ-виҫӗ ҫухрӑм тӑвать вӑл, ун хыҫҫӑн хул-ҫурӑмне ҫемӗҫтерет, лӗп шывра чӳхенет. Утиял айӗнчен вӑрттӑн сӑнаса выртакан упӑшки арӑмӗн шӑратнӑ евӗр илемлӗ кӗлеткипе киленет.

Арӑмӗ ӑна хӑҫантанпа ӗнтӗ пӗрле чупма сӗнет, заводри сывлӑхшӑн ҫунакансен ушкӑнне чӗнет. Вӑл пур кахал чулне виепле те хӑй ҫинчен сирсе переймест, ӗҫе кайса килет те выртать, ҫиет те выртать. Пӗтӗм утӑмне шутласан та унӑн кунне пӗр ҫухрӑм тухмасть пуль. Ӗҫри ӗҫкӗ пӗтерет тата ӑна, мухмӑрпа каккуй чупма унта, пуҫа ҫӗклес килмест. Канӑҫ пурнӑҫ хӳми хыҫӗнче хӑйне мӗнле чир-чӗр сыхласа тӑнине те туймасть-ха вӑл.

Пурӑна киле унӑн арӑмӗ каҫалапа та уҫӑлса ҫӳреме, чупма пуҫларӗ. Арӑмӗ упӑшкине хӑйпе пӗрле тухма ӳкӗтлесех чӗнчӗ-ха. Митрахван, футбол е хоккей курса выртмалла тесе, хӑтӑлкаласа юлчӗ унран. Уҫӑ кӑмӑлпа хӗвел пек ҫиҫсе таврӑнакан арӑмне ӑшшӑн пӑхма та самантлӑх вӑхӑт тупӑнмарӗ шереметӗн.

Пӗррехинче ун патне тахҫанхи тусӗ килсе кӗчӗ, сӗтел ҫине эрех кӗленчи кӑларса лартрӗ. «Хуйха ҫуса тасатар-ха», — терӗ хӑй, ассӑн сывласа. «Арӑму ӑҫта тата?» — ыйтрӗ вӑл ларсан-ларсан. «Чупать-ха», — ним пулман пекех хуравларӗ кил хуҫи, черккене ӳпӗнтернӗ май. «Хэ-хэ, чупать апла, — чеен кулса ячӗ хӑна. — Чупать... Чылайранпа-и?» «Виҫӗмҫултанпах», — ҫӑварне хӑяр та-

такĕ персе хыпрĕ вăл. «Чупкăнран мĕнле таврăнать?» «Ох, курасчĕ сан, унтан вăл хĕр чухнехи пек хĕп-хĕрлĕ сăн-пите. çăмăл шамшакпа, çунатлă кăмăлпа килет. Ман арăм-çке вăл, о-ох! Ăçта пурши унашкал чиперкке? Сан хăвăн та чапламчĕ-ха арăму. Ман арăм пек чупмасть-и-ха? Чупмасть пулсан, уписательнă чуптар. Кĕлетке илемлĕхне сыхласа хăвармаллах хĕрарăмăн». «Эх, тусăм, — ыталаса илчĕ лешĕ кил хуçине. — Çуккă çав халь ман арăм, çуккă. Вăл та сан арăму пекех чупрĕ-çке. Эпĕ те санашкал çапла диван çинче аяк пĕрчи якатса выртрăм. Вăл, сывлăх çирĕплететĕп тесе. пĕрмаях вĕттĕн юртрĕ. Юртрĕ-юртрĕ те, сукмак çинче тепĕр чупкăн тупрĕ, унпа ытакланса ĕрĕхрĕ, ман енне урăх çаврăнса та пăхмарĕ. Эх, ма пĕрле чупмарăм-ши, ма ларса-выртса самăрălса кайрăм-ши. Мĕн тăвас халь? Чĕре çурăлса тухать. Ăшра вут çунать. Асту, хăвăн арăму такампа...»

Тусне каласа пĕтерме памарĕ Митрахван, пружина тапса янă пек чалт! сиксе тăчĕ те чӳрече патнелле ыткăнчĕ. Урамра йытă уçăлтарма тухнă карчăкпа стариксĕр пуçне никама та курмарĕ вăл.

Тусĕ тухса кайичченех унăн ăш вăрка пуçларĕ. Куçĕ умне тем тĕрлĕ ӳкерчĕксем туха-туха тăчĕç. Алăкран кĕрсе тăнă арăмĕ: «Эх, мĕн тери лайăх!» — тесессĕн вăл ун çине сивĕ куçĕпе пăхса илчĕ те телевизор еннелле туххăм çаврăнса ларчĕ. Арамĕ упăшки ăшĕнчи çил-тăвăла пурпĕрех асăрхаймарĕ, юрла-юрла ăшă шывра шăмпăлтатрĕ. Ваннăран тухсан, вăл, упăшкине хирĕç ларса, сăмах пуçларĕ: «Эс минтере качча илнĕ-и е мана? Эс хĕрĕхрех ватсупнăланасшăн-и е чир-чĕр айне пуласшăн? Эх, çунат пулсассăн халь эпĕ таçта çити вĕçсе каймалла. Чун юрлать, кĕлеткере юн сирпĕнсе тухасла тапать ман. Анчах... сан йӳтеме пуçланă сăну çине пăхатăп та, сан сӳнсе пыракан арçын кĕлетки çумне перĕнетĕп те — йĕрес килсе каять. Тăр-ха, силленсе ил-ха пĕрре, сирсе пăрах юлхав тумтирне. Тух чупма. Хăвала мана...» «Мансăрах кĕтӳпех пуль-ха унта сан хыççăн чупакан», — шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ упăшки. «Нумай, нумай, тухса кур», — тесе арăмĕ вырăн çине кайса выртрĕ.

Ыйхă пачах килмерĕ çĕрле Митрахванăн, арăмне, тусĕн арăмĕпе танлаштарса, тем тĕрлĕ кĕвĕçсе пĕтерчĕ, вăрттăн еркĕнне ярса илмелли майсене палăрта-палăрта хучĕ. Аптăранă енне, ĕнер арăмĕ сĕнсе панă «Сывлăх» журнала уçкаласа хупкаларĕ. Кĕтмен çĕртен ун умне «Чупни тата арçын проблемисем» ятлă статья тухса тăчĕ. Ăна вăл питĕ тăрăшса вуласа тухрĕ. Унта куçмасăр-хускалмасăр пурăнса шӳсе кайни çынна мĕн патне илсе çитернине уçса панă пĕр доцент. Çурăмпа выртакан арăмне ăнсăртран вăратасран шикленсе, Митрахван сывлама та чарăнчĕ тейĕн, уринчи кĕçĕтекен вырăна та хыçмасăрах чăтса ирттерчĕ. Охо, чупу, вĕтĕ юртă мĕнле кăна усă памасть этеме! Юн çаврăнăшне ӳстерет, кĕлеткене хытасран çăмăллатма пулăшать. Чупнă вăхăтра хырăмлăх ай парĕсем çемçелсе имленеççĕ... Нервсемне ăстăн çирĕпленеççĕ. Организм ывăнмасăр нумайччен ĕçлет. Кăмăл çирĕплĕхĕ, тимлĕх ӳсет. Ăшри хавшаклăх чакать. Лăплантарать, сапăрлантарать, мускулсен вылянчăкне вăйлатать. Çав хушăрах йывăрăша чакарать, кĕлетке илемне сыхласа хăварать. Чĕлĕм туртма, эрех ĕçме пăрахмашкăн та çăмăл-мĕн ялан чупаканăн. «Самăрлакан арçыннăн пултарулăхĕ чакса пырать». Çак сăмахсене вăл темиçе хут вуласа тухрĕ, унтан хăранипе чĕтреве ерчĕ. Авă епле пысăк харушлăх умне çитсе тăнă иккен Митрахван! Акă мĕншĕн арăмĕ сурăмпа выртать. Акă мĕншĕн каçăн ирĕн чупать вăл. Çамрăклăха

аларан вӗҫертессӗн мар-ши? Е урӑххи... Енчен те вӑл, тусӗн арӑмӗ пек, такампа юнашар чупса кайсан сукмак тӑрӑх?.. Мӗн тумалла вара?..

Ҫак шухӑшсемпе тӗлӗрсе кайрӗ Митрухха Митрахванӗ. Вӑранчӗ те аллине тӑсса пӑхрӗ, арӑм вырӑнӗ — пуш-пушах... Васкасах сиксе тӑчӗ те вӑл спорт тумне шыраса тупрӗ, тумланса уҫӑ сывлӑша тухрӗ.

Сукмакпа пӗри, тепри чупса иртет. Акӑ, унӑн арӑмӗ те ҫӳрен тиха пек ҫӑмӑллӑн ярӑнса пырать. Ун хыҫӗнче чӑнах та пӗр тӑлпан арҫын чупать. Митрахван та чӑтаймарӗ, вӗтӗ-вӗтӗ юртӑпа вӗсем хыҫҫӑн лӗпӗстетрӗ. Вӑл вӗсене ҫитетех, паян ҫитеймесен те, тен, ыран, виҫмине... пурпӗр хуса ҫитет.

# ҪӐЛКУҪ

Ыран Мирунӗ Кивкасри хӑрах енлӗ урам вӗҫӗнче пурӑнать. Килӗ умӗнче те, анкарти хыҫӗнче те ҫырма вӗсен. Ҫӳрӗклӗхе пула урлӑ выртана тӑрӑх ҫавӑрса хурасси Мирунӑн чӗр нуша. Ҫавӑнпах ӗнтӗ кӳршӗре мунча кӗрсе, кӳршӗрен шыв кӳрсех ҫур ӗмӗрне ирттерчӗ. Кӳршӗсен ачисем ӳссе ҫитсен вӗренме тухса кайрӗҫ, яла каялла таврӑнмарӗҫ. Ваттисем майӗпен йӑшрӗҫ, ҫӑлӗ вӗсен йӑтӑнса анчӗ. Мирун ҫумӗнче пурӑнакан тепӗр кӳрши аяккарах, ҫитменнине тата вӑл ӑна юратсах каймасть. Ыран килӗнче вара шыв хуйхи пуҫланчӗ. Мӗн тумалла?

— Ҫӑл тумалла! — хаярлансах каларӗ арӑмӗ.

— Тӑхта эс ҫатӑлтатма, пар мана шухӑшлама вӑхӑт, ыран...

— Эп качча килнӗренпех эс ҫӑлпа мунча ыран тӑван. Итле мана: ыран тӑвас ӗҫ те хӑй тӗллӗн пулмасть. Тытӑн паянах ҫӑл чавма. Йӑтмастӑп урӑх пӗр витре шыв та, мекӗрленместӗп. Ҫитет яла култарса!

Хӑть мӗнле ӗҫе те ырана хӑварма юратакан Ыран Мирунӗ ку хутӗнче кулянса ларнипе кулачӑ ҫиме май килменнине туйса илчӗ. Чим-ха, вӗсен хыҫӗнче тахҫан ҫӑлкуҫӗ тапса тӑратчӗ-ҫке! Ача чухне унтан шӑла тивекен шыв выртса ӗҫни аса килчӗ. Тулӗк вӑл, никам пахса тасатса тӑманран, типсе ларчӗ. Ун вырӑнӗнче шӑршлӑ курӑк ҫеҫ кашласа ӳсет.

Ирӗксӗрех ҫавӑнталла утма тиврӗ Мирунӑн. Кунӗпе чаврӗ, тасатрӗ шурлӑхлӑ вырӑна. Шӑтӑка шыв шӑнкӑртатса юхма тытӑнсан, савӑннипе ташласа ячӗ. Арӑмӗ пурпӗрех ӳпкелешрӗ:

— Эс мана каллех шыв инҫетрен йӑттарасшӑн-и? Ҫук, пӗр утӑм та тумастӑп. Кил хушшинче ҫӑл чавса пар!

Чӑн та, арӑмӗ ҫӑлкуҫран та, аякри кӳршӗрен те шыв урӑх йӑтмарӗ. Хӑйӗннех мекӗрленмелле пулчӗ Мирунӑн. Ывӑнтарчӗ, чирлеттерчӗ ӑна ку ӗҫ. «Нуша кулачи» ҫисе тӑраннӑ хыҫҫӑн тинех куҫне уҫрӗ вӑл. Пӗр ыранхи кунӗ ҫитсен, вӑрмантан йывӑҫ касарчӗ, тепринче пура пураттарчӗ, кайран ниме пухса ҫӑл алттарчӗ. Ак тамаша, пилӗк чалӑш ытла чавсан та шыв шапа ишмелӗх тухмарӗ. Мӗн тумалла?

— Ҫӑлкуҫ шывне ҫӑла юхтармалла, — сӗнчӗ арӑмӗ. — Чӗнсе

кил кĕрĕве. Вăл мелиоратор. Шăпах вĕсем хамăр хыçри çырмана мăн пĕве тума килнĕ.

— Юрĕ, ыран...

Арăмĕ ырана кĕтмерĕ, мелиораторсемпе хăй калаçса татăлчĕ. Кĕç вĕсем патне техника кĕрлесе çитрĕ. Пĕр тракторĕ канав чаврĕ, тепри ун хыççăн пăрăх хурса пычĕ. Çăлкуçпа çăла туххăмрах çыхăнтарчĕç.

Ирпе тăчĕç те Мирунпа арăмĕ чутах тўнсе каятчĕç. Лупамланнă кил хушшинче те шыв пур. Çăл тулса тăкăнса кайнă-мĕн.

— Алă пымасан, аллă çул выртнă тени тĕрĕсех пуль çав, Мирун, — йăлл кулчĕ арăмĕ. — Çур ĕмĕр пурăнса тин мана шывлă турăн. Çăлĕ кил хушшинчех халĕ, кўлли те... Тек ĕнтĕ кĕвентепе шыв йăтмастăп, кĕпе-йĕм чўхеме те, хур-кăвакал ўстерме те пит лайăх.

— Юрĕ апла, ыран кăвакал чĕппи илме кайăп, — терĕ Мирун, пуçне усса.

# ПАТЕФОН

Çын валли парне шыраса тупасси тата хатĕрлесси ытла та кăткăс иккен. Пĕрисем хаклăраххипе тĕлĕнтересшĕн, хăшĕсем йўнĕреххине те хитререххине илсе парасшăн. Ячĕшĕн парнелесен те юрĕ, текенсем те пур. Выкăтă Мĕкĕти те çавсен шутнех кĕрет. Анаткассем ун чеелĕхне, хыттине тахçанах пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ.

Выкăтă Мĕкĕти ял лавккинче сутă тăватчĕ. Пĕр вăхăтра кивелнĕ, кайман япаласене йўнетсе сутрĕç, хăшне-пĕрне пусĕпех списать турĕç. Патефон та пурччĕ вĕсен хушшинче. Кивелнĕ тавара Выкăтă Мĕкĕти, кумминe парне пама тесе, килнех илсе кайрĕ.

Çĕнĕ пўрт уявĕнчен юрласах таврăнчĕ вăл, ара, парнешĕн пĕр пус тўлемерĕ-çке, списать тунă патефон пулăшрĕ ăна. Çĕрле тĕлĕкпе аташрĕ те питĕ хăраса вăранса кайрĕ. Пĕтрĕ пуç! Патефонăн сасă трубинче ултавпа пухнă укçава пытарса усратчĕ-çке вăл. Пин тенке çитернĕччĕ. Ĕнер савăннипе кăларса хума маннă ăна.

Кăвак çутăллах тухса чупрĕ Мĕкĕте кумми патне. Лешĕ ăна ыталаса илсе чуптурĕ, ирех вăраннă хăнасем умĕнче мухтаса пĕтерчĕ:

— Ылтăнран та хаклă, хĕвелтен те çутă тĕнчере çук ыра пĕртен-пĕр кум вăл манăн. Патефон парнелерĕ, патефон ăшне пин тенкĕ укçа хурса панă. Платниксене тўлеме шăпах вырăнлă пулчĕ. Мĕнле тав туса çитерес ман сана, юратнă кум... Тытса пар-ха çакна...

Мĕкĕтен халăх умĕнче намăс курас килмерĕ, укçишĕн тарăхса шăлне çыртрĕ. Хаклă парне сăмахĕ арамĕн хăлхине кĕрсен, ун юррине итлесе йăлăнчĕ.

Чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ унтанпа. Мĕкĕтен кĕçĕн ывăлĕ те ар пўне çитрĕ. Мĕнпе кăна интересленмест пулĕ. Авалхи кивĕ япаласене пухса тĕлĕнтерчĕ. Ана пурте килрĕ: арламалли пĕчĕк урапа та, хултăрча та, хайчикки те, йĕс сăмавар та... Ашшĕнчев вăл пĕр-

рехинче «хаклă япала туянма» тесе çĕр тенкĕ укçа ыйтрĕ. Уйăх хытса пурăнчĕ Мĕкĕте. Хайхине арăмĕ ярса илчĕ, ĕмĕрхи юррине пуçларĕ:

— Юратнă куммушăн эс пин тенкĕ те хĕрхенместĕн, ывăлушăн çĕр тенкĕ те шалккă...

Чăтаймарĕ Мĕкĕте, чĕтрекен аллипе укçана аран-аран кăларса пачĕ ывăлне. Лешĕ туххăмрах йăтса килчĕ хăйне кирлĕ «хаклă япалана». Ывăлĕ сĕтел çине лартнă патефона палларĕ Выкăтă Мĕкĕти. Тўлевсĕр парне хăйшĕн мĕн хака ларнине аса илчĕ те, чĕлхесĕр пулчĕ тăчĕ.

# ЁНЕНТЕРЎ

Саша Пчелкинран çыру илсен, эпĕ нимĕн чухлĕ те тĕлĕнмерĕм, хĕпĕртерĕм çеç. Пирĕн «Пыл хурчĕ» хуларан ялаллах вĕçсе тарнăмĕн. Кукашшĕ пурăнакан ялти профтехучилищĕне вĕренме кĕнĕччĕ. Ун пекех вăл хурт-хăмăр ăсти пулма ĕмĕтленетчĕ-çке. Класри шаймăксем те ăна «Пыл хурчĕ» хушамата сăлтавсăрах тупса памарĕç пуль çав. Уншăн Саша пĕртте кўренместчĕ, мухтанатчĕ кăна. «Пыл хурчĕ пек ĕçчен пулас килет ман», — тетчĕ. Ашшĕ-амăшĕ, темшĕн, тăрăшсах унран хула çынни тăвасшăнччĕ. Саша вĕсене итлемен иккен, ăшри туйăмне çуллă сăмахпа улăштарман, хăй шут тытнине пурнăçламах пикеннĕ. «Мĕншĕн чармалла-ха ачан ĕмĕт вĕçевне? Пурнăç тўпине çитиччен вĕçтĕр ирĕклĕн», — шухăшларăм училищĕри формăллă тумпа ўкерттернĕ савăнăçлă арçын ачан сăнўкерчĕкне пăхнă май.

Горькирен Вася Флотский çĕнĕ вĕренў çулĕ ячĕпе ырă сунса салам янă. Ашшĕ çулĕпе кайса вăл юханшыв училищине çитсе кĕнĕ. Ку та маттур! Тата ытти хуласенчен те пур саламлă çырусем.

Хваттерсем тăрăх çўресе, хамăн класри ачасем ăçта-ăçта вĕренме кĕнине пĕлсен, кăмăлăм пушшех çĕкленчĕ. Токарь, фрезеровщик, маляр, машинист, электросварщик, телеграфист, повар, сантехник, çĕвĕç пулма ĕмĕтленеççĕ вĕсем шкултах сакăр çул вĕреннĕ хыççăн. Хĕрĕх ачаран çурри ытла. Юратнă професси суйласа илмешкĕн вĕсене ашшĕ-амăшĕпе пĕрле эпир те, учительсем, тивĕçлĕ пулăшу панах ёнтĕ. Ахă халĕ пирĕн пĕрлехи ĕç — куç умĕнче.

Кам хăш училищĕне кĕнине, кам вăтам шкулта малалла вĕренме кăмăлланине ыйтса пĕлнĕ хыççăн список турăм та, ăна шкул директорне хаваслăн тыттартăм. Вăл хута куç хĕррипе пăхса илчĕ те ытарлăраххăн каларĕ:

— Список мар, ёнентерў кирлĕ мана.

— Мĕнле ёнентерў?

— Справка, эппин. Сăмахран, сирĕн Пчелкину чăнахах та училищĕре вĕренет-и е урамра йытă хăваласа çўрет?

Кулкаласа эпĕ директора хамăн чи лайăх вĕренекенĕн сăнўкерчĕкне кăларса кăтартрăм, унăн çырăвне те вуласа патăм.

— Куратăп, унран чаплă пчеловод пулса тухасса та шанатăп.

Çапах та пирĕн хутпа ĕнентермелле-çке. Пчелкин чăн-чăнах училище тесе. Çавăнпа справка кирлĕ, ун пирки кăна мар, профтехучилищĕсене кĕнĕ кашни ача пиркиех, халех — çак кунсенчех.

— Пĕлтĕрхи мыскара çĕнĕрен пуçланать апла...

— Çапла, — аллисене хăлат çунатти пек сарса хучĕ директор.

Уроксем вĕçленнĕ-вĕçленмен вара ачасен ашшĕ-амăшĕсем патне тепĕр хут тухса чупрăм. Çирĕм ултă хваттере çитме, унти çынсене тупса калаçма вăхăчĕ çитмерĕ çав кун. Тепĕр кунне те çав ыйтупах хашкаса çӳреме тиврĕ. Аякра вĕренекенсем патне çырусем ятăм, телеграммăсем çаптартăм. Сисмесĕрех эрне вашлатса иртсе кайрĕ çапла. Ку ĕç маншăн ачасене професси суйласа илмешкĕн хăнăхтарнинчен темиçе хут йывăртараххине тин туя пуçларăм. Ашшĕ-амăшĕсенчен кирлĕ хутсене çийĕнчех кĕтсе илейменнине кура хулари училищĕсем тăрăх хамах çӳреме тытăнтăм. Ман пек «пушар сӳнтерекен» учительсем кĕтӳпех иккен. Училище кантурĕсенче сехечĕ-сехечĕпе черет тăратпăр ваçка: пурне те çавнашкал справка кирлĕ. Училищĕрисем вĕçĕмсĕр мăкăртатаççĕ:

— Хамăр патра кам-кам вĕренни çинчен эпир пĕлтертĕмĕр-çке, тата мĕн кирлĕ-ши ку бюрократсене?

— Ĕнентерӳ хучĕ кирлĕ! — тетпĕр эпир пĕр харăссăн.

Хамăр хулари училищĕсенчен вăрçтара-вăрçтара тенĕ пек пухкаларăмăр-ха справкисене, аякра вĕренекенсенчен пуринчен те килеймерĕç çав хутсем. Аптăранă директор вара пире, иртнĕ вĕренӳ çулĕнче саккăрмĕш классене ертсе пынăскерсене, пĕрле пухрĕ те çамкаран шакканă евĕрех асăрхаттарчĕ:

— Пĕр эрне срок паратăп, уроксенчен хăтаратăп сире, енчен те кун хыççăн та справкăсем çак сĕтел çинче выртмасан...

Директор приказне пурнăçласа, тӳрех Горький çул тытрăм. Вася Флотский чăн-чăнах Атăл тăрăх пăрахутпа яшме вĕренни çинчен калакан асамлă хута алла илнĕ хыççăн самолетпа Тюмене вĕçрĕм. Унта манăн Миша Глинов геолога вĕренет-çке. Эпĕ вăрăм çулран таврăннă çĕре Саша Пчелкин, справка ярса парас вырăнне, хăй персе çитнĕ. Эпир унпа директор пӳлĕмне хашкаса кĕтĕмĕр.

— Акă вăл, манăн Саша Пчелкин! Пулас пчеловод, — терĕм савăнса. — Кĕçех пире пыл та тутантарса пăхтарĕ.

— Палласса паллатăп-ха эпĕ ăна, ачине пурнăç çулĕ суйласа илме пултарнăшăн чунтан саламлатăп, — хуйхăрса хашш! сывларĕ директор. — Анчах вăл мана хăй мар, справка кирлĕ-çке. Епле майпа ĕнентерес-ха манăн çутĕç пайĕн çыннисене вăл чăннипех профтехучилищĕре хурт-хăмăр ăстине вĕренет тесе, э?

Чăн та, ĕнентерме хĕн. Саша Пчелкинпа манăн вара ирĕксĕрех унăн кукашшĕ пурăнакан яла тухса каймалла пулчĕ.

# ЧĂТĂМ ХУРАНĔ

Çĕрмамăк çиппинчен пир тĕртекен цех Хиврe Хĕветучĕшĕн иккĕмĕш кил пулса тăчĕ темелле ĕнтĕ. Унти кăткăс машинăсене пăхса тăма пуçланăранпа унăн танлавĕсем те кăвакарчĕç, пит çăмартисем те вăрăм йĕрпе тулчĕç, куç айĕсене тĕксĕм çаврашкасем тухрĕç.

Чăлт шурă халат тăхăннă пикесем хушшинче хур аçи пекех каçăрăлса утса çӳрет вăл. Ĕçĕ унăн йывăрах мар, пĕр-пĕр машина чăхăмласан, ăна майласа, малалла уттармалла. Ĕçĕ те нумаях мар, çирĕп станоксем сайра-хутра кăна чарăна-чарăна лараççĕ. Çапах та унашкал пăтăрмах хушăран сиксе тухать-тухатех.

Пушă вăхăт пуррипе усă курса, Хивре Хĕветучĕ фабрика хыçĕнчи хваттерне йăпăртатса кая-кая килетех. Лапчăк сăмсине кăвакал сăмси тĕсĕ çапсан, цех начальникĕ ăна хăй патне чĕнтерсе асăрхаттарать:

— Капла юрамасть-çке, Хвостов...

— Пире, ветерансене, юрать, — лăпкăн хуравлать лешĕ.

Пир тĕртекенсен туслă эртелĕ питĕ маттур, пĕтĕм çĕршывĕпе янăрать. Çавна май мухтавĕ те çителĕклех. Хивре Хĕветучĕ валли те çитет. Ĕçкĕпе выляннине пăхмасăрах ăна та тав сăмахĕнчен сиктерсе хăварни пулман. Шутласан, цех çитĕнĕвĕнче юсавçă-слесарь тӳпи те пур-çке.

Малтантарах вăл-ку тĕлĕшĕнчен пит сăпайлă пекчĕ. Приказпа тав тăваççĕ-и — шăпăрт та шарламасть, Хисеп грамоти параççĕ-и — чăкрашланмасть. Фабрика ветеранĕсен ретне тивĕçлипех йышăнчĕ этем. Санне цех çумне пир тĕртекен паттăрсемпе юнашар çапса хучĕç. Унтан кашни иртмессерен вăл хăй çине пăха-пăха хăпартланать. Пĕррехинче ăна çав тĕлте кӳршĕ цехра ĕçлекен юлташĕ Митта Митрахванĕ çанăран туртса чарчĕ.

— Пăх-ха эс тĕсерех, — вăлтса сăмах пуçарчĕ Митрахван. — Мĕнле йăлкăшаççĕ?

— Хĕрарăмсем-и?

— Хĕрарăмсен кăкăрĕсем. Ылтăн-кĕмĕл вĕт пурин те.

— А-а, эс наградăсене калатăн-иç. Ĕçре тивĕçнĕ пуль.

— Паллах, ĕçлесе. Çав Наçтуçăннах, авă, виçĕ орден, икĕ медаль, тем тĕрлĕ знак... Ĕçлеме вара эсир пĕр çулта пуçăннă. Сан кăкăру çеç... Эх, арçын...

Çак сăмахсене илтнĕ хыççăн Хивре Хĕветучĕ кăкăрне хăй сисмесĕрех ывăç тупанĕсемпе шăлса илчĕ. Чăнах та яп-якак. Пуçĕнче унăн пăлхантаракан шухăш вĕлтлетсе иртрĕ: «Медаль тавраш те пулин мĕншĕн лекмен-ха мана?» Юлашкинчен Митрахван çапла хушса хучĕ:

— Камăн станокĕсене куç шăрçине сыхланă пек пăхса тăратăн эсĕ? Наçтуçăнне. Вунă çул ытла. Эсĕ пулмасан, вăл паттăра та тухаяс çук. Тем тесен те, унăн кăкăрĕнчи çав медальпе тепĕр орденĕ саннах. Ăна мар, сана памаллискерсем пулнă вĕсем.

— Кун пирки эпĕ шухăшламан та, — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ Хĕветут. — Чăн та, эпĕ вăхăтра юсаса-йĕркелесе пыман пулсан çав станоксене, Наçтуçсем çавăн чухлĕ пир-авăр тĕртетчĕç-ши? Çу-ук, ниепле те çулталăкра виçĕ план тултараймастчĕç.

— Вăт çапла, тусăм. Наçтуç кĕçех çăлтăр çакса ярĕ, эсĕ ун çумĕнче çак çара кăкăрпах намăс курса ларăн. Эх, арçын... Итле, эпир фабрикăра — дефицит. Пирех пуççапаççĕ. Пирех йăлăнаççĕ.

— Ăна ăнланатăп-ха.

— Апла-тăк, мĕн пуçна усса тăран, ут ман хыççăн. Мухмăр чĕртĕпĕр. Эп тупаканччĕ-ха. Атя, атя, цех йăтăнса анмасть унччен, — çапла каласа, Митрахван тусне аяккалла туртса кайрĕ.

Аял енчен хăйпăтнă хăмасене сирсе урама тухрĕç те вĕсем, кирлĕ çĕре çитсе, пырĕсене чӳхерĕç. Каялла таврăннă çĕре цех, чăнах та, хăй выранĕнчех ларать, пĕр машини те ванман тата. Хĕпĕртенипе Хĕветут ĕç кунĕ вĕçлениччĕнех юсав пӳлĕмĕнче хуп турттарчĕ.

Кӑмӑла кайрӗ кунашкал пурнӑҫ Хвостова. Никам та сисмен пуль тенӗччӗ те, анчах инкек куҫа курӑнса килмест-мӗн. Каярахпа, Хӗветут ҫухалкаланӑ вахатра, темиҫе хутчен те станоксем чӑхӑмларӗҫ. Цех начальникӗ юсавҫа, унччен хи пекех, ӑнланмалла кӑна асӑрхаттарчӗ:

— Капла эртеле такӑнтарма юрамасть, Хвостов.

— Пире, ветерансене, кӑштах вылянкаласа илме те юрать, — ним пулман пекех хуравларӗ Хӗветут.

Митта Митрахванӗ тусне ӗшкӗртет:

— Куртан-и, пирӗнсӗр вӗсем алӑсӑр-урасӑр тӑрса юлнӑ пекех. Пирӗн куҫранах пахаҫҫӗ.

Пуҫран шалсан ача мар, мӑнни те ачашланать ҫав. Хивре Хӗветучӗ те ӗҫлес тенӗ чухне — ӗҫлет, канас тесен — канать. Йӗркеллӗ пӑхса тӑманнипе ӗнтӗ станоксем те умлӑ-хыҫлах вана пуҫларӗҫ. Цех начальникӗ тин сассине хӑпартрӗ:

— Асту, Хвостов, чӑтӑм хуранӗ тӑкӑнса кайма пултарать!

— Тӑкӑнсан та, пире пӗҫертеймест вӑл, — лӗхлетсе тӑчӗ Хвостов.

Ҫав кун Хӗветутӑн ялти тӑванӗсем килнӗччӗ. Пуҫлӑх ӑна уншӑн ӗҫрен ямарӗ. Икӗ станока васкавлӑн юсамаллаччӗ-ҫке. Хвостов, чирне персе, хай тӗллӗнех ӗҫрен пӑрахса кайрӗ, тӑванӗсемпе шӳрпе ҫисе савӑнчӗ, тепӗр ирпе мухмӑрла ҫитрӗ. Проходнойӗнче ӑна тытса чарчӗҫ. Тепрехинче эрех илсе кӗме хӑтланса лекрӗ.

Цех начальникӗ те, профсоюз комитечӗ те хӗрхенчӗҫ-ха ӑна, тӳрех шыва тӗртсе яма шутламарӗҫ, нумай калаҫрӗҫ, ӳкӗтлерӗҫ, тӗрлӗрен комиссисем пулашнипе юсама хӑтланчӗҫ. Вӑл ҫав-ҫавах хӑйӗн юррине юрларӗ:

— Мана, ветерана, нимӗн те тӑваймастӑр, саккун — ман енче.

Ӗҫ ветеранне хӗсӗрлеҫҫӗ тесе, хай таҫта та ҫырса пӑхрӗ. Йӗркене пӑсакана хӳтӗлекенӗ ҫеҫ ниҫта та тупӑнмарӗ. Цех начальникӗ вара юлашкинчен татӑкланах каларӗ:

— Саншӑн, Хвостов, никам та айӑплӑ мар, вӑхӑтра пире ятлемерӗн. Пирӗн чӑтӑм пӗтрӗ. Тӗрӗссипе эсӗ чатӑм хуранӗ айне вуттине хавах хутӑн, пӗчӗккӗн вӗре-вӗрех ялкӑштартӑн ӑна. Хуранӗ, авӑ, тӑкӑнса, хӑвнах пӗҫертсе ячӗ. Аллӑ ҫул тултарнӑ тӗлелле «Ӗҫ ветеранӗ» медаль пама палӑртнӑччӗ. Халӗ, хӑвах пӗлен...

— Пиртен, ветерансенчен, кулсан та юрать ӗнтӗ, — тесе ҫара кӑкӑрне ывӑҫ тупанӗсемпе шалса илчӗ те Хивре Хӗветучӗ, начальник патӗнчен ӳсӗр ҫын пек тайкаланса тухса утрӗ.

Цех ҫумӗпе иртнӗ май вӑл ӗҫ ветеранӗсен сӑнӗсем ҫине пуҫ ҫӗклесе пӑхрӗ. Кӑкӑр тулли награда ҫакнӑ Наҫтуҫсем тӳпери хӗвел пек йӑлкӑшса пӑхаҫҫӗ. Вӗсем хушшинче Хвостов хӑйӗн сӑнне кураймарӗ. Карта шӑтӑкӗ ҫумӗнче, тусне кӑчӑк туртса, Митта Митрахванӗ шӑл йӗрсе тӑрать.

# СУХАЛЛӐ КӖРӲ

Йӗрке хуралӗнчи Сорокин старшина хӑй ӗҫне чун-чӗререн паранна ҫын. Ҫавна май килӗнче те сахал пулать. Вӑхӑт чуппинче вӑл ачисенчен асли, Натали, хӗр пулса ҫитнине те сиссе юлаймарӗ.

Натали шкултан вёренсе тухнă хыççăн çĕвĕ фабрикине ĕçе кайса кĕчĕ. Каç-каç хĕрĕ каярах юлса таврăнма тытăнсан тин Сорокин хăй арăмĕпе пăлханса калаçрĕ. Натали хушăран çурçĕрччен çухалкаларĕ. Ку ашшĕне хытах пăлхантарчĕ, хулара пулса иртнĕ тĕрлĕрен усал ĕçсене аса илтерчĕ. Арăмĕ çывăрса кайсан тăрать те вырăн çинчен, чылайччен чӳречерен сăнать.

Акă, пĕррехинче Сорокин çап-çутă кил хушшинче хăрушла ӳкерчĕк курчĕ.

Пӳрт кĕтессинчен Натали чупса тухрĕ, ун хыççăн — темле тăсланкăрах каччă. Натали малалла туртăнать, лешĕ ăна сулахай аллинчен ямасть. Акă каччă хĕре çĕклерĕ те подъезд еннелле уттарчĕ. Хĕрĕ алли-урипе тапаланчĕ. «Ара, ман Натали çумне çыхланнă вĕт ку эсремет», — хăвăрт шухăшларĕ те Сорокин, форточка уçса, шăхличĕпе вăрăммăн виçĕ хутчен шăхăрчĕ. Те хăранипе, те аптăранипе каччă хĕре вĕçертрĕ те унталла-кунталла пăхрĕ, унтан, тем пулнă пек, каялла чавтарчĕ. Натали кĕçех киле кĕчĕ.

— Кам тапăнчĕ?! — тӳрех тĕпчеме тытăнчĕ Сорокин.

— Никам та, — ĕсĕклесе ярасла хуравларĕ хĕрĕ.

— Кала, кам вăл?!

— Куртăн пуль...

— Тĕрĕссине кала!

— Хăратăп.

— Камран?

— ?..

Упăшкине арăмĕ те лăплантараймарĕ. Пуçăннă ĕçе вĕçлеменни хăçан пулнă ара Сорокинăн. Малаллах тĕпчеме пуçларĕ вăл:

— Яснă. Каскăнчăк апла. Çав аçтахасем хăратса пĕтереççĕ хĕрсене. Ятне калама хушмаççĕ, темтепĕр каласа хăратаççĕ. Ăçта паллашрăн?

— Пасарта. Мăйăр илме кĕрсен алăран тытрĕ те, киле çитиччен те ямарĕ. Нихăçан та вĕçертместĕп, терĕ.

— Акă, пуçланчĕ маншăн тепĕр криминал. Çĕнĕ çула этемле кĕтсе илме памаççĕ. Тьфу! — хаш хуйхăрса ячĕ Сорокин, вара вăл «преступникăн» паллисене çивĕчреххĕн аса иле пуçларĕ: çӳллĕшĕ икĕ метра яхăн, пичĕ тăрăхларах, çамки çине хура çӳç пайăрки усăнса аннă, самси тӳрĕ, тути хулăн... — Урăх хăçан тĕл пулатăр? Ăçта?

— Ыран, — терĕ хĕрĕ ашшĕн шухăшне тавçăрса илнĕ май, — ыран... хамăр патра, çакăнта...

Тепĕр кунне Сорокин хăй хуйхине пай пуçлăхне Васильев майора каласа пачĕ. Майора та ку питĕ кăсăклантарчĕ. Шăпах вĕсем темиçе преступника шыраса хашкăлнăччĕ-ха. Старшина пĕлтернĕ «портрет» тăрăх картотекăри сăнӳкерчĕксене танлаштарса пăхрĕç. Сорокин хĕрĕ çумне çыпçăннă майлăрах «каччă» шăпах пур.

— Çавах, — терĕç Сорокинпа Васильев.

Операцие питĕ тĕплĕн хатĕрленчĕç. Ăна Васильев майор хăй ертсе пыма шутларĕ. Сорокин старшина унăн заместителĕ пулать. Пулăшмашкăн тата виçĕ çынна илчĕç.

Çапла йĕрке çыннисем сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Тутлă шыв ĕçсе, шăкăл-шăкăл калаçса ларчĕç туссем.

Вуниккĕ çитерехпе, чăнах та, алăк шăнкăравĕ янăраса кайрĕ. Сорокин арăмĕ алăка уçса ярсанах хваттере тăсланкă Хĕл Мучи Юрпикене çĕклесе кĕрсе тăчĕ. Хĕл Мучин çамки çине хура çӳç пайăрки усăнса анна, сăмси тӳрĕ, тути хулăн.. Майор тăна-тăманах хушса хучĕ:

— Аллусене — çӳлелле!

Вуниккĕ çапнипе пĕрлех Хĕл Мучи Юрпикене аллинчен вĕçертрĕ те кăмăллă сассипе:

— Çĕнĕ çул ячĕпе сире, юратнă хунĕмпе хунямаçăм тата аттеçĕм! — терĕ.

Сорокинпа Васильев пĕр вырăнта шак! хытрĕç, ыттисем ахăлтатса кулчĕç.

Маскăсене сирсе пăрахнă Хĕл Мучипе Юрпике Васильев майор ывăлĕпе Сорокин старшина хĕрĕ пулчĕç тăчĕç.

# СУМ КАÇĔ

Кукамай тăхăрвунă çул тултарнă кун эпир çемйипех яла кайма тухрăмăр. Шупашкар автобусĕпе ярăнса пынă май ĕмĕтленетĕп: «Ман кукамай пек ватă çын халĕ ялта пӳрне хуçлатса шутламалăх та юлманччĕ-ха. Ăна, хастар ĕçпе кăмăлне уçса пурăннăскере, таврара чапа тухнăскере, колхоз умĕнче сума сусах хисеплеççĕ пулĕ-ха. Тен, Культура керменĕнче савăнăç каçĕ ирттерĕç. Ырă çынна пĕтĕм тĕнче тăван-çке».

Автобусран ансан, кермен умĕнчи пĕлтерӳсене вуласа тĕлĕнтĕм. Паян каçпа «Чунсăрсем» ятлă кино пулать. Пĕчĕк залра çамрăксем валли ташăсем йĕркелеççĕ.

Пусăрăнчăк кăмăлпа киле çитрĕм. Анне мана пушшех тĕлĕнтерсе пăрахрĕ.

— Паян сан мăн ĕç тумалла пулать, — терĕ хăй кулкаларах.

— Мĕн ĕçĕ? Тумалла пулсан — тăвăпăр. Кукамай тата çуралнă кунне уявламасть-им? Ялта сас-хыпар çуккă та...

— Уявлать. Сире кĕтрĕм эпĕ. Пуçтарăннă ĕнтĕ, çиччас каяткăр. Мăн ĕçне вара санăн шăпах кукамусем патĕнче пурнăçлама тивет, ывăлăм. Эсĕ пысăк ĕçри çын. Çак медале ăна пама тивет сан. Акă, тыт.

Эпĕ пĕчĕк курупкана алла илнĕ хушăра хĕрĕм хыт хут çине çырнине сасăпа вуласа та пачĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи хастар ĕçшĕн кукамай та Аслă çĕнтерӳ юбилейĕн медальне тивĕçнĕ-мĕн. Илессе çеç...

— Çулĕ ытла вăрăм пулчĕ ку медалĕн, — ăнлантарчĕ анне. — Май уйăхĕнче радиопа пуху пулать, тесе пĕлтерчĕç. Кукаму илтнĕши ун çинчен, илтмен-ши, пĕлместĕп. Ахаль те вăл кайăкла вĕçмест те, виç уран çӳрет те. Хушаматне унăнне асăннă, тет, çав пухура, медальне те хăйматлăхран парса янă. Леш мурĕ тепĕр уйăхран тин кинне кĕртсе пама хушнă, кинĕ — амăшне. Ун ашшĕ, хăвăн куммаçу, иртнĕ эрнере илсе килчĕ. Ламран лама çӳресе, акă, хамăр пата çитрĕ-ха. Шанчăклă алăрах ĕнтĕ. Пар эс ăна паян. Хĕпĕртеттер ват çынна.

— Ял Совет председательне е колхоз председательне партарас. Чĕнес те...

Анне кăмăлсăррăн алă çеç сулчĕ:

— Ватă çынна сума сумашкăн пĕлеççĕ-и вĕсем. Аннесен умĕнчен унтанпа çĕр хут та кĕрлеттерсе иртсе кайнă пулĕ машинăпа.

Мĕнпĕн кĕрсе саламласа çак медале парса хăварас мар? Вăрçă вăхăтĕнче, астăватăп, республикăри Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ пирĕн аннене Хисеп грамоти пама уя тырă вырнă çĕре хăй пычĕ. Вăт савăнăç пулчĕ аннешĕн. Халь те манмастпăр çав хумхануллă саманта. Кăмăла кăмăл уçать, тени тĕрĕсех вăл, ывăлăм.

Анлантăм аннене, килĕшрĕм хайхи «мăн ĕç» тумашкăн. Уттартăмăр эртелпе аналла.

Халăхра каланă пек, кукаçи кил хушши тытатчĕ, кукамай — пӳрт ăшши. Çав ăша туйăм пире мĕн ачаранах унта туртнă. Кукаçи вилсен, кукамай пĕчченех тăрса юлчĕ.

Килне çитрĕмĕр те... Пĕччен мар иккен кукамай! Сакăр ача пăхса ӳстернĕ-çке вăл. Акă, ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе вĕсен арăмĕсем-упăшкисем, ачисем. Кам кăна çуккă-ши пӳлĕмре! Чăваш, вырăс, украинец, тутар, эрмен...

Кукамая çемçе пукан çине лартса урра çĕклерĕмĕр те ăшă-ăшă сăмахсем каларăмăр. Эпĕ вара çĕршывăн аслă органĕ ячĕпе ăна юбилей медалĕ патăм.

Кукамай шăрçаланнă куçĕсене шурă алтутрипе шăлса илнĕ хыççăн çапла каларĕ:

— Тавтапуçах патшалăхне ĕçлекен çынна манманшăн. Тавтапуçах сире, ачамсем. Этем нумай та тĕнчере, çын вара — сахалтарах. Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан-ха.

Сум касĕ кукамай патĕнче питĕ сумлă иртрĕ.

Культура керменĕнче ялти пуçлăхсем «Чунсăрсем» ятлă кино курчĕç пуль, унтан тухсан пĕчĕк зала кĕрсе тапларĕç пуль... Награда хăйĕн хуçине тупнине тата кукамай унпăн епле савăнкине çеç кураймарĕç вĕсем.

Тепĕр тесен, унашкал пуçлăхсем пирĕн ялта кăна пулĕ.

# ШАНЧĂКЛĂ АЛĂРА

Шкула ача ашшĕ чупса пырать те учителе йăлăнать:

— Хисеплĕ çыннăмăр, арăмпа иксĕмĕрĕн те Ленинграда туя каймалла. Тархасшăн, асăрхаса тăрăр пирĕн Ваççука. Атту вăл хамăр таврăниччен килте темле туй кĕрлеттерĕ.

Кăмăллă учитель сăмахсăрах килĕшет.

Ун хыççăнах шукăль тумланнă хĕрарăм çитет.

— Каçарăр та, — тет вăл васкавлă, — манăн паянах турпоездпа Молдавие вĕçтермелле. Микулая сире шанса парса хăварасшăн. Ăна пăхма йывăр мар: ирпе вăратмалла, гимнастика тутармалла, апат пĕçерсе çитермелле, шкула кайса ямалла, уроксем хыççăн кăшт паппа тутармалла, кĕнеке вулаттармалла, юнашар ларса телевизор пăхмалла, тăрантармалла та сăпка юррипе çывратса ямалла. Акă меню тата юрă сăмахĕсем.

— Юрĕ ĕнтĕ, пăхкалăп, — пуçне пăркаласа юлать учитель.

Тем вăхăтра Маруç амăшĕ вĕтĕнсе кĕрет те:

— Пĕтĕм шанчăк та сирĕнте кăна, — тет. — Виçĕ кун килте

пулаймастпăр. Ман ачи вăл пит итлекенскер, тульккăш пĕччен çывăрма хăрать. Хваттерте кам та пулин кирлех. Тен, эсир юлатăр пирĕн пата? Вăхăт пурах ĕнтĕ сирĕн.

— Пулмасăр, ара, пур, — хирĕçлеме хăяймасть учитель.

Уроксем вĕçленнĕ тĕлелле класа арçынпа хĕрарăм хăшăлтатса кĕрсе тăрaççĕ.

— Каллех гастроле каятпăр вĕт, э? — евитлет арçынĕ. — Ют патшалăха. Тепĕр уйăхран пысăк укçапа, нумай япалапа таврăнатпăр. Эдике сирĕнсĕр пуçне никама та шанса парса хăвараймастпăр. Талант пĕтме пултарать. Сире, мĕн... Эсир пурпĕрех класпа ĕçлетĕр вĕт. Сире çавах, ик алла пĕр ĕç...

Алăкран тухнă чухне вĕсене хирĕç çăмламас йытă çавăтнă арçын хирĕç пулать:

— Сантăра çухатрăр пуль. Пульницана хучĕç ачана, — ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçать арçын. — Вăл унта выртакалĕ-ха, анчах Сантăр тусне, çак Кампура, ăçта хурас. Шухăшларăмăр-шухăшларăмăр та килте, сирех тыттарса хăварас терĕмĕр. Йытăпа пульницана çӳрекелĕр ĕнтĕ. Хамăрăн Камчаткăна вĕçмелле, хунямa юбилейне çитмелле.

Учитель хашш! сывласа илет те кулса ярать:

— Хэ-хэ-хэ. Эх, мĕн тăвас ĕнтĕ сирĕнпе, ытла та вăхăт çуккипе çунакан ашшĕ-амăшĕсемпе. Килĕшмесен те май çук. Ачисем хамăн класăн-çке. Юрĕ, Ваççукне, Микулайне, Маруçне, Эдикне, Сантăрне кăна мар, ыттисене те киле илсе кайса хамăн ачасемпе пĕрле куç шăрçине сыхланă пекех сыхласа упрăп. Маншăн пурпĕрех пĕр ĕç — вĕсене вĕрентмелле, тимлĕн пăхса ӳстермелле, вĕсенчен çĕршыва тивĕçлĕ çын тума тăрăшмалла. Эпĕ учитель вĕт, сирнешкел ирĕклĕ çын мар.

# КĔТӲ АПАЧĔ

Тĕлĕнмелле пурнăç пулса кайрĕ юлашки вăхăтра пирĕн тăрăхра. Ялта кĕтӳçе кĕрĕшекен çын тупăнмасть. Выльăха черетпе пăхса çуCaçатпăр. Кăçал вара кĕтӳç тупăнчĕ. Халăх лăшах сывласа ячĕ. Ара, черет тени ĕçре мĕн чухлĕ чăрмав кӳрет.

Колхозра ĕмĕрне пилĕк авса курман, ялтан хулана та хуларан яла йăрккаса çӳрекен Тӳрпилĕк Павăлĕ таçтан арăмĕпе сĕтĕрĕнсе таврăнчĕ. «Малашне ялта якорь ярсах пуранатăп,ниçта та тапранмастăп», — тесе сăмах кăларчĕ вăл. Анчах майрипе иккĕшĕ те колхоза тухма шутламарĕç, амăшĕн ĕнси çине хăпарса ларчĕç. Хăяккăн выртса хăйма çиекенсене ял Совечĕпе милици те ĕçе вырнаçмалли çинчен хытах асăрхаттарчĕç. Хуларан та йĕркеллĕ ĕçлесе тĕпленсе пурăнманшăн хĕстернипех тухса шавăнна-мĕн вĕсем. Акă, харампырсемшĕн ялта та саккун çирепленчĕ. Урăх ăçта каяс? Павăлпа арăмĕ кĕтӳçе кĕрĕшме килĕшрĕç. Ял пухăвĕ вĕсене выльăх шанса пачĕ.

Уйăхне кашни сурăхшăн икĕ тенкĕ, качакашăн виçĕ тенкĕ тӳлетпĕр. Черетпе — апат. Ирпе каç килте çитеретпĕр, кăнтăрла вал

ли чиктерсе яратпăр. Çулла ял çынни апатпа ытлах аппаланса каймасть. Лавккара туянмалли темех çук. Тӳрпилĕк Павăлĕ çапла ял апачĕпе таранкаласа пурăннă хыççăн ультиматум лартрĕ: е пире хулари пек пахатăр, е кĕтӳççĕр тăрса юлатăр. Эрнерен чăнах та, самахне тытрĕ вăл. Кĕтӳ виçĕ кун уя тухмарĕ. Ак тамаша! Эй ваçка, хыпанса ӳкрĕç çакăн хыççăн хĕрарамсем. «Çу каçиччен пĕр-ик апата йĕркеллĕ хатĕрлейместпĕр-и, этемле пăхаймастпăр-и çавсене», — тесе пĕри тепринчен ăмăрта пуçларĕ. Мĕн кăна çук кĕтӳççем умĕнче: московски кăлпасси, сервилат текенни, хĕрлĕ пулли, хура вăлчи, аш-какай консерви, шăрттанĕ... Хăшĕ автан пусать, тепри така... Кĕтӳ апачĕ çывхарас умĕн кам Мускава пуйăспа кăлтăртаттарать, кам Ленинграда самолетпа вĕçет. Мана та арăм кăнтăра виноград туянса килме хăвалать. Çынран ӳксе юлма юрамасть-çке.

Çапла хаклăран та хаклă хăна вырăннех пулса тăчĕç Тӳрпилĕк Павăлĕпе арăмĕ. Кĕтӳ апачĕ сурăх хакĕнчен те иртсе каять. Уншăн кулянмаççĕ-ха хашĕсем. Кĕтӳç кĕтет-çке сурăхсемпе качакасене. Хырăма шăлсах, йăх-йăх кулсах çу каçса кайма пуçланăччĕ Павăлпа арамĕ.

Тута хĕл каçнă выльăхсем çăва тухсан имшерленме пуçланине эпир çеç мар, ытти çынсем те сискеленĕ-мĕн. Кĕтӳ кĕртнĕ хыççăн пӳрт алакĕ умне кĕпĕрленсе тăрса çăвар хупмасăр çĕр çĕмĕреççĕ мĕскĕнсем. Апат парсан тин лăпланаççĕ. Каярахпа сăмах тухрĕ ял çине. Тӳрпилĕксем кĕтĕве, кунĕпе çырма-çатра тăрăх кĕтсе çӳрес чухне, тапăра хупса усранă иккен.

Ака, çăм касма та вăхăт çитрĕ. Çаралнă сурăхсен шăммипе тирĕ кăна тарса юлнă. Хĕрарамсем çĕнĕрен ахлатса хыпăнса ӳкрĕç: «Ара, ку эрешсене хамăр тутанса пăхмасăр хакла апата кӳптерсе шӳтерсе ятăмăр пать те, сурăхсене мĕн туса хунă вĕсем? Скелет. Каккуй текех сире хула апачĕ, тăвар улмипе уйран та лекмест. Хыр хăййи кашлăр».

Тӳрпилĕк Павалĕпе арăмĕ ялтан хӳтерсе ярасран шикленчĕç пулас, выльăхсене йĕркеллех пăхма пуçларĕç, хула апачĕ те ыйтма пăрахрĕç. Хамăр мĕн çиетпĕр — çавăнпа тăрантаратпăр вĕсене халĕ.

# НИКĔССĔР КЕРМЕН

Юратать Йăван Йăванăч тимĕр-тăмăрпа аппаланма. Ялти тимĕрçĕ ачи, хулана килсе, заводри тимĕрçĕ лаççинче телей тупрĕ. Шкулта ачасене физика вĕрентекен Нина Николаевнăпа пĕрлешрĕ. Икĕ ача вĕсен: Ваçлей тата Маруç. Завод панă хваттерĕ виçĕ пӳлĕмлĕ, çута, ăшă. Еçре Йăванăча мухтаççĕ. Ăсне кура ăсталăхĕ те пуян ун. Пытармасть Йăван Йăванăч çак пуянлăха, юлташĕсене, çамрăксене парнелет. Ун çумĕнче ялан пĕр-пĕр качча. Ака, халĕ те «ĕнерхи студента» вĕрентсе çын тума хушрĕç ăна.

«Ĕнерхи студент» малтанах пит килпетлĕн уткаласа çӳрерĕ, аллисемпе хăлаçлансах рабочисене тем вĕрентме хăтланчĕ. Йăван

Йăванăч та, юлташĕсем те кӳренмерĕç. Ĕçне тума тытăнсан пурте хăй вырăнне ларчĕ. Каччă хăй кунта вăйсăррине туйрĕ те пуçне чикрĕ.

— Ăçта кайсан та, ăса пĕлĕве кура хаклаççĕ çав, — терĕ ăна Йăван Йăванăч. — Ăс вара пĕлӳсĕр вăй илеймест. Мĕн вĕрентнĕ-ши сире шкулта, институтра?..

— Теме те, анчах... ниме те, — хăйĕн пĕлменлĕхне йышăнчĕ «ĕнерхи студент». — Пĕрмаях унта-кунта хăвалатчĕç: кружокран — кружока, вăййăран — вăййа, юрăран — таппа, смотртан — ăмăр» тăва... Урок тума вăхăт юлмастчĕ. Вĕренни кирлех те марччĕ. Пурпĕрех «иккĕ» лартмаççĕ. Урок ан сиктер çеç, вара эс чи лайăх вĕренекен шутланатăн. Вăтам шкул пĕтертĕм çапла, института кĕтĕм... Тĕлĕнмелле вĕт? Аслă шкула! Анчах... малалла çăмăллăн юртаймарăм, пĕрремĕш курсрах такăнтăм. Кам чаркăç лартрĕ? Паллах, хамăр шкул. Çав учительсем пиртен çирĕп ыйтмасăр, пире тарăн пĕлӳ памасăр пĕтерчĕç пурнăçа. Халĕ мĕн тумалла-ха манăн? Тепĕр хут шĕкĕлчесе тухмалла-ши шкул программине?

Йăван Йăванăч ăна хĕрхенчĕ те, тарăхрĕ те. «Ха вăл, намăссăр, хăй кахалне пĕлмест, шкула, учительсене айăплать», — тесе шухăшларĕ. Киле таврăнсан вăл кун пирки калаçу пуçарасшăнччĕ. Арăмĕ, Нина Николаевна ĕнтĕ, яланхи пекех килте çук. Ачисем те таçта. Каçхи апат пĕчченех ларса çирĕ. Телевизорпа кино курма пуçласан, алăк тăрринчи шăнкăрав янăраса кайрĕ. Арăмĕ килчĕ.

— Выçса вилетĕп, урăран ура иртмест, ме, тыт-ха портфеле, — тесе Нина Николаевна стена çумне сĕвенчĕ.

— Каллех темле мероприяти ĕнтĕ сирĕн.

— Театр эрни пуçланнине пĕлетĕн-и?

— Çук.

Арăмĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ те чăмла-чăмла калаçрĕ:

— Шкулта паян артист кăна утать. Ачасем ассах кайрĕç. Ман класа опера артисчĕ Басов пычĕ, уроксем хыççăн ари юрлама вĕрентрĕ. Акă, итле: «Эп саншăн çеç çут тĕнчене çуралнă. Эс маншăн çутă çăлтăр, уйăх та хĕвел...»

Йăван Йăванăч итлерĕ-итлерĕ те кулса ячĕ:

— Сан пединститута мар, консерваторие вĕренме каймалла пулнă. Талант ахалех çунать.

— Çапла çав, хам та кулянатăп халĕ учителе вĕреннĕшĕн. Чăнах та, хăть çĕр тĕпне анса кай, — пит-куçне сасартăк улăштарчĕ Нина Николаевна. — Ыран драма театрĕн артисчĕ, виçмине çамрăксен театрĕн, тăватмине пуканесен театрĕн артисчĕсем килмелле. Пурте ачасене выляма, юрлама, ташлама вĕрентетпĕр, теççĕ. Класпа сценка лартса памалла. Паян виçĕ сехет юрларамăр, ыран... Вырсарникун спектакль курма каятпăр. Тунтикун театр эрни çинчен отчет çырса паратпăр та кĕнеке эрни пуçласа яратпăр. Вăл вĕçленсен перекетлĕх, паттăрлăхпа мухтав, стройпа юра, атеизм, сутçанталăк, право йĕркисен эрнисем пулмалла, çапла — вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен. Кашнинпе альбом хатĕрлемелле, хаçат кăлармалла.

Кухньăран тухсан Йăван Йăванăч арăмне мухтаса лăплантарас терĕ:

— Ытла маттур-çке эсĕ.

— Маттур пулмасăр, ара. Юрлама, ташлама, стройпа утма, чеç пама, футболла, хоккейла вылямa пĕлетĕп, ачасене вĕрентме çеç...

Çав вăхăтра ачисем пĕрин хыççăн тепри çитсе кĕчĕç. Вĕсем урăх шкулта вĕренеççĕ. Ашшĕпе амăшĕ пĕр харăс ыйту пачĕç:

— Ăçта пулнă?

— Ку таранччен мĕн тунă?

— Эп музыка шкулёнчен. Концерт хатёрлетпёр, — пуçне чикрё Маруç.

— Пирён боксерсем зонăри ăмăртăва хутшăнаççё. Тренер çавăнна нумай тытать, — хавасла пёлтерчё Ваçлей.

Алăкăн-тёпелён утакан ашшё тарăхса кайрё:

— Уроксене кам тăвать?

Ачасем шарламарёç, кухньăналла чупса кёрсе çухалчёç. Апатланнă хыççăн Ваçлей урайне хут тёрки сарса пăрахрё те:

— Ман ирччен çак хаçата кăлармалла, унсăрăн класс руководителё ятлать, — терё.

— Ман молдаванкăсен кёпине çёлесе пётермелле, ыран — смотр, — тесе Маруç çёвё машини хатёрлерё.

— Ман план çырмалла, — амăшё тепёр пÿлёме кёчё.

— А ман мён тумалла сирёнпе?! — тарăхрё Йăван Йăванăч. — Пёри те кёнеке вулас, çыру ёçё тăвас темест. Эпир вёреннё чухне...

Арăмё ăна пырса çанăран туртрё:

— Эй, ку çынçăнчăкпа, кил хам пата, ан чăрмантар ачасене. Пёлетёп эп вёсене ыран мён кётнине. Хушнине ан пурнăçла-ха?.. Эп хам та çаплах ыйтатăп. Пурте çавах. Эпир вёреннё чухне, пёлетён пулсан, пёлÿ кирлё пулнă, халё... наука хушнă пек вёрентетпёр — нумай енлё аталантаратпăр.

— Ан лёпёртет-ха эс, — арăмё хыççăн мăкăртатса пычё Йăван Йăванăч. — Пёлÿсёр мёнле майпа чăн-чăн çын çитёнтерме пулать-ха? Шкулăн ун чи малтан тарăн пёлÿ памалла пуль?

— Тёрёс, памалла. Теорипе, йёрке тăрăх. Анчах пурнăçра йăлтах урăхла, кутăн çаврăнса кайнă-çке пирён вёрентÿ ёçё. Пёлетён-и çавна? Ман, мён, урока хатёрленес килмест-и? Вулас, шутлас, пуçа пуянлатас килмест-и? Çак усăсăр хутсене çырса ларччен... Анчах та чи малтан пирён план, отчет, справка тата темтепёр çырмалла. Шурă хута пустуй макулатурăна куçармалла. Камшăн? Кам валли? Ачасен пёлёвё, ăстăнё ÿстёр, анлăлантар тесе-и? Çук. Тёрёслекенсем валли. Итле, каласа парам сана хамăн тамăк çинчен.

Чăн та, мён кăпа курмаççё мăнтарăн учителёсем. Акă, паян арăмё хатёрлекен карттă. Вёренÿ вёçленнё хыççăн класри кашни ача кашни кун, кашни сехетре ăçта пулнине тата мён тунине палăртмалла унта. Палăртни çителёксёр-ха, ăна пёрмай тёрёслесе тăмалла. Çапла хулари мёншур секцисене, кружоксене, пионер çурчёсене, спорт шкулёсене, станцисене, обществăсене çитмелле.

Мён чухлё отчет ыйтаççё. Пёрремёш çур çулта кăна кружоксен ёçё-хёлё пирки çёршер ыйту çине хуравланă. Унсăр пуçне тата шыва путакансене çăлакансем, кёнеке юратакансем, историпе культура палăкёсемпе çутçанталăка сыхлакансем, ДОСААФ, Хёрлё Хёрес обществисен членёсем, çамрăк пушарниксем, милици тусёсем мён тунипе туманнине çырса пёлтермелле. Санэпидстанци, районти сывлăх пайё, çар комиссариачё вара хăйённе ыйтать. Хăть кашни класра канцеляри уç.

Тёрёслекенсем мён чухлё-ши? Шутласа та кăларма çук. Тепёр чухне кунне икё-виçё çёртен вуншарăн кёпёрленсе тулаççё шкула. Ачасен çÿç мён тăршшине, вёсем мёнле тумпа пынине, кам мёнле кружока çÿренине, стена хаçачё миçе кăларнине, урамра çÿремелли йёркене епле пăхăвнине тата темтепёр тёрёслеççё, вёренÿ мёнле пынипе çеç сахал интересленеççё.

Арăмё каласа панинчен тёлённипе Йăван Йăванăч тепёр кунне шкула кёрсе пăхма шутларё. Хула Советёнче вăл халăха вёрентес ёç комиссийёнче тăрать-çке. Алăкран кёрсенех урайёнчен маччана

çити çакăнса тăракан пĕлтерÿ хăмине курчĕ. Унта мĕн çырнине вуларĕ:

«Урока ĕлкĕреймен, коридор тăрăх чупакан, картлашка çинче сикекен ачасене ман пата çавăтса пырăр. Директор».

«Вĕренекенсен çемьери условийĕсем пирки характеристикăсем, «йывăр ачасемпе» мĕн-мĕн туни çинчен справкăсем тăратăр. Илемлĕ шăхăрма пĕлекен ачасене тупса парăртăр. Директоран класс тулашĕнче ĕçлекен заместителĕ».

«Пионер юхăмĕн активисчĕсемпе ачасен тĕлпулăвĕсене йĕркелĕр. Пионервожатăй».

«Орденсемпе медальсем илнĕ аппĕ-амăшĕсемпе аслашпĕ-асламăшĕсене тупса шкула чĕнĕр. Военрук».

«Турист путевкипе ют çĕршывсенче пулнă аппĕ-амăшĕсен вăйĕпе интернационалла туслăх калаçăвĕсем ирттерĕр. Профком».

«Кĕнекесене çĕнĕрен пута илсе тухăр. Библиотекарь».

«Санузел юсама пултаракан аппĕ-амăшĕсем кирлĕ. Завхоз».

«Классемпе коридорсене тĕплĕнрех çăвăр, тасарах тытăр. Техничка».

Çак ĕçсене пурне те класс руководителĕсен паян пурнăçламалла иккен.

Директор алăкне шаккаса кĕчĕ те Йăван Йăванăч хăй мĕн сăлтавпа çÿренине евитлерĕ. Директор аллисене саркаласа пăрахрĕ.

— Пĕтрĕ пуç. Паян киле каясси çинчен шухăшламалли те çук. Каçарăр та эсир, ырă çыннăм, анчах халĕ йышăнаймастăп. Халăх тĕрĕслевçисем, акă, ларaççĕ. Вĕсем хыççăн министерствăран килни калаçасшăн, унтан пушар инспекцийĕ тем «çунтарасшăн». Черет йышăнма тивет. Вăхăт пулсан, кĕтсе ларăр йышăну пÿлĕмĕнче.

Алă сулсах тухрĕ Йăван Йăванăч. Ăна пĕр тулли хĕрарăм, шкул секретарĕ, пулăшма чĕнчĕ:

— Çак тĕркесене йăтса парăр-ха?

Урамри грузовик çине миçе тĕрке йăтса кайнине шутламарĕ Йăван Йăванăч, ывăнса çитсен, хĕрарăмран ыйтса пĕлчĕ:

— Мĕн ку, макулатура-и?

— Çук, отчетсем. Паянах çитермелле. Тавтапуç.

«Учительсен вĕрентме, ачисен вĕренме вахăт çук иккен ку шкулта. Урокра вăхăт ирттернипех çырлахаççĕ. Пĕлÿсĕр ăспа выляççĕ. Никĕссĕр кермен купалаççĕ. Çавăнпа «ĕнерхи студент» пеккисем кайран ĕнсе хыçаççĕ, учительсемпе шкула пустуй ÿпкелешеççĕ. Кам айăпĕпе-ши?» — шухăшласа пычĕ çул çинче Йăван Йăванăч.

Каçхине арăмĕ çивĕч ыйту хускатрĕ:

— Ачасем кĕçех вăтам шкул пĕтереççĕ, института кĕресшĕн, репетитор тытмалла пулать: физикăпа, математикăпа, акăлчан чĕлхипе...

— Килте физика учительници пур çинче тата вĕренме пулăшакан кирлĕ-ши? Ак тамаша, — хытсах кайрĕ Йăван Йăванăч.

— Çапла, пĕлÿ кирлĕ ачасене. Репетиторсăр май çук, — татса каларĕ Нина Николаевна.

Шутласан, чăнах та, унсăр май çук пуль çав.

# ЧӐРӐ ЧЕЧЕК ҪЫХХИ

Ӗҫре те, килте те ларма-тăмă пĕлмест Лариван. Вăл — темĕнле кăткăс ыйтăва та туххăмрах татса пама пултаракан ҫын. Ҫавăнпах пуль ăна кантур пуҫлăхĕ пĕрмай хуласем тăрах хăвалать.

Ҫулра ярăнса ҫӳре-ҫӳре вăл тепĕр чухне арăмĕ ҫинчен те манса каять пулас. Ҫуралнă кунĕ хыҫҫăн е пĕр-пĕр уяв иртсен вара арăмĕ кула-кулах ӳпкевлĕн калать:

— Эх, Лариван-Лариван, хăв ар пулни ҫинчен те ан ман. Чечек кĕтетĕп санран.

Упăшки ăна лăплантарать:

— Чунăмҫăм, Роза, яту та, хăв та чечек те, ҫавăнпа манатăп пуль парне пирки. Каҫар ĕнтĕ мана, чупкăна. Тепринче...

— Тепринче сана чечекне хамăн пернелемелле пулать пуль, — куҫ айĕн пăхса илет арăмĕ.

Каллех командировкăна тухса каять Лариван, ҫул хыҫҫăн ҫул такăрлать. Пĕррехинче килне таврăнать те, сĕтел ҫинчи хута вуласа, ача ҫуратмалли ҫурта тухса чупать. Васканипе пасара кĕрсе чечек илме вуҫех манать.

— Ах, ҫак арҫынсене, ку та чечексĕр, — пуҫне пăркалать шур калпаклă хĕрарăм.

— Ман арăм хăй чечек ҫав, — мухтаннă пек пулать Лариван. Хăй ҫав хушăрах хыпăнса ыйтать: — Мĕнле ача ҫуратнă-ши Роза?

Хĕрарăм ăна кулкаласа ăшă сăмахсем калать:

— Чăнах та чечек пекех сан арăму. Пит хитре ҫурăлчĕ, виҫĕ чечек кăларчĕ. Кур-ха?

Лариван ҫаврăнса пăхать те арăмне тата унпа юнашар ача йăтса пыракан хĕрарăмсене асăрхать.

— Уяв ячĕпе си...

Сăмахне каласа пĕтерейместь Лариван, икĕ алла виҫĕ ача тыттарнипе шалтах аптăрать.

— Пĕлнĕ пекех, паян та чечек ҫук санӑ киреметĕн. Сатту ман пур, — тесе упăшкине чуптуса илет те Роза ăна пĕчĕк пепкесемпе паллаштарать:

— Акă ку, сулахайри, шурă лили чечекĕ пек, сылтăмри — симĕс чечеклĕ любка пек, варринчи вара — сиплĕ вероника пек. Лили, Любка, Вероника пур халĕ пирĕн, Лариван.

— Роза та пур, — ун ҫумнерех кăшăрт куҫать упăшки.

— Сăмахăма пурнăҫларăм, Лариван. Сана чечек парнелемешкĕн тинех вăхăт ҫитрĕ. Ахаль чечек те мар, чĕрĕ чечек ҫыххи хатĕрлерĕм Хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе.

Чăр-чар туса сасă параҫҫĕ пĕр харăс Лариван аллинчи «чечексем».

— Чăнах та чĕрĕ чечек ҫыххи, — савăннипе кулса ярать вăл. — Ват телей!

# МУЛКАЧКАССИСЕМ

Ёлĕк-авал пирĕн Мулкачкасси тавра йăлтах вăрман пулнă, тет. Ун ёшнисенче мулкач-куян кăна хĕвĕшнĕ. Çавна май Куян çырми, Карсак уйĕ, Мулкач ёшни тенисем ку таранччен сыхланса юлнă. Çыннисене те майĕпен çав хăравçă чĕрчун ячĕпе Мулкач Кулькки, Куян Упрамĕ, Карсак Варсунĕ, Катăктута Тарасĕ, Вăрăмхăлха Хĕлимунĕ тесе чĕнме тытăннă. Каярахпа çав ятсем хушамата та куçнă. Халь вара ялта кăна мар, районпа республика кантурĕсенче те Мулкачов, Куянов, Карсаков, Сехреев хушаматлă пуçлăхсем час-час тĕл пулаççĕ.

...Манăн хамăн та вырăнĕ начар мар-ха. Никамăннипе те улăштарма шутламастăп. Юлташсем аслă шкулсене тапнă чухне эпĕ фермăна чăмрăм. Шăршă-маршăран та, тасамарлахран та, алă вĕççĕн мекĕрленсе ĕçлемеллинчен те хăрамарăм. Майĕпен механизаци ĕçе çăмăллатрĕ. Ĕçĕ те каткăсланчĕ. Çавна пула ялхуçалăх техникумне заочна вĕренсе пĕтермелле пулчĕ. Юлашкинчен тем пысăкăш витесем туса лартрĕç те фермăна комплекс ят пачĕç. Пирĕн колхоз хуçи, кўршĕри Лявлявкассинчи Анчăк Антунĕн Çимунĕ, ĕç пĕтернĕ ятпа строительсем валли ман ушкăнри пĕр чушкăна пустарчĕ. Шўрпине çиме хама та чĕнчĕç. Эпĕ, тислĕк кăлармалли транспортерсем пурте ĕçлеменнине пĕлекенскер: «Пире ку тăрлавсăрсем комплекса туса пĕтермесĕрех тĕксе парса хăвараççĕ вĕт, куç умĕнчех чике тăршшĕ лартаççĕ», — тесе Анчиков хăлхинчен пăшăлтатрăм та, вăл ман çине тигр пек хаяррăн пăхса илчĕ. Ирĕксĕрех шăплантăм вара. Çав вăхăтра районтан килнĕ Вăрăмхăлхаев, строительсене мухтаса, сăмах калама тытăнчĕ, ун хыççăн вĕсене Хисеп грамотисем пачĕ. Карсаков та пурччĕ. Вăл кайран хăйĕн хаçатĕнче шăналак пек статья пичетлесе кăларчĕ. Эх, мухтарĕç комплекса, эх, мухтанчĕç районти чи пысăк объектпа. Ăна палăртнă вăхатран маларах туса пĕтерсе икçĕр пин тенкĕ перекетленĕ çке. Ма чысламалла мар-ха строительсене?

Строительсем, вăрăм укçа çапса, премии хĕстерсе кайнă хыççăнах эпир нуша кулачĕ çиме тытăнтăмăр. Механизаци вырăнне сенĕкпе кĕреçе тытма тиврĕ, электричество вырăнне хамăр хул-çурăм вăйне хута яма лекрĕ. Тислĕк купаланса кайрĕ. Лĕпĕр-лĕпĕр тасамарлăх пĕвенелле çул тытрĕ... Кун пирки асăрхаттарма хăтланакансене Анчăк Антунĕн Çимунĕ хăр-хар çеç кăшкăрса тăкрĕ. Тек вара никам та ăна хирĕç шарлаймарĕ.

Пурăна киле мана комплекс пуçлăхĕ туса хучĕç. Хăра-хăрах килĕшрĕм. Аптăраса çитнĕ ял çыннисем тўрех ман çине сиксе ўкрĕç: «Хăçан хупатăн эс çав «утикулун» хапхине!» — теççĕ. Тислĕк шĕвекĕ пирки вара ирĕксĕрех председательпе хирĕçсе илме тиврĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ çапла, тислĕк шĕвекĕ ял витĕр юхма чарăнмарĕ. Пĕр председателĕ хыпмасть те, теприн патне каяс-ха, терĕм. Сехре Ехремĕн Еремейĕ алă çеç сулчĕ. «Сехре хăпнă Еремей ку çуртра татах та нумай ларма ĕмĕтленет, çавăнпа колхоз пуçлăхĕпе чĕрре кĕресшĕн мар», — тесе тухрăм ял Советĕнчен.

Эх, ку ферма шăршине, мĕншĕн сиплĕ мар-ши вăл, мĕншĕн хăнăхсан та йăлăхтарать-ши? Çырмаран сăмсана çуракан, пуçа минретекен шăршă кил хушшине те капланать. Мĕн тумалла капла?

Шухăшларăм-шухăшларăм та Вăрăмхалха Хĕлимунĕн Хĕлипне аса илех кайрăм. Çитрĕм района. Анчах Хĕлип эп каланине итлемерĕ те. «Анчиковпа çыхланиччен шуйттанпа çыхлан луччă», — тесе аллине çеç сулчĕ.

Тепĕр çулне мана колхозри халăх контролерĕсене ертсе пыма шанчĕç. Ĕçе тислĕк ыйтăвĕнчен пуçларăм. Пăхса тухрăмăр, сўтсе яврăмăр. Тасатмалли сооруженисĕр тек ĕçлеме май çук, кăçал туса пĕтермеллех, тесе йышăнтăмăр, унпа председателе паллаштартăмăр. Вăл ăна вуласа пăхрĕ те: «Укçа çук ман тислĕк шĕвекĕ валли! Ку таранччен пурăннă — пурăнатпăр. Сатту сысна ашĕ йўне ларать», — тесе хучĕ.

Эпĕ каллех района çитрĕм. Райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕ хамăр ял ачиех-çке. Катăктута Тарасĕн Пурисĕ мана шăла çыртсах итлерĕ, пулăшма пулчĕ. Анчах ĕç Анчикова чĕнсе калаçнипех иртсе кайрĕ.

Пичет пулăшĕ-ши тесе, райхаçат редакцине çырса ятăм. Карсак Варсунĕн Арçукĕ ўркенмесĕрех хăй ответлерĕ: «Тусăм, ăнланатăп сан хуйхуна, — тенĕ вăл унта. — Анчах та хамăр çынсене халăх умĕнче намăс кăтартар мар-ха. Лайăх ĕçлекен пуçлăха тислĕк шĕвекĕпе вараличчен унăн авторитетне çĕклессишĕн çине тăрар. Çапах та ялта кăна мар, районта та пĕр Анчиков вăл».

Район пуçлăхĕсенчен никам та пирĕн председатель куçĕнчен ўкме шутламаннине, çав «пĕчĕк ыйтупа» ун кăмăлне хуçас теменнине эпĕ ытти кантурсене çитсен те аван куртăм. Анчиков план тултарма, сахал тăкакпах йўнĕ аш-какай туса илме, колхоза пуйтарма пултаракан председатель иккен. Анчах та хайхи «пĕчĕк ыйту» сисмесĕрех пысăкланса кайрĕ. Тавлашса-хирĕçсе пурăннă хушăра ял пушанса юлчĕ. Çамрăксем кам ăçта килчĕ, савăнта саланса пĕтрĕç. Хамăн хĕрача та Шупашкаралла, пир тĕртнĕ çĕрелле, тапса сикрĕ. Карчăкпа иксĕмĕр те чараймарăмăр.

Тăван столицăна хĕрĕм патне кайсан, кĕрсе курас-ха терĕм хамăн ача чухнехи тусăма. Сăмах май ял нушипе хуйхи çинчен те калаçас. Хĕрсĕр ял хĕсĕр ял пекех-çке. Каччăсем те юлмĕç капла. Пĕтме те пултарать Мулкачкасси.

Куян Упрамĕн Раманне ĕç вырăнĕнче тĕл пулма шутларăм. «Ну, — тетĕп, — калаçатпăр ĕнтĕ иксĕмĕр чун каниччен». Хавасланса çитсе кĕтĕм Куянов ĕçлекен кантура. Телее пула тўрех лекрĕм хăй патне. Палласа илчĕ мана Раман. «Сасран пĕлтĕм», — тет. Хăй сехетне пăха-пăха калаçать. Васканине сисрĕм те, хамăр хуйха кăларса хутăм ун умне. «Пĕлетĕп, пирĕн пата та çитнĕ вăл шăршă, анчах... Вырăнта татса памалли вак-тĕвекшĕн Семен Антонăчпа пĕртте пăсас килмест хутшăнусене. Тĕрĕссипе каласан. ял шăрши вăл ялта ĕмĕрне те пĕтмест ĕнтĕ. Йĕпрен лум туса ан çўре. Каçар, тусăм, халь канашлăва çитмелле ман», — яшт! тўрленсе тăчĕ Куянов.

Ку канцелярийĕнчен тухсан, ĕнĕк шăршăллă сывлăшпа кăкăра пўлĕнтерсе, хула тăрăх чылайччен уткаласа çўрерĕм эпĕ. «Ялта — ял шăрши, хулара — хула шăрши, сăмса пурне те хăнăхать иккен»,— тесе Мулкач Кулькки Кĕçтенккийĕ ĕçлекен нумай хутлă сарлака çурт умĕнче чарăнтăм. Анчах кунта кĕртмерĕç те мана. «Вăл паян ĕçлемест», — терĕç те, ирĕксĕрех хам килнĕ çулпа каялла утма тиврĕ. «Мулкачкассисене пĕрне те кирлĕ мар иккен ку Мулкачкасси,— тарăхуллăн мăкăртатрăм вара эпĕ хам тĕллĕн. — Пурте Лявлявкассинчи Анчăк Антунĕн Çимунне пуççапса пурăнаççĕ. Тăхтăр-ха, вăхăт çитĕ, пирĕн яла та чечек шăрши çитĕ...»

# СУККĂР ПЫРШĂ

Пĕррехинче Василий Васильевичăн кăвапаран аяларах сылтăм енче шалта тем чавтарнипе çурăм тăрăх сивĕ тар шапăрах юхса анчĕ.

— Пĕтрĕ пуç, касаççĕ ĕнтĕ...

Ирпе вăл поликлиникăна тухса шутарчĕ. Чирлĕ çын хырăмне хыпашласа, шăлса, шаккаса, пусса тĕрĕсленĕ хыççăн хирург аллисене саркаларĕ те:

— Аппендикс таврашĕ те çуккă. Ним çинчен шухăшламасăрах кĕрлеттерсе çӳреме пултаратăр, — терĕ.

— Çаплах кансĕр-ха, тем йăшăртатать...

— Пустуй япала çеç вăл. Тăвар ытлашши ĕнтĕ. Çавă канăçсăрлантарать. Ку вара пирĕн енĕпе мар. Урологпа канашласа пăхăр.

Хирургĕпе урологĕ иккĕшĕ те пĕр пӳлĕмрех кун сиктерсе йышăнаççĕ-мĕн. Тепĕр кунне Василий Васильевич унта пысăк шанчăкпа хыпăнса çитрĕ.

— Вăт çак вырăнта темле суран пурах. Йăштăр-яштăр тусанах чĕре тапма чарăнса ларассăн туйăнать, — тухтăр куçĕнчен ыйтуллăн пăхса. чĕтревлĕ калаçрĕ вăл. — Хирург унта тăвар тулса ларнă, тет те...

— Пустуй япала. Нимле тăвар купи те çук. Суккăр пыршăн хурт евĕр турачĕ силленкелет пулас та, шапах çавă аса илтерет ĕнтĕ хăй пурри çинчен. Анчах, шел те, пирĕн енĕпе мар вара ку.

Уйăх иртет-и, иртмест-и, вăрттăн суран татах аса илтерет. Василий Васильевич поликлиникăна чупать.

— Çук, çук, пирĕн енпе мар ку. Урологăннах тĕплĕн тĕрĕслемелле. Хăйăр лухăнма пултарнă, — лăплантарса ăсатать ăна хирург.

Урологĕ хăйĕннех перет:

— Вăраха тăсăлнă аппендикс шыççи.

Сывлăх хуралçисемпе пуплекеленĕ самантра, пит тĕлĕнмелле-çке, ыратни лăпланнă пек туйăнать тата, киле çитсенех таçтан муртан чĕрĕлет. Ирĕксĕрех поликлиника çулне такăрлатма тивет Василий Васильевичăн.

— Çакăнтах çĕр тĕпне анса каям, анчах хам шухăшран пăрăнмастăп: унта сирĕн тем тесен те чул купи хытса ларнă. Ку вара...

Унран урологĕ кулать:

— Сирĕн хырăмăрта тăвар, хăйăр, чул карьерĕ уçасшăн мар-и вăл тата? Çу-ук, пирĕн енĕпе мар ку. Аппендицит сирĕн, хронически текенни.

Чылай вăхăт иртрĕ унтанпа. Василий Васильевич хырăмра йăшăртатнине-чавтарнине майĕпенех хăнăхрĕ. Çапах та хушăран, сых ятне тесе, пулкалать-ха вăл çав хăнăхнă пӳлĕмре. Ĕнер кăна хирург ку сирĕн пӳре е шăк хăмпи чирĕ, терĕ. Паян уролог çав хурт евĕр турат вĕçех кăтăклантарать хырăмна, терĕ пăхмасăрах, темле таблеткăсем çырса панă май. Иккĕшĕ те питĕ кăмăллă йышăнаççĕ, шутсăр çепĕç чĕлхепе ку пирĕн енĕпе мар çав, тесе лăпкăн ăсатаççĕ. Хăйсем пуç çĕклемесĕр тем çыраççĕ. «Сывлăх кĕнекин» виççĕмĕш томне тултараççĕ, ак, медицина наукин кандидачĕсем. «Нумай çул хушши пухăннă çак тишкĕрӳ тăрăх доктор диссертацийĕ

хӳтӗлеме те, монографи пичетлесе кӑлармa та пултараҫҫӗ вӗт, шереметсем», — тесе шухӑшласа илме кӑна ӗлкӗрнӗччӗ вӑл суран дӑш пулнӑ чух... Акӑ, кӑкӑр айӗнче тем йӑванма пуҫларӗ, хырӑм тӗпне анса ҫитсе сылтӑм енне куҫрӗ, ҫине-ҫине йӗппе чикнӗ пек тире пуҫларӗ, хӑсӑк килчӗ, пуҫ кунтӑкланчӗ. Ыратнине чӑтаймасӑр тата сехри хӑпнипе ҫын часрах телефон трубкине ҫӗклерӗ те 03 номерпе шӑнкӑравларӗ:

— Алло, «Васкавлӑ пулӑшу-и ку? Вилетӗп. Васкӑр...

Пӗлтернӗ адреспа вӗҫтерсе ҫитнӗ фельдшер ӑна туххӑмрах пульницӑна леҫрӗ. Дежурнай врач вырӑнӗнче шӑпах тата паллӑнӑ хирург пулчӗ.

— Кама куратӑп! Ырӑ сунсах кӗтсе илетпӗр, Василий Васильевич! Анчах та, юлашки хут ӑнлантаратӑп: суккӑр пыршӑ турачӗ мар алхасать пулать унта сирӗн, тем тесен те — шӗвӗр вӗҫлӗ чул муклашки.

Варӗ чӑтма ҫук хытӑ пӑрса килнипе ҫурмалла хуҫланса ӳкнӗ Василий Васильевич йӑлӑна-йӑлӑна ыйтрӗ:

— Турӑ пулӑрах маншӑн. Эпӗ те юлашки хут ыйтатӑп. Суккӑр пыршӑн хурт евӗр турачӗ-и унта е тавар-хӑйар-чул купи-и, маншӑн халь пурпӗрех, хӑвӑртрах касар, тасатӑр, вилӗмрен ҫӑлӑр ҫеҫ. Ой-ой, ай-вай-вай!..

— Ҫук ҫав, пирӗн енӗпе мар. Ыран килӗр. Ыран — уролог йышӑнать.

— Эх, эсир те ҫав, хӑвӑр сукӑр пыршӑран та суккӑртарах пулас... — теме ӗлкӗрчӗ те Василий Васильевич, урайне йӑванса кайрӗ.

# *КАМИТСЕМ*

# СĔРМЕН КУСАТĂРАН ТĔНĔЛЕ ÇИЕТ

**Вылякансем:**
**СОРМИНСКИЙ — «Сорминский» совхоз тракторисчĕ,**
**ЗВЕЗДИН — «Звезда» колхоз слесарĕ,**
**ПРАВДИН — «Правда» колхоз шоферĕ,**
**ДИАГНОСТИКОВ — юсавпа техника предприятийĕнче ĕçлекен.**

ПĔРРЕМĔШ КУРАНУ

Сурăм ял хыçĕ. Çывăхрах Сурăм шывĕ шăнкăртатса юхса выртать. Çыран хĕрринче — машина-трактор паркĕ. Вăл тимĕр-тăмăр масарне аса илтерет. Йытпырши явкаласа илнĕ трактор кабининче Сорминский пĕç хуçса выртать. Чашкăрса ÿсекен хупаха сиркелесе, сукмакпа Звездин хăпарать.

**ЗВЕЗДИН** (карттусне хывса). **Вăй патăр!**
**СОРМИНСКИЙ** (çÿлтен пуçне пăрса пăхать). **Тавтапуç ырă самахушăн. Чăн та, халран кайрăм.**
**ЗВЕЗДИН** (кулать). **Мĕн, кăнтăр кунĕнче Алтăр çăлтăр шыраса-и?**
**СОРМИНСКИЙ. Çук-ха, çăлтăр шыраса мар, «тухтăрсем» килессе кĕтсе.**
**ЗВЕЗДИН. Анлантăм эс мĕнле «тухтăрсене» кĕтнине. Выртан каска мăкланнă, тет. Эпир вĕсене кĕтсе хăяккăн выртмастпăр, хамăрах тытатпăр та юсатпăр техникăна.**
**СОРМИНСКИЙ. Кам пултăн çак эсĕ? Уçăлнă-уçăлман куçпа паллаймарăм-çке.**
**ЗВЕЗДИН. Кÿршĕсем эпĕ, юнтапасем. «Звезда» колхоз слесарĕ пулатăп. Хирĕç мар-тăк, пулăшма хатĕр.**

Тракторист çÿлтен гусеница çине сикет, килнĕ çынна алă парать. Иккĕшĕ те пуçĕсене мотор патне чикеççĕ, чылайччен чаваланаççĕ.

ЗВЕЗДИН. Эс ку пайсене ёмёрте те çу таврашĕ кăтартман пулъ. Типсе тутăхсах ларнă. Çавăнпа арканнă. Вăхăтра пăхмасан, çапла вăл, тимĕр те ĕмĕр тӳсеймест. Юрать-ха, кĕсъере сак валли кирлĕ япали тупăнчĕ. Çиччас, туххăмрах улăштаратпăр та майлаштаратпăр. Акă, пулчĕ те. Тапратса пăх-ха урхамахна?

Мотор кĕрлевĕ Сурăм улăхне сарăлать.

СОРМИНСКИЙ (хăнана ыталаса). Сăпаççипă, ырă çыннăм. Четвĕрт лартатăп. Четвĕрт те мар, ещĕк шуррине лартатăп!

ЗВЕЗДИН (аллине сулкаласа). Нимле эрех те кирлĕ мар. Юлташла пулăшас, терĕм çеç. Чун ыратать тĕмсĕлсе ларакан трактора курсан. Ĕçлемелли машина-çке вăл, çынна усă памалли япала. Алă пымасан, аллă çул выртнă. теççĕ. Ытти улăпĕсем тата мĕнпе чирленĕ?

СОРМИНСКИЙ. Чĕре чирĕ. Моторĕсем сӳннĕ. Чĕртме каллех «тухтăр» кирлĕ.

ЗВЕЗДИН. Асăнас та килмест вăл техника «тухтăрĕсене». Пире хамăра та пайтах нуша кăтартнă вĕсем. Малтан эпĕ те тракторист пулнăччĕ. Астăватăп, техникăна пăхса тăмашкăн килĕшӳ тунăччĕ. Пулăшма тесе, ятарласа çын уйăрнăччĕ пире валли. Ну, шутлатпăр, «тухтăр» хамăр çумра, малашне техника сывă пулĕ. Çук çав, шаннă йăвара кайăк пулмарĕ. Сăмсине кăтартрĕ те вăл пĕр-икĕ хутчен йĕп пекех çухалчĕ. «Тухтăр» та çук, запас пайсем те... Вăл, ултавçă, пирĕн пата каятăп тесе суйса пурăннă. хăй çав вăхăтра Шупашкара йăркканă. Контроль тени пулман уншăн. Çавăнпа усă курнă та. Пирĕн трактор бригадин бригадирĕ юсавпа техника предприятине чупа-чупах хăшкăлса çитрĕ вĕт. Ун мар, лешсен хăйсен чупмалла тĕрĕссипе. Нимĕн те ĕç тухманнине кура вара алă султăмăр вĕсем çине. Хамăрăн мастерскоя майлаштарса йĕркелесе ярсан, эпĕ те, чир-чĕре пула, унта куçрăм. Тăваттăн эпир мĕн кăна юсамастпăр. Хамăрах «колхозтехника». Тракторĕ те, комбайнĕ те, автомашини те кĕр-кĕрлет кăна. Сирĕнни пек тирпейсĕрлĕх çук пирĕн. Кунта çырми те тракторсем айнех кĕрсе каять, авă. Эрози чирĕ сарăлнă сирĕн: паркра та, пуçлăхсен ăшчикĕнче те. Техникăшăн тăрăшни курăнмасть.

СОРМИНСКИЙ (хуйхăрса). Эх, кунашкал ăста алăсемпе эсир механизаторсене епле хĕпĕртеттеретĕр-ши?

ЗВЕЗДИН (хăпартланса). Паян иксĕмĕр юсанă пек ялан пĕрле юсатпăр — пĕрле савăнатпăр.

СОРМИНСКИЙ. Апла эпир те пĕрлех савăнар-ха. Хăнана килнĕ пек пултăр.

Иккĕшĕ те лакăмлă çулпа, пылчăк çăрса, ял еннелле утаççĕ.

## ИККĔМĔШ КУРАНУ

Юсавпа техника предприятийĕн картишĕ. Унта та кунта çĕмрĕк автомашинăсем ларни курăнать. Лаша вити майлăрах кивĕ çурт умĕнче ĕç тумтирĕ тăхăннă çынсем хĕрсех тавлашаççĕ.

ПРАВДИН (тарăхса). Ăçта юсас халь ман машинăна? Ăçта кĕртсе тăратас? Техникăна пăхса тăракан станци, СТО, тесе павраççĕ тата. Станци мар ку — сарай! Мотор юсамалли цех, теççĕ тата. Цех мар — авалхи тимĕрçĕ лаççинчен тăвăртарах пулĕм! Запас пайсен складне те хăвăр арап-аран хĕсĕнкелесе кĕрсе тухатăр вĕт. Каккуй юсав пирки калаçма кунта.

ДИАГНОСТИКОВ. Лăплан эс, лăплан. Мĕн, мĕн çĕмĕрĕлен пустуй. Эс çухăрнипе çĕнĕ çурт хăпарса ларас çук. Кĕтмелле пулать. Станци тума вунă çул каяллах проектпа смета хучĕсем хатĕрленĕ... Кĕçех стройка пуçланмалла. Кĕтмелле унччен.

ПРАВДИН. Çавна кĕтсех ватăлатпăр ĕнтĕ: техники те, хамăр та. Начар урапа тата хытăрах шалтăртатать, тет. Шалтăртатать-шалтăртатать те, акă, анса ларать. Ваннă автомашина, трактор, комбайн мĕн усă параççĕ-ши? Техникăпа начар усă курнăшăн, топливо ытлашши нумай çунтарса пĕтернĕшĕн ахальтен ятламаççĕ пуль çав пире. Кивви — каялла, çĕнни — малалла, тенĕ ваттисем.

ДИАГНОСТИКОВ. Ытлашши ан ятла-ха.

ПРАВДИН. Ятлас пулать çав сире. Çитсе курасчĕ сирĕн кӳршĕсем патне. Вăт вĕсен СТО-тăк СТО! Пĕр харăс çирĕм автомашина кĕртсе тĕрĕслеме-юсама пултараççĕ унта. Трактор-комбайн юсамалли цехĕсем те вĕсен завод пек. Техника «тухтăрĕсем» пĕрмай ятлă, тĕрĕслемелли-юсамалли вăхăта çирĕп пăхăнаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ пур колхозпа совхоз та килĕшӳ тунă юсавçăсемпе. Пирĕн...

ДИАГНОСТИКОВ. Хамăрăн та пулать, ак, çĕнĕ мастерской. Сирĕн хăвăрăн та колхозра техникăна пăхса тăмалли чаплă пункт уçăлĕ-ха.

ПРАВДИН. Хăçан, эпир пенсие тухсан-и? Умра хĕвел çиçмест.

ДИАГНОСТИКОВ. Пĕр шутласан, тĕрĕсех вăрçатăн пулмалла эсĕ пире. Начар ĕçлетпĕр. Пире те кирлĕ кӳршĕсенни пек чаплă условисем район техникине сывă тытса тăмашкăн, анчах... хамăрăн станци çук, хуçалăхсенче пунктсем уçма мастерскойсем начар. Председательсемпе директорсем упаран хăранă пек хăраççĕ пирĕнтен. Ниепле те пĕр чĕлхе тупаймастпăр вĕсемпе. Килĕшӳ тăвасшăн мар. Хăйсем пурте пире ятлама пăхаççĕ. Ăçта кайса кĕрес пирĕн?

ПРАВДИН. Кулянса ларнипех кулачă çиме çук. Тăрăшмалла. Пирĕн килсе туса памалла-им сире? Акă, тĕрĕслĕр, юсăр ман машинăна. Хам та пулăшăп. Эсир — техника «тухтăрĕсем».

ДИАГНОСТИКОВ (шăппăн). Тен, кăшт каярах килетĕр? Халĕ, хăвăрах куратăр, пушă вырăн çук.

ПРАВДИН (каллех тарăхса). Мĕн мăшкăллатăр? Хăвăр тунă килĕшĕве хăвăрах пăсасшăн. Пăрахатăп та хăваратăп автомашинăна. Тĕрĕслĕр, юсăр. Колхоз сире ахальтен уйăхне çур пин тенкĕ укçа тӳлет-и? Ял кулли! Сĕрмен кусатăран тĕнĕле çиет, тет. Тĕрĕсех пуль çав.

Иккĕшĕ те çураçаймасăр икĕ еннелле утса каяççĕ.

Ч А Р Ш А В.

# ПĔР УРАПА ÇИНЧЕ

Ку мыскарана строительсен управлени пуçлăхĕ ЯКИМОВ, ĕç пахалахĕн аслă инженерĕ ДМИТРИЕВ, вăрман хуçалăхĕнчи ЯКОВЛЕВ лесник тата пĕр колхозри ПАВЛОВ бригадир кăтартаççĕ.

## ПĔРРЕМĔШ КУРАНУ

Пӳлĕмре урмăш сасă илтĕнет. Акă, кăпăш япала сарнă йывăç краватьсем çинче мăшлатса, ахлатса, охлатса выртакансем пуçĕсене çĕкле-çĕкле пăха пуçлаççĕ. Пĕри тарланă çамкине шурă катанпирпе шăлса илет, унтан вăл хăй тăрăх тĕсесе пăхать.

**ЯКИМОВ** (кăшкăрса). Ăçта эпĕ?! Кам йĕмне тăхăнтарнă мана? Морале хирĕçле утăм туманччĕ-çке?..

**ДМИТРИЕВ.** Шăпрах пул эс, тусăм. Ĕçри пек ан кăшкăраш. Нимле улахра та мар, урăлтаркăчра эпир. Кунта лекнĕ хыççăн шур халатлă çынсен алли витĕр тухнине мантăн-им? Çавăн хыççăн пачĕç те ĕнтĕ иксĕмĕре каçуннăй йĕм.

**ЯКИМОВ.** Нимĕн те ăнланмастăп. Пуçра пĕр чĕптĕм ăс та юлман пулас. Вилеп. Ах, çамка тимĕр кăшăлпа пăчăртанă пек хĕсет. Ĕнерхиччĕ халь çакăнта...

**ДМИТРИЕВ.** Ĕнерхи вăл хырăмра та шăмпăлтатмасть çав. Эп чăтнăскерне, эс те чăт ĕнтĕ кăштах. Кĕçех, акă, эпир урăлса çитнипе-çитменнине тĕрĕслĕç те... килелле утăпăр вара. Ун чухне пĕлĕте кармашмасăрах пилĕк çăлтăр тытма пултарăпăр.

**ЯКИМОВ.** Ана кунтан тухсанах майлаштарăпăр-ха. Мухмăрпа пĕрлех ăш вăркама пуçларĕ-çке. Тĕлĕкре те трест пуçлăхĕ умĕнче ура хуççах ташланă та... Тем, ырра мар ку. Эпир халь иксĕмĕр ăçта хĕртĕнсе выртнине пĕлес пулсан-и вăл... Çитменнине тата паян пуху ирттермелле, коллективри йĕркене çирĕплетмелли çинчен канашламалла. Унта сана та тухса калама хушнăччĕ.

**ДМИТРИЕВ.** Мĕн кулянан çак эсĕ. Кăшт-капăт ятлаçанçи тăвĕç те, выговор пекки парĕç те... Унашкал пире, ĕç ăнса пыманшăн, пĕрмаях хĕртеççĕ.

**ЯКИМОВ.** Саншăн пулсан хуткупăс-ха. Эс стройкăри бракшăн та кулянса çӳçне кăвакартмастăн.

Çав вăхăтра вĕсене урăлмалли пӳлĕмрен кăлараççĕ.

**ЯКИМОВ** (хĕр умĕнче каçару ыйтакан айван каччă пек чĕркуçленсе йăлăнать). Тархасшăн ĕçе ан пĕлтерĕр.

## ИККĔМĔШ КУРАНУ

Вăрманти ешĕл уçланкă. Кайăксен чуна тыткăнлакан сасси илтĕнет. Çулпа лесник тайкаланса килет. Хăй хыççăн нăрăхлатса чупакан сыснасене асăрхать те вăл хăрăк йывăç тăррине мекеçленсе хăпарать.

**ЯКОВЛЕВ.** Хурах! Хир сыснисем тапăнчĕç. Çăлăр!

**ÇЫВĂХРИ САСĂ.** Вăт ку, чăн та, сысна кăнтăрли. Хăй чупкинсене паллайми пуличченех кӳпсе лартнă. Çавăнпа халăх калать çав вăрманне вăрттăн касса пĕтереççĕ тесе.

**ЯКОВЛЕВ.** Эй, ырă çынсем, пулăшăр?! Тархасшăн пăшал илсе килсе парăр. Персе антарас çав хир сыснине. Виçĕ центнер аш пĕт... Ахаль тумăп, халех парса ярăп мунчалăх пĕрене.

**ÇЫВĂХРИ САСĂ.** Турат хуçса хăвала.

**ЯКОВЛЕВ.** Эй, кам мăшкăлласшăн манран? Çиччас, анам...

**ÇЫВĂХРИ САСĂ.** Ан, ан часрах. Тахçантанпах кĕтетпĕр. Тĕрĕслес тетпĕр хуçалахна.

**ЯКОВЛЕВ.** Мана тĕрĕслесшĕн-и? Хо-хо-хо! Кам хуçа кунта?

Хăрăк турат шартлатса хуçăлнипе лесник кăткă тĕмĕ çине та тăлса анать. Ăнланмалла мар чĕлхепе мăкăртатать-мăкăртатать те вăл уçланкăна янраттарса харлаттарма тытăнать.

### ВИÇÇĔМĔШ КУРĂНУ

Ял урамĕ. Хĕвел хĕрелсе анать. Çырмара вылльăхсем курăк чĕпĕтеççĕ. Çыранра хăяккăн выртакан бригадир хăй тĕллĕн калаçать.

**ПАВЛОВ. Эй, халăх! Уçатпăр-и бригада пухăвне е хупатпăр? Çук, уçмаллах пулать, тăвансем. Хаçантанпа пĕрле пухăнса шавламан. Мана эсĕр, паллах, туртса çурма та хатĕр ĕнтĕ. Ĕçсе ĕçе тухманшăн ятласшăн та пуль. Шалиш! Эсир хăвăр айăплă мана ўсĕртнĕшĕн. Дисциплина тенине, тĕрĕссипе, эп мар, хăвăр пăсатăр. Тĕрĕс калатăп-и эп, халăх?**

**САСĂ. Му-у!**

**ПАВЛОВ. Çапла çав, тăвансем, бригадира шаннипех уй-хир ĕçĕ пуçтарăнмасть. Сирĕн хăвăрăн хресчен сувĕçĕ пулмалла. Йăнăшмастăп-и?**

**САСĂ. Мэ-э!**

**ПАВЛОВ. Тоттă çав. Йĕрке пирки те çаплах пулмалла. Мана ан пăхăр эсир. Эп виç кун мар, эрне те, уйăх та ĕçĕп. Эп — хуçа. Сирĕн апла хăтланма юрамасть. Сирĕн — ĕçлемелле. Тĕрĕс-и?**

**САСĂ. Ме-ке-кек!**

**ПАВЛОВ. Ăнлантăмăр пĕр-пĕрне. Пурте манпа килĕшўллĕ. Хупас пухăва. Хамăн та куç хупăнать.**

Чаршав хупăннă хыççăн пĕлтермелли:

**«Хисеплĕ куракансем! Çав камитре выляканcем хăйсем мĕн хăтланнине, мĕн-мĕн пакăлтатнине астумасан та пултараççĕ. Мĕншĕн тесен мухмăрла пуç вăл арпа тултарнă кунтăк евĕрех. Анчах вĕсем тĕрлĕ çĕрте пурăнаççĕ пулин те, пĕр урапа çине — ĕçкĕ урапи çине кĕрсе ларнă».**

# АВГИ ВИТИ

**Выляканcем:**

**НИКИТИН — юсавпа техника предприятине ертсе пыракан.**

**КРАСНОВ — совхоз механикĕ.**

Пысăках мар пўлĕм. Алăкран спецуйрăм пуçлăхĕ кĕрет. Телефон шăнкăрр! тăвать. Трубкăна тытичченех вăл хăйне кам чăрмантарма пултарасса туять. Чăн та палланă сасă ĕмĕрхи юрра тăсса ярать.

**КРАСНОВ. Михал Михалч, звездочка кирлĕ! Халех! Унсăрăн навус айне пулатпăр!**

**НИКИТИН** (тĕлĕнсе). **Ĕнер çеç лартса патăмар-çке, мĕн, ача вăййи вылятăр-и?**

**КРАСНОВ. Каллех ванчĕ. Хуть те ăçтав тупăр. Ăнлантăн-и?**

НИКИТИН. Де-фи-цит тенине илтнӗ-и эс? Урӑхларах, Райкинла каласан, дффицит, эппин. Сире, туршӑн та, пирӗн предприяти запас пайсем парса ҫитереес ҫук. Кун сиктерсе вататӑр транспортерсене. Ахаль те сирӗн совхозшӑн ҫеҫ ӗҫлетпӗр.

КРАСНОВ. Ҫитет юмах ҫапса. Давай пире звездочка!

НИКИТИН (аптӑранипе юрласа ярать). «С неба звездочку достану и на память подарю...» Илтрӗн-и? Ҫав ҫӑлтӑрсӑр пуҫне манӑн урӑх нимӗн те юлман.

Кӑмӑла шӳтпе уҫса янӑ хыҫҫӑн Никитин слесарь-наладчика пурпӗрех совхоза кӑларса ярать. Лешӗ запасри юлашки звездочкӑна тислӗк тасатмалли транспортер ҫине вырнаҫтарса таврӑнать. Тепӗр темиҫе кунран трубкӑра каллех паллана саса илтӗнет.

КРАСНОВ. Алю, Михал Михалӑч-и ку? Совхозран Краснов-ха. Каллех транспортер чарӑнчӗ. Звездочкӑна катса пӑрахнӑ.

НИКИТИН. Кам?

КРАСНОВ. Тракторист.

НИКИТИН. Слесарь ҫук-им сан?

КРАСНОВ. Пур. Вӑл ҫитиччен ҫӗмӗрме ӗлкӗрнӗ ҫав.

НИКИТИН. Эх, сирӗнпе, анра-сухрасемпе! Мӗн чухлӗ вӗрентетпӗр мӗнле ӗҫлемеллине, пурпӗрех усси ҫук. Эс механик вӗт. Фермӑри техникашӑн ответлӑ. Мӗншӗн куҫна уҫса пӑхмастӑн? Транспортер ҫине вунӑ сантиметртан хулӑнрах тиеме юраманнине пӗлетӗн. Йывӑрпа ванать звездочка.

КРАСНОВ. Выльӑх пӑхакансене каланӑ эп ун пирки. Хӑйсемех айӑплӑ. Ир-ирех тултарса хураҫҫӗ те навуспа транспортера, тракторист турттарма килсен кнопкӑна пусаҫҫӗ те... Ҫав йывӑрӑша ӑҫтан чӑттӑр?

НИКИТИН. Эсир хӑвӑр директорупа пӗрре кӳршӗри совхоза ҫитсе килӗр-ха, унта сире мӗнле ӗҫлемеллине вӗрентӗҫ. Вӗсен фермӑра ҫӗнӗ трактор. Хуҫийӗ те унӑн ялан пӗр ҫын. Выльӑх пӑхаканӗ, трактористчӗ, слесарӗ ӗҫе пӗр вӑхӑтра тытӑнаҫҫӗ. Тислӗке хырса пынӑ май транспортерӗ хуллен шӑвать, трактор прицепӗ тиенет. Майӗпен ӗҫлеттернипе техника арканмасть. Ҫавӑнпа эпир унта уйӑхне пӗрре профилактикӑна ҫеҫ каятпӑр. Сирӗн патран вара тухма ҫук. Пӗлтӗр те ҫирӗм пилӗк звездочка аркатрӑр, вун тӑхӑр электромотор ҫунтарса ятӑр. Транспортерсен сахалтан та пилӗк ҫул хушши тислӗк турттмалла. Сирӗн ҫулталӑка та тӳсмест. Районти хуҫалӑхсенче пирӗн икҫӗр ытла транспортер. Вӗсенчен ҫирӗмӗшне ҫӗнетме тивет. Запас пайсем ӑҫта? Сирӗн хӑвӑрӑн лайӑхрах пӑхмалла ӑна.

КРАСНОВ. Нумай ан калаҫ эс, Михал Михалч. Хӑвӑртрах звездочка парса яр. Тислӗк купаланать, аяла пулатпӑр.

НИКИТИН (тем аса илсе). Итле-ха эс, Краснов юлташӑм. Геракл пек паттӑрла ӗҫ туса пӑх-ха пӗрре, вара аяла пулмастӑн.

КРАСНОВ. Мӗнле Кераккӑл? Хӑш ял паттӑрӗ?

НИКИТИН. Авалхи Грецири паттӑр. Историе манман-и?

КРАСНОВ. А-а-а-а, халь кӑшт чухларӑм. Леш, арӑслана парӑнтараканни...

НИКИТИН. Ҫавӑ. Арӑслана та ҫӑварлӑхланӑ вӑл. Авги ятлӑ патшан витисене те туххӑмрах тасатнӑ.

КРАСНОВ. Мӗнле майпа? Пиреччӗ ун меслечӗ халь.

НИКИТИН. Вӑт ҫав Авги патшан пинӗ-пинӗпе выльӑх пулнӑ, тет. Витери пӳлмекӗсене вара вӑтӑр ҫул хушши тасатман. Ҫавӑнпа патшана Геракл пулӑшма шутланӑ. Тытнӑ та пӗвеленӗ вӑл Алфей ятлӑ юханшыва. Шывне выльӑх карти еннелле юхтарнӑ. Хӑватлӑ юхӑм

пӳлмексенчи тислӗке пӗр кун хушшинче шӑлса кайнӑ. Гераклӑн çиччӗмӗш паттӑрлӑхӗ шутланнӑ ӗнтӗ çакӑ.

КРАСНОВ (хаваслӑн). Эх, пуласчӗ халь çав Геракл çут тӗнчере... Пирӗн Çавала пӗвелесе, навус тасатса тепӗр паттӑрлӑх кӑтартна пулӗччӗ. Сирӗн транспортерусем те, звездочкусем те кирлӗ марччӗ вара... Эх, ӑçта-ши вӑл?

НИКИТИН. Эс, Краснов юлташӑм, ху Геракл пек маттур пул, вара фермӑра тислӗк купи те купаланмӗ, тасамарлӑх сӗт-çу пахалӑхне те чакармӗ, выльӑхсем те çӑрӑлмӗç, çынсем те канӑççӑрланмӗç. Геракл хӑйӗн хастарлӑхӗпе патшана йывӑрлӑхран хӑтарнӑ. Çавӑнпа вӑл чапа тухнӑ. Эсӗ те фермӑри тислӗке Авги витисем пек пулса кайиччен... транспортерпа майӗпен тасатса пыр, Геракл вӑйӗпе...

КРАСНОВ. Юмахпа ан тӑрантар эс мана. Звездочка тупса пар, звездочка!

Трубкӑра пик-пик-пик сасӑ илтӗнме пуçлать. Спецуйрӑм пуçлӑхӗ пӳлӗмрен тухса мастерской еннелле утса каять.

Ч А Р Ш А В.

# АКӐ САНА КӖЛЕП

Вылякансем:
ХӖВЕТУТ МУЧИ,
КӖТЕРНЕ — унӑн арӑмӗ.

Хӗветут кӑптӑртатса кӗрет, васканипе алӑк уратинчен такӑнать.

ХӖВЕТУТ (тӗлӗнсе). Паллаймарӑн-им, карчӑк?

КӖТЕРНЕ (тӗпелтен). Хирӗç чупса пырасса кӗтрӗн-им, старик? Ан кулян. Нимӗн те пулман. Тӑхта, кутамккуна салтам-ха. Ывӑнтӑн пуль. Çуранах килтӗн-и?

ХӖВЕТУТ. Çуранах. Вӑй пур чух ура уссине курас.

КӖТЕРНЕ. Эй, çав кӗрӳпе. Эрне пурӑнтӑм ӗнтӗ унта. Пӳртне туса пӗтертӗр-и хуть?

ХӖВЕТУТ. Пӗтертӗмӗр. Пурте сывах пурӑнаççӗ, сана салам каларӗç.

КӖТЕРНЕ. Шӗкӗр турра. апла. Эп пур, кунта хыпӑнап.

ХӖВЕТУТ. Калап вӗт темскер пулнӑ тесе. Ырра мар çав çӗркаçхи тӗлӗк.

КӖТЕРНЕ. Эс тӑхта. Апат хатӗрлем эп. Çиччас.

Кӗтерне тӗпеле кӗрсе каять. Кашӑк-чашӑк сасси илтӗнет.

КӖТЕРНЕ. Халь итле, старик. Пӗлетӗн-и, туя хатӗрленетӗп.

ХӖВЕТУТ (тӗлӗнсе). Мӗнле туя?

КӖТЕРНЕ. Ара, хамӑр Ваççук ачи Кӗлеп авланать.

ХӖВЕТУТ. Чӑнах-и? Çамрӑк-çке вӑл?

КĔТЕРНЕ. Итле. Иртнĕ эрнере çапла килчĕç-кĕчĕç. Урам алăкĕ умне таратнă та хĕрлĕ машинне, çухăртаççĕ те çухăртаççĕ. Вăшаланса тухрăм, ухмах. «Папăшкă,—тет Кĕлĕпĕ,—папăшкă, куратăн-и кама илсе килтĕм? Кăрсавиçă, Ваçĕлесĕ Кăраснăй. Çăкăр-тăвар кирлĕ». Чупрăм пӳртелле. Кăраснăй та кăраснăй тенĕрен, ку Малтикасри Хĕрлĕ Хĕлип Василиссине качча илет пулсан, япăх çын ачи марха, шутлатăп çапла хам ăшра. Тур пулăшнă пекех тата, пуçламан çавраки çăкăр юлнă.

ХĔВЕТУТ (лăх-лăх кулать). Мансарах туй тăван апла эс, карчăк.

КĔТЕРНЕ. Эс кулан. Итле малалла. Тăваттăн хăйсем. Кĕлеппе леш кăрсавици тата эп палламан каччăпа хĕр. Кĕлепĕнчен çакăннă, ваçка, лешĕ, Ваçĕлесĕ текенни. Хĕрлĕ Хĕлип ачи тесе савăнни кăлăхах пулчĕ, вăл мар-мĕн.

ХĔВЕТУТ. Эх, эс те çав, юмахри пек паха арăм илсе килтĕм тесе каласшăн пулнă ĕнтĕ вăл сана. Астăватăн-и «Василиса Прекрасная» кино курнине?

КĔТЕРНЕ. Э-э, тин астурăм. Ара, кун çинче мĕн илемĕ пултăр? Ваçĕлесĕ тесен те, ăçтан Кăраснăй пултăр? Йăрăмлă шăлаварпа, пĕççисем ак çакăн сарлакăш.

ХĔВЕТУТ. Çаплах-и?

КĔТЕРНЕ (аллисене саркаласа). Вăрçă хыççăн хамăр Ваççук хăлутран илсе килнĕ шăлавар пĕççинчен туршăн та виç хут сарлака. Темле йăпăркаскер тăхăннă тата, кĕлетки çап-çара курăнать. Хура куçлăхпа. Хăлхисем çине катка кăшăлĕ пек ункăсем çакса янă. Чĕтрекен алăсемпе тыттартăм та çăкăр-тăвара, аяккалла пăрăнтăм. Лешсем çав вăхăтра мусăк каланă пек «пам-пам-пам» та «пам-пам-пам» тесе çеç тăчĕç.

ХĔВЕТУТ (кулнипе чыхăнса каять). Туш, теççĕ ăна. Çынсене мĕн те пулин чаплă япала панă чухне калакан кĕвĕ вăл.

КĔТЕРНЕ. Ячĕ-мĕнĕ хăямата кайтăр-ха, туш-и, муш-и, маншăн çавах. Итле эс малалла.

ХĔВЕТУТ. Итлетĕп, ара, хăлха тăратсах итлетĕп.

КĔТЕРНЕ (хыпăнарах). Папăшкă, ку ман сăпрук пулмалли, тет Кĕлеп. Арăм, эппин, ну, сирĕн чĕлхепе каласан, карчăк. Халь вăл сăмахсем кивелнĕ, мутăра мар. Çемçен, ачашласа калас килет-çке. Сăпрук тени лайăхрах янăрать, тăнлантарать мана. Юрать, юрать, тетĕп, хăвăр савса-килĕштерсе пурăнсан хăть сăпрук, хăть тăпрук тейĕр. Намăс ан курăр çеç.

ХĔВЕТУТ (сĕтел хушшинчен тухса). Куçкĕски çине пăхам-ха. Тен, ман та çемçен калас сана?

КĔТЕРНЕ. Сан куласси, ватсупнăскерĕн. Пар-ха каласа пĕтерме. Çапла кин кĕртсе кăлартăм. Эс юратакан автана пустарчĕ-çке Кĕлеп.

ХĔВЕТУТ (хыпăнса). Чăнах-и?

КĔТЕРНЕ. Чăн пулмасăр тата. Тетушка халь мана ним тума та чармасть авланас умĕн, тет. Куççуль кăларсах пуртă лартрăм Корнист мăйĕ çине.

ХĔВЕТУТ. Ак тамаша. Юрри мĕне тăратчĕ.

КĔТЕРНЕ. Вăл вăхăтра вĕсем пахчара выляса çӳрерĕç. Кĕлепĕнчен «сан майрусем чăх тĕкĕ татма пĕлеççĕ-ши», тесе ыйтрăм та, çапла тавăрса хучĕ: «Папашкă, ытла та юлнă-çке эс пурнăçран. Мутăра мар халь вăл çăрăлчăк ĕç тăвасси, авалхи пурнăç юлашки».

ХĔВЕТУТ. Чăнах хыпăнтарнă-иç вĕсем сана, карчăк?

КĔТЕРНЕ. Чăнах пулмасăр ара. Яшка пиçсен сĕтел хушшине вăштăр-ваштăр кĕрсе ларчĕç. Кĕлеппе юлташĕ майрисене тӳрех ав-

тан тукмакки тыттарчĕç. Ашалантарчĕç кăна. Хама ларма та чĕнмерĕç.

ХĔВЕТУТ. Нумай пурăнчĕç-и тата?

КĔТЕРНЕ. Хĕвел анас умĕн кайма хатĕрленчĕç. Эп парне те çук тесе хыпăнса ÿкрĕм. Кĕлеп ун пирки мана каласма та памасть. «Папăшкă, туй мар халь пирĕн, курса анчах çÿретпĕр, характер тĕрĕслетпĕр пĕр-пĕринне. Ытах, парне парас тесен, эп хамах мĕн кирлине суйласа илĕп, тет.

ХĔВЕТУТ (каллĕ-маллĕ уткаласа). Мĕн суйларĕç вара?

КĔТЕРНЕ. Тăхта эс, йĕркипе итле. Чаланти кив аçамсене, ман сăхмана, кив çăпатасене йăтса кĕчĕ. Хăйчикки, кунтăк тата тем пурччĕ унта. Э-э, аса илтĕм, пиртен çĕлетнĕ тахçанхи сан кăвак шăлаваруччĕ-çке...

ХĔВЕТУТ. Ан тĕлĕнтер-ха. Мĕн тума кирлĕ пулчĕç ара вăл ăпăр-тапăрсем, çĕтĕк-çатăксем?

КĔТЕРНЕ. Йăпăр-япăр тăхăнса лартрĕç. Кĕлепĕпе леш каччи аçам çухависене тăратрĕç, вĕрен татăккисемпе пилĕкĕсене çыхрĕç, сулахай енне кусар çакса ячĕç. Çăпатисене хам явакласа ятăм, ура сырма пĕлмеççĕ. Рицăр та рицăр, теççĕ хăйсем тăрăх пăхса.

Майрисем сăхман тăхăнчĕç, пилĕкĕсене урхалăхпа туртса лартрĕç. Çăпата кирлĕ мар, терĕç. Халь хулара çарран çÿреççĕ, тет-и? Таçтан сÿс тилхепе асăрхарĕç. Кĕлепĕн кăрсавици ăна мăйĕ тавралла ункăн-ункăн явакласа çакрĕ. Сан тахçанхи шăнкăртатакан сехетÿ пурччĕ...

ХĔВЕТУТ. Çапла, çапла. Будильник, вăрçă тухичченхи çул колхоз парнеленĕскер. Вара мĕн?..

КĔТЕРНЕ. Мĕн-мĕнни унта! Мĕн мар çав. Ана Кĕлеп майрин алли çине çăпата кантрипе çыхса ячĕ. Кĕлепĕсем пуçĕсене кунтăк тăхăнчĕç тата. Эй, утаççĕ, эй, пăркаланаççĕ. Кун пек мутă Шупашкарта та, ниçта та çук, чи малтан сарса чапа тухатпăр, теççĕ. Урапа та кустăрмасăр ларать халь. Курмарăн-и?

ХĔВЕТУТ (хашш! сывлать). Асăрхамарăм васканипе. Урапа, тетĕн? Мĕнле вăл — илсе кайрĕç? Мĕн тума? Мĕн тăваççĕ вĕсем, эрелсем, ман урапа кустăрмисемпе хулара?

КĔТЕРНЕ. Йăлтах илсе кайрĕç. Çава, çапуççи, кĕрепле, хусăк...

ХĔВЕТУТ (аллине пĕççи çумне шарт! çапать). Ай-уй, ăсран тайăлман пуль вĕсем?

КĔТЕРНЕ. Асĕ пĕрлех пуль-ха вĕсен. Виçĕмкун хамăр Татьянсен Лени килсе кайрĕ.

ХĔВЕТУТ. Аçтан?

КĔТЕРНЕ. Мантăн-им, Шупашкара пир тĕртнĕ çĕре ĕçлеме кĕнĕччĕ-çке вăл. Атăл хĕрне уçăлма тухсан, Кĕлепсене куртăм, тет. Кунтан илсе кайнă ăпăр-тапăра йăлт хăйсем çине çакса тухнă, тет.

ХĔВЕТУТ (тарăхса). Ай, çунтармалла пĕрех хут. Милици мĕнле тытмасть вĕсене?

КĔТЕРНЕ. Итле-ха, итле. Лена вĕсен килĕнче те пулнă иккен. Маччаран урапа кустăрми çакса янă, тет, тавралла çурта лартса тухнă, тет, вырăнĕсем, тивансем тăрринче тем те пур, тет — çави, çапуççийĕ, кĕрепли, хусăкĕ тата ытти те.

ХĔВЕТУТ (кулать). Ай, рыцарьсем, сар туталлă рыцарьсем!

КĔТЕРНЕ. Кĕлепсем пире валли туя кайма япаласем илсе килнĕ. Çаксене тăхăнса пымалла, тет.

ХĔВЕТУТ (каллĕ-маллĕ уткалать, тарăхнипе тулалла тухса каять). Ну, ку ача-пăчана. Ыран пасара мĕнле каяс урапасăр?

Çав вăхăтра арăмĕ çыхăри япаласене салтса çĕнĕ тум тăхăнать. Алăк сасси илтĕнет. Хĕветут каялла кĕрет.

**КЁТЕРНЕ.** Линка-линка авкаланма юман хăма кирлĕ... Килĕшет-и, сăпрук? Пушмакки мĕнле шап-шур, таканĕ мĕн çўллĕш, килĕ тукмакки пек шĕп-шĕвĕр. Чикан шăрçине пăх-ха тата эс...
**ХЁВЕТУТ** (хаваслăн). Килĕшет. Аллă çул пĕрле пурăнса та сана кун пек чиперрине курман та. Килĕшмесĕр, ара.
**КЁТЕРНЕ.** Шупашкартан çыру пурччĕ. Мăнуксенчен. Мĕнле пурăнаççĕ-ши? Вула-ха часрах?
**ХЁВЕТУТ** (вуланă май). Пĕтрĕ пуç!
**КЁТЕРНЕ** (хыпăнса). Мĕн пулнă тата?
**ХЁВЕТУТ.** Ашшĕ-амăшĕ хăнана кайсан Кĕлепсем хваттерне çунтарса янă, халĕ пулас сăпрукĕпе иккĕшĕ те пульницара выртаççĕ, тет. Пушарĕ урапа кустăрми тавра лартнă çуртасенчен тухнă, тет.
**КЁТЕРНЕ.** Ай тур-тур ку муталанчăксемпе.
**ХЁВЕТУТ.** Çапла вăл, мутă тени, йĕркене пĕлмесен, шар кăтартать. Вăт сана туй!..

Ч А Р Ш А В.

# ЮЛХАВ УТ ЮРТТИПЕ

**Вылякансем:**
**«Пучах совхоз агрономĕ, инженерĕ, комбайнерĕ тата директорĕ.**

## ПĔРРЕМĔШ КУРАНУ

Чаршав хуллен уçăлать. Куç умне мăянпа анраçарăк пусса илнĕ тырă уйĕ тухса выртать. Çул кукринчен хулпуççи çине çурла çакнă агроном шăхăркаласа тухать, канлĕн анаслать. Хĕвеле хирĕç пăхапăха илнĕ хыççăн вăл пĕшкĕнсе тырă вырма пуçлать. Тĕмлĕх кĕлте çыхнă вăхăтра сылтăм енчен инженер тăпач йăтса тухать. Иккĕшĕ те пĕрне-пĕри алă тытаççĕ.

**ИНЖЕНЕР.** Вăй патăр, тур пулăштăр, таванăм.
**АГРОНОМ.** Тавах ырă сăмахушăн. Тур пулăшасса кĕтсе ларсах ĕнтĕ кĕре кĕрсе кайрăмăр. Комбайн юсаса параймастăн та, инженер ятне илтсе пурăнатăн çав. Çап халь тăпачăпа. Ăшалантар хăвăртрах, эп вырам.
**ИНЖЕНЕР.** Выр, выр, хăв пуçтарса кĕртмесен ял халăхĕ пилĕк авмĕ сан çак çумкурăк уйĕнче. Эх, эсĕ те çав, агроном тетĕн тата хăвна. Районти хуçалăхсене сортлă вăрлăх ўстерсе парас вырăнне мăян вăрри пуçтаратăн. Анра-сухралла пулса тухмасть-и капла?
**АГРОНОМ.** Шăплан луччĕ эс. Эп хăть анра-çараклă-мăянлă вăрлăх та пулин ўстернĕ. Эс, авă, вырмана техника та вăхăтра хатĕрлесе параймарăн. Пĕрре ман пилĕке аватăн çурлапа выртарса, тепре хăв намăс куратăн çапуççипе ĕçлесе.

**ИНЖЕНЕР.** Намăс-симĕс куçа кĕмест. Хăнăхнă эпир. Ан çиллен. Çурлапа тырă вырса тăпачăпа çапса тĕшĕлени вăл халĕ, пĕлетĕн пулсан, чи мутăллă япала. Асаттесен авалхи ĕç хатĕрне манма юрамасть пирĕн. Тавай, выр хăвăртрах. Çапмалли сахал.

Агроном пилĕкне хыпашла-хыпашла тырă вырать, инженер эхлете-эхлете тăпачăпа кĕлте пуçĕсене шаплаттарать, шăналăк сарса тулă сăвăрать. Ял енчен радио сасси вĕçсе килет: «Пучах» совхоз кăçал ĕççи валли трактор-комбайн, тырă тасатмалли машинăсем, йĕтемсем вăхăтра хатĕрлемерĕ, вăрлăх туса илессине хавшатрĕ. Уншăн...»

**АГРОНОМ.** Уншăн эсĕ айăплă.
**ИНЖЕНЕР.** Эсĕ те.
**АГРОНОМ.** Эсĕ ытларах айăплă.
**ИНЖЕНЕР.** Эсĕ — тата ытларах...

Иккĕшĕ тавлаша-тавлаша хăмăл çăраççĕ, тырра таптаççĕ. Çав вăхăтра вĕсем патне комбайнер пырать.

**КОМБАЙНЕР.** Эй, çурлапа тăпач хуçисем, чарăнăр! Запчаç тупса парăр, çиччас вырса тăкап.

Лешсем савăннипе комбайнер тавра ташласа çаврăнаççĕ, унтан ăна çурлапа тăпач тыттараççĕ.

## ИККĔМĔШ КУРАНУ

Хура уй. Иккĕн сухапуçпе суха тăваççĕ. Лашине директор çавăтнă, сухапуçне инженер тытнă.

**ДИРЕКТОР** (каялла çаврăнса). Мĕншĕн килĕшрĕм-ши эпĕ сирĕн хуçа пулмашкăн? Мĕн тума килтĕм кунта...

**ИНЖЕНЕР.** Мĕн тума килтĕм те мĕн тума килтĕм, тет. Кунта килмен пулсан эсĕ çак сухана нихçта туса кураяс çук. Ан кулян, темле ĕçлеме те вĕрентĕпĕр-ха эпир сана. Ахальтен çак хуçалăхра пурăнмастпăр. Малалла пăх, касса ан пăс!

Сулахай енчен пурак çакнă агроном тухать, вĕсем хыçăн ыраш акма тытăнать.

**АГРОНОМ** (хăй тĕллĕн). Каллех çавăн айăпĕпе кутĕрленме тивет. Техника вăхăтра хатĕрлесе пана пулсанах пурак кантрипе ĕнсене кастарас çукчĕ. Начар, начар пирĕн пурнăç, хўрене юлтăмăр.

Çав вăхăтра мотор кĕрлевĕ илтĕнсе каять. Вĕсем патне кĕçех хыçала плугпа сеялка кăкарнă комбайн çитсе чарăнать. Пурте ĕçе пăрахса унталла чупаççĕ.

**ИНЖЕНЕР.** Ан вăрçăр мана. Куратăр-и, техника ĕççие тухма хатĕр!

**АГРОНОМ.** Маттур. Вăт çĕнĕлĕх! Вăт çăлăнăç!

**КОМБАЙНЕР** (куларах). Комплекслă майпа ĕçлеме хушрăр та çав эсир мана тырă вырнă чухне... Сирĕн рационализаторла сĕнĕвĕре пурнăçларăм. Вырма та, çапма та, акма та харăсах пултаратăп.

Хĕпĕртенĕскерсем комбайнер тавралла ташласа çаврăнаççĕ те, лашана тăварса, сухапуçне тепĕр майлă çавăрса кўлеççĕ. Унтан виç-

çĕшĕ те янавар çине утланса лараççĕ. Комбайнер вĕсене çурлапа тăпач тыттарать.

КОМБАЙНЕР. Хăвăрăн комплекслă ĕç хатĕрĕсене манса ан хăварăр, тен, çитес çул та кирлĕ пулĕ.

Ял енче — радио сасси: «Пучах» совхозăн юлашки вăхăтра ĕç кăтартăвĕсем чакрĕç. Уншăн...»

ИНЖЕНЕР. Кам айăплă, тетĕр, паллах, агроном.
АГРОНОМ. Çук, эпĕ мар, эсĕ...
ИНЖЕНЕР. Эсĕ...
ДИРЕКТОР. Ан тавлашăр пустуй. Уяв умĕнхи кăмăла пăсатăр. Эсир те, эпĕ те айăплă уй-хир ĕçĕсене кăçал ытти хуçалăхсенчен кая хăварнăшăн. Эпĕ хăть, юлхав ут çине тин утлантăм, эсир... эсир хăçантанпа çак юртăпа пыратăр. Но! Хавăртрах! Сиккипе!

Юлхав лаша лĕпĕстетсе юланутçăсене анаталла илсе каять.

ЧАРШАВ.

# ШУ́ТСЕМ

## «ĔÇЧЕН» ÇЫН

— Макçăм арăмĕ кăçалччен колхозра пилĕк авса курманччĕ-çке, чире персе килтех пурăнатчĕ, халĕ таçти йывăр ĕçе те хутшăнать.
— Ывăлне авлантарнă та, кинне килĕштермесĕр тарăхса ĕçлет, тет.

## ЛУМ ÇУХАЛНĂ

— Аçта кайса кĕнĕ-ши ку лум? — кил хушшинче пăхман вырăн хăвармарĕ Çемен мучи.
— Çуккă вăл, асатте, эпĕ ăна шкула леçнĕ, — чăлтти-чалтти сиккелет мăнукĕ.
— Мĕн тума?
— Учительница пĕрмаях металлум пухмалла, тет те, çавăнпа кайса патăм лума.

## КАМ РЕГИСТРАЦИЛЕНМЕН?

Профсоюз пухăвĕ пулмалла. Клуба çынсем килсе тăраççĕ.
— Регистрациленменнисем пур-и сирĕн хушăра? — ыйтать сĕтел хушшинчи сарă Йăван.
— Пур-пур, — сиксе тăрать çав вăхăтрах варринчи ретрен чиперкке Верук. — Кампа регистрациленмелле?
— Манпа, — çухалса каймасть йĕкĕт.
— Апла кĕтни тинех çитрĕ.Васкасах пыратăп.

## ХЫТА ТАРЛАНА

Хамшанов çыравçă пĕлтĕр бюллетень илсе çĕр тăхăрвун тăхăр кун ĕçре пулман. Çав вăхăтрах вăл, чир-чĕр «асаплантарнине» пăхмасăр, килĕнче «Çăтмах» роман, «Ылтăн тенкĕ» повесть, «Чее тилĕ» комеди, «Сывă пултăр шур халатлă çын!» поэма çырма ĕлкĕрнĕ.

## МĔН ТУМАЛЛА?

Редактор: Я. Классиков писателĕн «Вĕççĕр ĕмĕр» романĕн вуннăмĕш кĕнекин вĕçĕнче виçĕ пăнчă пичетленеймесĕр тăрса юлчĕ. Мĕн тумалла?

Издатель: Çитес çулта çĕнĕ кĕнеке туса кăлармалла.

## САВĂНМА АН ВАСКАР

Автор: Ку пӳлĕм алăкне пăхас та килми пулса çитнĕччĕ-ха. Сире редактора лартнă хыççăн кĕме те кăмăллă.

Редактор: Алçырăвне вуласа тухиччене ан васкăр-ха савăнма. Малашне, тен, редакци çулне те манмалла пулĕ.

* * *

— Нисçта кайса кĕреймен чухне ăçта-ăçта шăнкăравлатăн?

— Пушар тухсан — 01, аскăнçăсем тапăнсан— 02, чирлесе ӳксен — 03, газ тухсан — 04, мухмăрла пуçпа аптăрасан — 05 номерĕпе.

* * *

— Мĕн иртеппех тăрăпса шыв ĕçетĕн?

— Паянхи пухура тухса калаçма хатĕрленетĕп-ха.

* * *

— Çав Кавĕрлен çамки çине кашни çул çĕнĕ карт тухать. Мĕншĕн-ши?

— Миçе авланнине пĕлтерет вăл.

* * *

Вĕрентекен: — Наянов, ку чĕрĕкшĕн сана «иккĕ» лартма тивет.

Вĕренекен: — Тупнă мĕнпе хăратмалли, директор ăна пурпĕрех тӳрлеттерет.

* * *

— Кала-ха, эсĕ шкулта миçе çул ĕçленĕ?

— Пединститутра вĕреннĕ чухне практикăра пулнăранпа ачасем умне тăрса курман.

— Районти çутĕç пайĕн инспекторĕ-çке тата?

— Вĕренекенсене вĕрентиччен вĕрентекенсене вĕрентме çăмăлрах.

## ТУПМАЛЛИ


Туй шыраса . . . . . . . . . . . . . 3
Йĕксĕк . . . . . . . . . . . . . 4
Çивĕч куç . . . . . . . . . . . . . 5
Купăспа çаран çулни . . . . . . . 6
Вăрăм çул . . . . . . . . . . . . —
Сиплени . . . . . . . . . . . . . 7
Çын сывлăхĕшĕн . . . . . . . . . 8
Тип туй хыççăн . . . . . . . . . —
Сĕлĕх . . . . . . . . . . . . . 9
Хушăнакан тăкак . . . . . . . . 10
Авăрта . . . . . . . . . . . . . 13
Пӳрнесем те тан мар . . . . . . . 14
Сурăх . . . . . . . . . . . . . 16
Ятлă кӳме . . . . . . . . . . . . 19
Пĕлес пулать . . . . . . . . . . 21
Сăмавар тусĕ . . . . . . . . . . 22
Çавра çăкăр йахĕн уявĕ . . . . . . 23
Сава Савви савалать . . . . . . . 25
Çумкурăк . . . . . . . . . . . . 27
Вĕтĕ юртă . . . . . . . . . . . . 28
Çăлкуç . . . . . . . . . . . . . 31
Патефон . . . . . . . . . . . . 32
Ĕнентерӳ . . . . . . . . . . . . 33
Чăтăм хуранĕ . . . . . . . . . . 34
Сухаллă кĕрӳ . . . . . . . . . . 36
Сум каçĕ . . . . . . . . . . . . 38
Шанчăклă алăра . . . . . . . . . 39
Кĕтӳ апачĕ . . . . . . . . . . . 40
Никĕссĕр кермен . . . . . . . . . 41
Чĕрĕ чечек çыххи . . . . . . . . 45
Мулкачкассисем . . . . . . . . . 46
Суккăр пыршă . . . . . . . . . . 48
Сĕрмен кусатăран тĕнĕле çиет . . . 50
Пĕр урапа çинче . . . . . . . . . 52
Авги вити . . . . . . . . . . . . 54
Акă сана Кĕлеп . . . . . . . . . 56
Юлхав ут юрттипе . . . . . . . . 59
Шӳтсем . . . . . . . . . . . . . 61

БИБЛИОТЕКА КАПКАНА № 3 (87)

Владимир Прокопьевич КУЗЬМИН

# ЗОЛОТЫЕ СТРУЖКИ САВВЫ

Рассказы и шутки
на чувашском языке

Редактор Н. И. ИВАНОВ
Художник Г. Я. ЯКОВЛЕВ
Техредактор и корректор Е. С. ТИХОНОВА

Сдано в набор 22.06.90 г. Подписано к печати 9.08.90 г.
Формат 84x108. Объем 4,5 уч. изд. л. Заказ № 2885.
Тираж 25000 экз. Цена 25 коп.

Типография издательства Чувашского обкома КПСС,
г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

150 -2

Цена 25 коп.
~~Индекс [illegible]~~